К74.268.11
С 32
Ч-42889

# Чăваш чĕлхи

5

Национальная библиотека ЧР
4-042889

ОБЯЗАТЕЛЬНЫЙ БЕСП. ЭКЗЕМПЛЯР
КирК Ч 268.11 С 32

Л.П. Сергеев
Е.А. Андреева
Г.Ф. Брусова

# 5-МĔШ КЛАСРИ ЧĂВАШ ЧĔЛХИ УРОКĔСЕМ

## Методика кăтартăвĕсем

кр

Шупашкар
2010

УДК 373:811.512.111
ББК 74.268.1Чув
С 32

*Чăваш Республикин Вĕренӳ тата çамрăксен политикин министерстви усă курма ирĕк панă*

Рецензентсем:

*Ю.М.Виноградов* — филологи ăслăлăх.сен кандидачĕ, Чăваш Республикин вĕренӳ институчĕн доценчĕ;

*Е.А.Майков* — Шупашкар районĕн Кăшавăшри пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкулта чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекен;

*Н.А.Антонова* — Шупашкар хулин Г.С.Лебедев ячĕллĕ интернат лицейĕнче чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекен.

**Сергеев Л.П.**

С 32 5-мĕш класри чăваш чĕлхи урокĕсем: методика кăтартăвĕсем / Л.П.Сергеев, Е.А.Андреева, Г.Ф.Брусова. — Шупашкар: Чăваш Республикин вĕренӳ институчĕн издательство центрĕ, 2010. — 143 с.

**УДК 373:811.512.111**
**ББК 74.268.1Чув**

Проверено

© Сергеев Л.П., Андреева Е.А., Брусова Г.Ф., 2010
© Чăваш Республикин Вĕренӳ тата çамрăксен политикин министерстви, 2010
© Чăваш Республикин вĕренӳ институчĕ, 2010

Ч-42889

# УМĔН КАЛАНИ

Чăваш чĕлхине 5-мĕш класра вĕрентмелли кĕнекене программăпа[1] тата учебникпа[2] килĕшӳллĕн хатĕрленĕ. Чăваш чĕлхин вĕрентӳ планĕ тăрăх, ку класра тăван чĕлхене вĕрентме эрнере 3 сехет уйăрнă (пурĕ 108 сехет). Пособире учебникри материала урок тăрăх мĕнле пайласа вĕрентмеллине, уроксен йĕркипе тытăмне çырса панă. Кунта 5-мĕш класс пуçламăш шкул хыççăнхи вĕрентӳри пĕрремĕш тапхăр пулнине шута илнĕ. Çавăнпа çĕнĕ материала ачасем кĕçĕн классенче мĕн вĕренни çине таянса йĕркеленĕ.

5-мĕш класс программинче чăваш чĕлхи ăслăлăхĕн тĕрлĕ енĕсене вĕрентме палăртнă: вĕренӳ çулĕн пуçламăшĕнче синтакиспа пунктуацин хăш-пĕр ыйтăвĕсене «Пуçламăш классенче вĕреннине аса илсе çирĕплетесси, хушса вĕрентесси» пайра пăхса тухма сĕннĕ, унтан чăваш чĕлхи фонетикипе графикин тата орфографийĕн, лексикин, сăмах тытăмĕпе пулăвĕн ыйтăвĕсене кĕртнĕ. Ку темăсен теори никĕсĕ мĕнле пулмаллине «Чăваш чĕлхи программинче» тĕплĕ ăнлантарса панă. Çавăнпа кунта чĕлхе ăслăлăхĕн палăртнă пайĕсене вĕрентнĕ чух мĕне шута илмеллине кĕскен асăнса хăварнă.

**Пуçламăш классенче вĕреннине аса илсе çирĕплетесси, хушса вĕрентесси** *(14 сехет).* Вĕреннине аса илсе çирĕплетмелли темăсем шутне çаксем кĕреççĕ: сасă тата сас палли, алфавит, вырăс чĕлхинчен йышăннă сăмахсене çырасси; сăмах тымарĕ тата аффикссем; вĕреннĕ пуплев пайĕсене аса илесси; предложени тата унăн членĕсем, пĕр йышши членлă предложенисем, калуллă, ыйтуллă тата хистевлĕ предложенисем.

Ачасем ансат тĕслĕхсенче сăмах тăвакан тата сăмаха улăштаракан аффикссене асăрхама пуçланă, сăмахпа сăмахăн форми хушшинчи уйрăмлăха курма хăнăхнă. Сăмах тытăмне тишкерни ăна тĕрĕс çырма пулăшнине пĕлеççĕ.

Пилĕк пуплев пайне (япала ятне, глагола, паллă ятне, хисеп ятне, местоимение) вĕреннĕ, сăмахсен лексика пĕлтерĕшне, ыйтăвĕсене тата улшăну мелĕсене уйăрма хăнăхнă.

---

[1] Чăваш чĕлхи программи: чăваш шкулĕн V–IX класĕсем валли. – Шупашкар, 2007.

[2] Сергеев Л.П. т.ыт. Чăваш чĕлхи: 5-мĕш класс валли. – Шупашкар, 2008.

Предложени тата унăн членěсем, пěр йышши членлă предложенисем çинчен вěреннě. Пěр йышши членсем союзпа тата союзсăр çыхăнма пултарнине пěлеççě.

Предложенисем пуплев тěллевне кура калуллă, ыйтуллă е хистевлě, мěнле кăмăлпа каланине (интонацие) кура кăшкăруллă е лăпкă, кăшкăрусăр пулнине те пěлеççě ачасем. Çавна шута илсе 5-мěш класс кěнекинче те предложенисен виçě ушкăнě çинчен каланă. Çěнě программăра палăртнă тăрăх, каланин тěллевне кура предложенисене чи малтан ыйтуллă тата ыйтусăр ушкăнсене уйăрмалла, ыйтуллă предложенисене йěркелемелли чěлхе мелěсем çинчен ытларах калаçмалла.

Хушса вěренмелли темăсем шутне синтаксиспа пунктуацин çак ыйтăвěсене кěртнě: чěнӳ сăмахěсем тата вěсене чарăну паллисемпе уйăрасси; союзсăр хутлă тата сыпăнуллă хутлă предложенисем, тӳрě пуплевлě предложенисем.

Асăннă пайра ачасен çыхăнуллă пуплевне аталантармалли темăсем те пур: текст тата унăн пайěсем, текст темипе тěп шухăшě, текст планě, текст тěсěсем (сăнлав, калав, ăслав). Ку темăсем ачасемшěн çěнех мар, мěншěн тесен пуçламăш классенчех вěсене ансат шайра пăхса тухнă: текст, текст тытăмě (пайěсем), тěп шухăшě, текстри предложенисем шухăш енчен пěр-пěринпе килěшсе тăни, пěр предложенире калани тепринче вăй илсе аталанни, текстри предложенисем тивěçлě йěркепе вырнаçни т.ыт.те. 5-мěш класра вěсене малалла аталантармалла.

**Фонетика, графика, орфографи** ***(40 сехет).*** Программăра «Фонетика. Графика. Орфографи» пайсене вěрентме 40 сехет уйăрнă. Вăл сехетсене çакăн пек пайламалла: теори материалне вěрентсе çирěплетме – 32 сехет, тěрěслев çыру ěçěсене ирттерме – 4 сехет, çыру ěçěсене тишкерсе йăнăшсенчен хăтăлас тěлěшпе ěçлеме – 4 сехет. Унсăр пуçне çыхăнуллă пуплеве аталантарма 2 сехет уйăрнă. Вěсене программăри «Вěреннине аса илесси. Çыхăнуллă пуплеве атлантарасси» темăпа палăртнă 13 сехетрен илмелле.

5-мěш класра чăваш чěлхи фонетикин чи кирлě ыйтăвěсене системăллă пăхса тухаççě. Чěлхе ăслăлăхěн асăннă пайне вěрентни теоришěн те, чěлхе практикишěн те кирлě. Теорин чи ансат та ачасем çăмăллăнах ăса хывма пултаракан пысăк пěлтерěшлě ыйтăвěсене вěренни тăван чěлхен пěтěмěшле тытăмне пěлме пулăшать. Ку вăл практика тěлěшěнчен те кирлě: теорие пěлмесěр сăмахсемпе вěсен тěрлě формине тěрěс калама тата çырма май çук.

Чăваш чĕлхи урокĕсен тĕп тĕллевĕ – пуплеве аталантарасси. Ку ĕç чăваш фонетикипе лексикин тата грамматикăпа сăмах пулăвĕн ыйтăвĕсене вĕрентнĕ май пулса пымалла.

Фонетика – чĕлхе ăслăлăхĕн сасăсем çинчен вĕрентекен пайĕ. Уроксенче сăмахсене, вĕсен формисене сасăпа ударени тĕлĕшĕнчен тĕрĕс калама вĕрентесси пысăк вырăн йышăнмалла. Кунта тĕрлĕ вырăнти калаçусем литература чĕлхи нормисенчен фонетика енĕпе уйрăлса тăнине асра тытмалла. Тĕслĕхрен, тури диалект анатри диалектран (вăл чăваш литература чĕлхин никĕсĕ) *о~у* ылмашупа, дифтонгсемпе вăрăм хупă сасăсем пуррипе, уçă сасăсемпе хупă сасăсен тĕрлĕ ылмашăвĕсемпе, ытти фонетика пулăмĕсемпе уйрăлса тăрать. Çавăнпа та фонетика урокĕсенче пуплеве аталантарас тĕлĕшпе тумалли ĕçсем шутне çаксене кĕртмелле:

1) чăваш сăмахĕсене сасă тĕлĕшĕнчен тĕрĕс каласси (сасăсене уçăмлă та таса, литература чĕлхинче йышăннă пек каламалла);

2) тĕп чăваш сăмахĕсене ударени тĕлĕшĕнчен тĕрĕс каласси: *шăпчăк* мар – *шăпчáк, кайáк* мар – *кáйăк;* вырăс чĕлхинчен йышăннă сăмахсене ударени тĕлĕшĕнчен тĕрĕс каласси: *редáкцире* мар – *редакциргé, рáдиона* мар – *радионá;*

3) вырăс чĕлхинчен йышăннă сăмахсенчи юнашар тăракан хупă сасăсене каланă чух пулакан йăнăшсенчен асăрхаттарасси: *аффикăс* мар – *аффикс, Кремĕл* мар – *Кремль* т.ыт.те.

Асăннă йышши сăмахсене орфоэпи тĕлĕшĕнчен тĕрĕс калама вĕрентмелли ĕçсем шутне техника хатĕрĕсемпе (магнитофон, компьютер) усă курса ирттермелли хăнăхтарусем те кĕреççĕ. Çавăнпа пĕрлех радиопа телевидени дикторĕсене, чăваш артисчĕсене итлени те пысăк пулăшу парать.

Фонетика урокĕсем çырулла пуплеве аталантармалли, урăхла каласан, вĕренекенсене орфографи тĕлĕшĕнчен тĕрĕс çырма вĕрентмелли уроксем пулса тăраççĕ. Вĕсене программăра уçăмлă кăтартса панă.

Паянхи шкул практики çакна çирĕплетсе парать: вăтам шкултан вĕренсе тухакансем уйрăмах вăрăм хупă сасăсемпе çемçе хупă сасăсене çырура тĕрĕс палăртаймаççĕ, йăнăш нумай тăваççĕ. Çавăнпа та асăннă правилăсене вĕрентнĕ чух учителĕн нумай ĕçлеме тивет. Вăл тĕрлĕ йышши хăнăхтару тутарса правилăсене тата вĕсемпе çыхăннă хăнăхусене ачасен ăс-тăнĕнче çирĕплетсе хăварма пултарать.

Фонетика урокĕсене ирттернĕ чухне ачасен пĕлĕвне тарăн çирĕплетмелли майсенчен пĕри – сăмах диктанчĕ. Ку йышши диктанта кашни фонетика урокĕнчех çыртарма пулать. Ăна ирттерме вăхăчĕ те нумай кирлĕ мар. Çакна шута илсе кашни урока тенĕ пекех сăмах диктанчĕ кĕртнĕ. Диктант çырмалли сăмахсене «Словарь ĕçĕ» пайра кăтартнă. Диктанта киле парса янă ĕçе тĕрĕсленĕ хыççăн çыртарсан аван. Хăш-пĕр чухне сăмах диктанчĕсене урокăн ытти пайĕсенче те ирттерме пулать.

Ачасен активлăхне ӳстерес тĕллевпе учитель диктанта вĕренекенсенчен пĕрне доска çине, ыттисене хăйсен тетрачĕсене çыртарать. Ун хыççăн ачасем ушкăнпа доска çине çырнă сăмахсене пăхса тухаççĕ, йăнăшсене тӳрлетеççĕ, учитель ертсе пынипе кирлĕ пĕтĕмлетӳ тăваççĕ.

Диктантри сăмахсен шучĕ пысăк пулмалла мар – 4 сăмахран пуçласа 6 сăмах таран.

**Лексика** *(25 сехет).* Чĕлхере усă куракан сăмахсен йышне – лексикăна 5-мĕш класра пуçласа вĕренме тытăнаççĕ. Ăна вĕренсе ачасем тăван чĕлхери сăмах йышĕн пуянлăхĕпе, сăмахсен пĕлтерĕш аталанăвĕпе, улшăнăвĕпе, вĕсемпе пуплевре мĕнле усă курассипе тата ыттипе те паллашаççĕ. 1–3-мĕш классенче хăш-пĕр лексика ăнлавĕсемпе: синонимсемпе, антонимсемпе, йышăннă сăмахсемпе (терминĕсене каламасăр) – паллашнă пулсан, ку пайри ытти ăнлавсем ачасемшĕн çĕнĕ: «Сăмахăн лексика пĕлтерĕшĕ», «Пĕр пĕлтерĕшлĕ тата нумай пĕлтерĕшлĕ сăмахсем», «Сăмахăн тӳрĕ тата куçăмлă пĕлтерĕшĕ», «Омонимсем», «Диалектизмсем» т.ыт.те.

«Лексика» пая вĕренсе 5-мĕш класс ачисен: 1) лексика ăнлавĕсене пĕр-пĕринчен уйăрса ăнлантарма; 2) лексика мелĕсемпе çыхăнуллă пуплевре тĕрĕс усă курма; 3) тĕрлĕ словарьсемпе ĕçлеме пĕлмелле.

Вĕренекенсен çыхăнуллă пуплевне аталантарма лексика урокĕсенче уйрăмах тимлемелле. Ачасене сăмахсене стиль тĕлĕшĕнчен тĕрĕс суйласа илме, сăмахсемпе вĕсен пĕлтерĕшне кура килĕшӳллĕн усă курма вĕрентмелле, сăмахсен функцине шута илсе ĕçлеме хăнăхтармалла.

**Сăмах тытăмĕпе сăмах пулăвĕ. Орфографи** *(15 сехет).* 1–4-мĕш классенче ачасем ансат тĕслĕхсенче сăмах тăвакан тата сăмаха улăштаракан аффикссене палăртас

тĕлĕшпе ĕçленĕ, сăмахпа унăн форми хушшинчи уйрăмлăха курма вĕреннĕ. Сăмах тытăмне тишкерни ачасене тĕрĕс çырма пулăшать. Çавăнпа та 5-мĕш класра сăмах тытăмĕпе тата сăмах пулăвĕпе çыхăннă ыйтусене тарăнрах вĕренме палăртнă. Ачасен сăмаха улăштаракан тата сăмах тăвакан аффикссене уйăрма, вĕсен пĕлтерĕшне асăрхама, сăмах тымарĕпе тĕпне тĕрĕс тупма, пĕрремĕшле тата иккĕмĕшле сăмахсене тĕрĕс палăртма, хутлă, мăшăр тата икĕ хут калакан сăмахсене уйăрса тĕрĕс çырма хăнăхмалла. Асăннă ыйтусене вĕреннĕ май чăваш чĕлхинчи сăмах пулăвĕн тĕрлĕ мелĕсемпе (тĕп çумне аффикс, тĕп çумне тĕп хушса) усă курма вĕрентсе ачасен сăмах йышне пуянлатмалла, çĕнĕ сăмахсемпе пуплевре тухăçлă усă курма вĕрентсе пымалла.

Уроксенче учитель çак кĕнекесемпе усă курма пултарать: Ю.М. Виноградов, Г.М. Виноградова. Орфографи словарĕ. Тĕрĕс çырмалли правилăсем. – Шупашкар, 2002; Ю.М. Виноградов. Чăваш орфографине шкулта вĕрентесси. – Шупашкар, 2007; М.И. Скворцов редакциленĕ «Чăвашла вырăсла словарь». – Шупашкар, 1982.

Çавăн пекех уроксенче 5-мĕш класс валли хатĕрленĕ электрон пособийĕсемпе, таблицăсемпе, тестсемпе май пур таран усă курмалла. Ку кĕнекере сĕннĕ уроксенче ĕçсен йĕркине, хăнăхтарусен шутне, çыру ĕçĕсен тĕсне учитель кирлĕ пек улăштарма пултарать.

# УРОКСЕМ

## ПУÇЛАМĂШ КЛАССЕНЧЕ ВĔРЕННИНЕ АСА ИЛСЕ ÇИРĔПЛЕТЕССИ, ХУШСА ВĔРЕНТЕССИ

## *1-мĕш урок.* Тăван чĕлхе

**Урок тĕллевĕсем:** 1. Ачасене тăван чĕлхе халăх пуянлăхĕ, хутшăну тата пĕлÿ пухмалли хатĕр пулнине ăнланса илсе ăша хывма пулăшасси, тăван чĕлхене хисеплесе юратма, упрама вĕрентесси. 2. Ачасене паллă çынсем тăван чĕлхе пĕлтерĕшĕ пирки каланисемпе паллаштарса калаçу йĕркелесси, харпăр хăй шухăшне пĕлтерме хăнăхтарасси.

**Урок тĕсĕ: содержани тăрăх** – лексика урокĕ; **тĕллевне кура** – кÿртĕм урок; **формине кура** – яланхи йĕркепе ирттерекен урок.

**Вĕрентÿ меслечĕсемпе ĕç хатĕрĕсем:** учитель ăнлантарăвĕ, калаçу, паллă çынсем тăван чĕлхе çинчен каланă сăмахсем.

### Урок юхăмĕ

**I. Учитель сăмахĕ.**

Чăваш чĕлхи – пирĕн тăван чĕлхе.

Тăван чĕлхене вĕренни мĕн тума кирлĕ? Пĕр-пĕринпе хутшăнма, пĕлÿ пухма кирлĕ, тăван чĕлхене лайăх пĕлни ытти чĕлхесене вĕреннĕ чух та пысăк пулăшу парать.

Чĕлхе – хутшăну хатĕрĕ. Вăл тĕрлĕ шухăша, кăмăл-туйăма палăртма пулăшать. Чĕлхепе усă курса çынсем пĕр-пĕринпе хутшăнма пултараççĕ: е сăмах вĕççĕн, е çырса.

Этем чĕлхи хутшăну мелĕ çеç мар, шухăшламалли, тĕнчене ăнланса ун çинчен каласа памалли хатĕр те пулса тăрать. Шухăша сăмахпа çеç мар, ÿкерчĕкпе, хусканупа пĕлтерме пулать. Чĕр чунсен те пĕр-пĕринпе хутшăнмалли майсем пур, анчах вĕсем, этем чĕлхи пек, шухăшлав хатĕрĕ пулаймаççĕ.

Тĕпчевçĕсем çирĕплетнĕ тăрăх, пĕчĕк ачасем çынсем хушшинче пурăнсан çеç калаçма вĕренеççĕ, пĕр-пĕринпе хутшăнма пултараççĕ. Тин çуралнă ача чĕр чунсем хушшине лексен калаçма вĕренеймест. Ку шухăша çирĕплетсе паракан çакăн пек тĕслĕхе илсе кăтартаççĕ. 1920 çулта

джунглире кашкăрсен йăвинче икĕ хĕр ачана тупнă. Вĕсем хăйсене кашкăрсем пекех тыткаланă: тăватă уран чупса çÿренĕ, калаçма пĕлмен, чĕр чунсем пек сас пама çеç пултарнă; чĕрĕ какай çинĕ, тĕттĕмре питĕ аван курнă. Кайран çынсем хушшинче пурăнма пуçласан та, калаçма вĕренсе çитеймен. Кун пек тĕслĕхсене эпир 30 ытла пĕлетпĕр.

– Ачасем, сирĕн шутпа мĕншĕн çакăн пек пулса тухнă? (Чĕлхене ытти çынсемпе хутшăнса вĕсенчен çеç пĕчĕккĕн вĕренме пулать, тин çуралнă нимĕнле ачан та чĕлхи аталанман.)

– Тĕнчери халăхсем тем тĕрлĕ чĕлхепе те калаçаççĕ. Эсир мĕнле чĕлхесене пĕлетĕр? (Тĕпчевçĕсем каланă тăрăх, тĕнчере пурĕ 3 пине яхăн чĕлхе. Теприсен шухăшĕпе, чĕлхесен шучĕ 5 пине çитет.)

Чĕлхе – пĕлÿ пухмалли хатĕр те, вăл ăрусен ăс пурлăхне пухма, ăна упраса хăварма, çавна май тĕрлĕ ÿнере, культурăна, ăслăлăха аталанма май туса парать. Чĕлхе – халăх ăс-тăнĕн пуянлăхĕ, ун культурин тĕп палли. Чĕлхе пулмасан халăх пулмасть. Çавăнпа та чĕлхе вăл – халăх историйĕн никĕсĕ.

Чăваш чĕлхи – тĕрĕк чĕлхи. Тĕрĕк чĕлхисен шутне тутар, пушкăрт, туркă, казах, кăркăс, азербайджан чĕлхисем тата ыттисем кĕреççĕ. Вĕсем пĕр тăван чĕлхесем шутланаççĕ, мĕншĕн тесен пуринче те авалхи тĕрĕк чĕлхинчен пыракан сăмахсем, грамматика формисем йышлă, сасă пулăмĕсем те пĕр евĕрлĕрех. Сăмахран, ытти тĕрĕк чĕлхисенче, чăваш чĕлхинчи пекех, аффикссем сăмах тымарĕ çумне йĕркипе хушăнса пыраççĕ: чăвашла – *кур-ат-ăп* ~ туркăлла – *gör-ü-yor-um* т.ыт.те.

**II. Хăнăхтарусемпе ĕçлени.**

1–2-мĕш хăнăхтарусем. Ачасем М.Я. Сироткин тата Г.Н. Волков тăван чĕлхе пирки каланă сăмахсене вуласа ăнланаççĕ, тĕп шухăшĕсене палăртаççĕ. Учитель чĕлхе пĕлтерĕшĕ çинчен, тăван чĕлхене вĕренни мĕн тума кирли çинчен пĕтĕмлетсе каласа хăварать.

**III. Киле ĕç пани.**

3-мĕш хăнăхтару.

## *2-мĕш урок.* Сасă тата сас палли. Алфавит (1§). *Б, г, д, ж, з, ф, ц, щ, ъ, ь* сас паллисене çырасси (2§)

**Урок тĕллевĕсем:** 1. Сасă тата сас палли, алфавит, чăваш чĕлхине вырăс чĕлхинчен çыру урлă кĕнĕ сăмахсене пуçламăш классенче вĕреннине аса илесси. 2. Сасăпа сас палли хушшинчи уйрăмлăхсене палăртма, *б, г, д, ж, з, ф, ц, щ, ъ, ь* сас паллиллĕ сăмахсене тĕрĕс çырма хăнăхтарасси.

**Урок тĕсĕ: содержани тăрăх** – фонетикăпа графика урокĕ; **тĕллевне кура** – аса илӳ урокĕ; **формине кура** – яланхи йĕркепе ирттерекен урок.

**Вĕрентӳ меслечĕсем:** учитель ăнлантарăвĕ, калаçу.

## Урок юхăмĕ

**I. Вĕреннине аса илни.**

1. Умĕн калани.

1–4-мĕш классенче ачасем сасăсем уçă тата хупă, хытă тата çемçе, янăравлă тата янăравсăр пулнине асăрхама, вĕсене палăртма вĕреннĕ; «сыпăк», «пусăм» ăнлавсемпе паллашнă, схемăпа усă курса сăмахсен сасăпа сас палли тытăмне тишкернĕ. Фонетикăпа графика тишкерĕвне туса йăнăшсăр çырса илме, илтнипе çырнине тĕрĕслеме хăнăхса пынă. Ачасем каланипе çырни хушшинче тӳрĕ шайлашу çуккине, сăмахри сасăсемпе сас паллисен шучĕ пур чухне те пĕр маррине, хăш-пĕр сас палли икĕ сасса пĕлтернине е пĕр сасса икĕ сас паллипе палăртнине пĕлеççĕ ĕнтĕ.

Чăн чăваш сăмахĕсенчи вăрăмланнă сасса илтме, ăна икĕ пĕр пек сас палли çырса палăртма вĕреннĕ.

Вырăс чĕлхинчен çырупа йышăннă хăш-пĕр сăмаха вырăс чĕлхинчи пекех çырма *(Миша, машина, колхоз, кухня),* вырăс сăмахĕсенчи *б, г, д, ж, з, ф, ц, щ* сасăсене çырура палăртма хăнăхса пынă.

2. Теори материалне ыйтусем парса аса илни.

– Мĕн вăл сасă? Мĕн вăл сас палли? Вĕсене пĕр-пĕринчен мĕнле уйăрса илмелле?

– Пĕр сасă сăмах пĕлтерĕшне улăштарма пултарать-и? Тĕслĕхпе ĕнентерĕр.

– Сăмахри сасăсемпе сас паллисен хисепĕ яланах пĕрешкел пулать-и? Хăçан пĕрешкел пулмасть? Тĕслĕхсемпе ĕнентерĕр.

– Чăваш алфавитĕнче миçе сас палли? Алфавитри сас паллисене йĕркипе каласа тухăр.

3. Хăнăхтарусемпе ĕçлени.

4-мĕш хăнăхтару. Ачасем «сасă», «сас палли» терминсене, вĕсен пĕлтерĕшĕсене аса илеççĕ (сасса илтетпĕр, сас паллине çыратпăр, куратпăр), сăмахри сасăсемпе сас паллисен хисепĕ мĕншĕн пур чухне те пĕрешкел маррине пĕтĕмлетеççĕ.

5–6-мĕш хăнăхтарусем. Ачасем пуплеври сасăсем сăмахсен пĕлтерĕшне уйăрса илме пулăшнине ăнлантараççĕ.

8-мĕш хăнăхтару – çыхăнуллă текст. Ку текста вулаттарса учитель ачасен вулав хăвăртлăхне, илемлĕхне, тĕрĕслĕхне, вĕсем кăмăл-туйăма епле палăртнине тĕрĕслеме пултарать. Унсăр пуçне текстăн темипе тĕп шухăшĕ пирки, тăван тавралăха упрамалли пирки калаçу йĕркелесе воспитани тĕллевне пурнăçлама пулать.

10–11-мĕш хăнăхтарусем. Ачасем вырăс чĕлхинчен йышăннă сăмахсене тупаççĕ, вĕсен уйрăмлăхĕсене палăртаççĕ, мĕнле çырмаллине аса илеççĕ. *Б, г, д, ж, з, ф, ц, щ* сас паллисем вырăс чĕлхинчен çыру урлă йышăннă сăмахсенче çеç тĕл пулнине тепĕр хут çирĕплетеççĕ.

12-мĕш хăнăхтару. Ачасем вырăс чĕлхинчен йышăннă сăмахсен вĕçĕнчи *б, г, д, ж, з* сасăсем янрамасăр илтĕннине аса илеççĕ.

13–14-мĕш хăнăхтарусем.

**II. Киле ĕç пани.**

9, 16-мĕш хăнăхтарусем.

## *3-мĕш урок.* Сăмах тымарĕ. Аффикссем (3§)

**Урок тĕллевĕсем:** 1. Пуçламăш классенче сăмах тымарĕ тата аффикссем çинчен мĕн пĕлнине аса илесси. 2. Ачасене сăмах тымарне тата аффикссене тĕрĕс тупма, пĕр тымартан пулнă сăмахсене уйăрма, сăмах тымарĕ çумне тĕрлĕ аффикссем хушса çĕнĕ сăмахсем тума, аффикслă сăмахсене тĕрĕс çырма хăнăхтарасси. 3. Ачасенче çут çанталăка упрас, юратас туйăма аталантарасси; этем çут çанталăкăн пĕр пайĕ пулнине, вăл мĕнле пулнинчен этемĕн пурнăç шайĕ те нумай килнине ăнланса илме пулăшасси.

**Урок тĕсĕ: содержани тăрăх** – морфологи (морфемика) урокĕ; **тĕллевне кура** – аса илӳ урокĕ; **формине кура** – яланхи йĕркепе ирттерекен урок.

**Вĕрентӳ меслечĕсем:** учитель ăнлантарăвĕ, калаçу.

### Урок юхăмĕ

**I. Килти ĕçе тĕрĕслени.**

1. 9, 16-мĕш хăнăхтарусем.

2. Суйлав диктанчĕ. Ачасем тетраде вырăс чĕлхинчен çырупа йышăннă сăмахсене çеç çыраççĕ: *кĕпер, барабан,*

*чăх, циркуль, сăмах, щетка, илем, журнал, вăрман, галстук, чечек, ферма, сухан, доска.*

**II. Вĕреннине аса илни.**

1. Теори материалне аса илни.

– Мĕне сăмахăн пĕлтерĕшлĕ чи пĕчĕк пайĕ теççĕ?

– Сăмах пĕр тымартан çеç тăма пултарать-и?

– Ачасем, эсир сăмах тымарĕ çумне хушăнакан мĕнле аффикссене пĕлетĕр? Тĕслĕхсемпе ăнлантарăр.

– Аффикссем мĕнлисем пулаççĕ? Тĕслĕхсемпе ĕнентерĕр.

2. Хăнăхтарусемпе ĕçлени.

17–20-мĕш хăнăхтарусем. Ачасем сăмах тымарĕ сăмахăн пĕлтерĕшлĕ чи пĕчĕк, чи кирлĕ пайĕ пулнине, ун çумне тĕрлĕ аффикссем хушăнма пултарнине, сăмахсем пĕр тымартан е тымарпа аффикссенчен тăнине аса илеççĕ.

21-мĕш хăнăхтару. Ачасем вăл е ку аффикс хушнипе сăмахăн пĕлтерĕшĕ епле улшăннине сăнаççĕ.

22–23-мĕш хăнăхтарусем – çыхăнуллă текстсем, вĕсем сăнарлă, туйăмлă. Учителĕн вĕренекенсене çут çанталăк илемне туйса илме, текстсене кăмăл-туйăма палăртса, илемлĕ вулама пулăшмалла, ачасене çут çанталăка упрама, юратма вĕрентмелле, этем çут çанталăкăн пĕр пайĕ пулнине, вăл мĕнле пулнинчен этемĕн пурнăç шайĕ те нумай килнине каласа памалла.

**III. Киле ĕç пани.**

24-мĕш хăнăхтару.

## *4-мĕш урок.* «Кĕрхи кунсем» сăнлав сочиненийĕ

**Урок тĕллевĕсем:** 1. Ачасене сăнлав сочиненийĕ çырма вĕрентесси. 2. Ачасен пуплевне аталантарасси.

**Урок тĕсĕ: тĕллевне кура** – пуплеве аталантармалли урок; **формине кура** – яланхи йĕркепе ирттерекен урок.

**Вĕренту меслечĕсемпе ĕç хатĕрĕсем:** учитель ăнлантарăвĕ, калаçу; «Кĕрхи кун» темăпа çыхăннă картина.

### Урок юхăмĕ

**I. Пуплеве аталантармалли материалпа ĕçлени.**

1. Сочинени çырма хатĕрленни.

14, 24-мӗш хӑнӑхтарусем. Кӗрхи кунӑн уйрӑмлӑхӗсене тишкерсе ачасене сӑнлавлӑ текст йӗркелеме кирлӗ илемлӗх мелӗсене курма пулӑшмалла.

2. «Кӗрхи кун» картинӑпа ӗҫлени.

3. Сочинени планне туни.

4. Кӗрхи кун ҫинчен ҫыхӑнуллӑ каласа пани.

5. Сочинени ҫырни. Ачасем сочинение малтан уйрӑм хут ҫине, унтан тетраде ҫыраҫҫӗ.

**II. Урока пӗтӗмлетни.**

1. Сочинение пӗтӗмӗшле тишкерни.

2. Ыйтусене хуравлани. Ачасем сочинени ҫырнӑ чух асра юлнӑ йывӑрлӑхсене пӗлтереҫҫӗ.

– Сочинени ҫырнӑ чух сирӗншӗн чи йывӑрри мӗн пулчӗ?

– Орфографи тӗлӗшӗнчен мӗнле сӑмахсене ҫырма йывӑр пулчӗ?

– Кӗрхи кунӑн уйрӑмлӑхне палӑртма мӗнле пулӑмсене суйласа илтӗр?

## *5-мӗш урок.* Пуҫламӑш классенче вӗреннӗ пуплев пайӗсем (4§)

**Урок тӗллевӗсем:** 1. Пуҫламӑш классенче вӗреннӗ япала ячӗсене тата паллӑ ячӗсене аса илесси. 2. Ачасене пуплевре япала ячӗсемпе паллӑ ячӗсене тупма, вӗсен уйрӑмлӑхӗсене палӑртма тата вӗсемпе пӗлсе усӑ курма, япала ячӗсемпе паллӑ ячӗсен формисене тӗрӗс ҫырма хӑнӑхтарасси.

**Урок тӗсӗ: содержани тӑрӑх** – морфологи урокӗ; **тӗллевне кура** – аса илӳ урокӗ; **формине кура** – яланхи йӗркепе ирттерекен урок.

**Вӗрентӳ меслечӗсем:** учитель ӑнлантарӑвӗ, калаҫу.

### Урок юхӑмӗ

**I. «Кӗрхи кунсем» сочинение тишкерни.**

**II. Вӗреннине аса илни.**

1. Умӗн калани.

Вӗреннӗ пуплев пайӗсене аса илме икӗ урок уйӑрнӑ. Пӗрремӗш урокра, тӗпрен илсен, япала ячӗпе паллӑ ячӗсене аса илсе ҫирӗплетме пулать. Иккӗмӗш урокра

вара глагол, местоимени, хисеп ячĕ ҫинчен вĕреннине аса илмелле.

Пуҫламăш классенче ачасем япала ячĕсем улшăннине, вĕсем пĕррелле тата нумайлă хисепсенче пулнине, ытти сăмахсемпе ҫыхăннă чух тĕрлĕ аффикс йышăнма пултарнине пĕлеҫҫĕ, япала ячĕсен камăнлăхне (сăпатне) палăртма, пулăшу пĕлтерĕшлĕ япала ячĕсен тăтăшах тĕл пулакан падеж формисене тупма пултараҫҫĕ.

Паллă ячĕсен тĕп, танлаштаруллă тата вăйлă степенĕсене, вăйлă степеньри паллă ячĕсене мĕнле ҫырмаллине вĕреннĕ.

2. Теори материалне аса илни.

– Мĕнле сăмахсене япала ячĕ теҫҫĕ?

– Чăваш чĕлхинче миҫе падеж? Падежсен ячĕсене, вĕсен ыйтăвĕсене аса илĕр.

– Япала ячĕсем падеж тăрăх улшăннине мĕн теҫҫĕ?

– Мĕнле сăмахсене паллă ячĕсем теҫҫĕ? Вĕсем мĕнле пуплев пайĕсене ăнлантараҫҫĕ?

– Паллă ячĕсем мĕнле-мĕнле степеньре пулаҫҫĕ? Паллă ячĕн танлаштаруллă степенĕ мĕнле аффикспа пулать? Вăйлă степень форми мĕнле?

3. Хăнăхтарусемпе ĕҫлени.

26-мĕш хăнăхтару. Ачасем ыйтăвĕсем тăрăх япала ятне, паллă ятне, глагола тупаҫҫĕ, вĕсем мĕне пĕлтернине калаҫҫĕ.

27-мĕш хăнăхтару.

28-мĕш хăнăхтару. Паллă ячĕсем ҫинчен вĕреннине аса илеҫҫĕ.

30–31-мĕш хăнăхтарусем. Вĕрентекен ачасене япала ячĕсемпе паллă ячĕсен пуплеври вырăнне, вĕсем мĕнле пуплев пайĕсемпе ҫыхăнма пултарнине курма пулăшать.

**III. Киле ĕҫ пани.**

29-мĕш хăнăхтару.

## *6-мĕш урок.* Пуҫламăш классенче вĕреннĕ пуплев пайĕсем

**Урок тĕллевĕсем:** 1. Пуҫламăш классенче вĕреннĕ глагол, местоимени, хисеп ячĕ ҫинчен мĕн пĕлнине аса илесси. 2. Ачасене пуплевре глаголсемпе местоименисене, хисеп ячĕсене тупма, вĕсен уйрăмлăхĕсене палăртма тата

вӗсемпе пӗлсе усӑ курма, глагол формисене тӗрӗс ҫырма хӑнӑхтарасси.

**Урок тӗсӗ: содержани тӑрӑх** – морфологи урокӗ; **тӗллевне кура** – аса илӳ урокӗ; **формине кура** – яланхи йӗркепе ирттерекен урок.

**Вӗрентӳ меслечӗсем:** учитель ӑнлантарӑвӗ, калаҫу.

**Словарь ӗҫӗ:** *кӗсье, супӑнь, сип-симӗс, хӗп-хӗрлӗ, шап-шурӑ, сап-сарӑ, килет, вулать, пӗлет, выляҫҫӗ, килеҫҫӗ.*

## Урок юхӑмӗ

**I. Килти ӗҫе тӗрӗслени.**

1. 29-мӗш хӑнӑхтару. Малтан уйрӑм ачасем килте ҫырнӑ калавсене вуласа параҫҫӗ, унтан вӗрентекен ӗҫсене пуҫтарса илет.

2. Сӑмах диктанчӗ.

**II. Вӗреннине аса илсе ҫирӗплетни.**

1. Умӗн калани.

Пуҫламӑш классенче ачасем глаголсем виҫӗ (хальхи, пулас, иртнӗ) вӑхӑтра, пӗрреллӗ тата нумайлӑ хисепсенче сӑпатланнине, пурлӑ тата ҫуклӑ формӑсенче пулнине вӗреннӗ. Сӑпат местоименийӗсен падежӗпе хисепне, ыйтӑвӗсене, япала ячӗпе ҫыхӑнма пултарнине пӑхса тухнӑ.

2. Теори материалне аса илни.

Ыйтусемпе ӗҫлесе (13 с.) ачасем сӑпат местоименийӗсене аса илеҫҫӗ, вӗсем падежсем тӑрӑх улшӑнма пултарнине палӑртаҫҫӗ. Унтан учитель ачасем глагол ҫинчен мӗн пӗлнине ыйтусем парса тӗрӗслет.

– Мӗнле сӑмахсене глагол теҫҫӗ? Вӗсен ыйтӑвӗсене калӑр.

– Глаголсем мӗнле вӑхӑтри ӗҫсене пӗлтерме пултараҫҫӗ? Глагол вӑхӑчӗсене каласа тухӑр.

– Глагол миҫе сӑпатра, мӗнле хисепсенче пулать?

3. Хӑнӑхтарусемпе ӗҫлени.

32-мӗш хӑнӑхтару.

33-мӗш хӑнӑхтару. Паллӑ тунӑ сӑмахсене ыйту парса вӗсем глаголсем пулнине палӑртаҫҫӗ.

34–35-мӗш хӑнӑхтарусем.

36-мӗш хӑнӑхтару. Ачасем сӑмахсене танлаштарса хальхи вӑхӑтри 3-мӗш сӑпатри глаголсене мӗнле ҫырмаллине аса илеҫҫӗ, правилӑна вулаҫҫӗ.

37-мĕш хăнăхтару. Аса илнĕ материала çирĕплетеççĕ.

38-мĕш хăнăхтару. Ачасем глагол формисене тĕрĕс çырассине аса илсе çирĕплетеççĕ.

**III. Киле ĕç пани.**

39–40-мĕш хăнăхтарусем.

## *7-мĕш урок.* Предложени, унăн членĕсем. Пĕр йышши членсем, вĕсене чарăну паллисемпе уйăрасси (5§)

**Урок тĕллевĕсем:** 1. Пуçламăш классенче предложени, унăн членĕсем, пĕр йышши членсем çинчен мĕн пĕлнине аса илесси. 2. Предложенин тĕп тата кĕçĕн членĕсене тупма, пĕр йышши членсемпе пуплевре усă курма, вĕсене чарăну паллисемпе тĕрĕс уйăрма хăнăхтарасси.

**Урок тĕсĕ: содержани тăрăх** – синтаксис урокĕ; **тĕллевне кура** – аса илӳ урокĕ; **формине кура** – яланхи йĕркепе ирттерекен урок.

**Вĕрентӳ меслечĕсем:** учитель ăнлантарăвĕ, калаçу.

### Урок юхăмĕ

**I. Килти ĕçе тĕрĕслени.**

1. 39–40-мĕш хăнăхтарусем.
2. Сăмах диктанчĕ (глагол формисене çырасси).

**II. Вĕреннине аса илни.**

1. Теори материалне аса илни.

– Предложени мĕне пĕлтерет?

– Предложенин тĕп членĕсем хăшĕсем пулаççĕ? Вĕсене мĕнле уйăрса илмелле?

– Предложенире тĕп членсемсĕр пуçне тата мĕнле членсем пулаççĕ?

– Предложенин мĕнле членĕсене пĕр йышши членсем теççĕ?

– Пĕр йышши членсем мĕнле (союзсемпе, союзсăр) çыхăнма пултараççĕ?

2. Хăнăхтарусемпе ĕçлени.

41–42-мĕш хăнăхтарусем. Ачасем предложенин пĕр йышши членĕсене палăртаççĕ, союзсăр çыхăннă чух пĕр йышши членсем хушшине запятой лартмалли правилăна аса илеççĕ.

44–45-мĕш хăнăхтарусем – çыхăнуллă текстсем. Çавăнпа кунта çакăн пек ĕçсем йĕркелеме пулать: текста ят парасси, вакрах темăсене палăртса план тăвасси, план тăрăх каласа парасси т.ыт.те.

3. Асăрхаттару диктанчĕ (17 с.)[1].

Учитель пĕр йышши членсене запятой лартса уйăрассине ачасем мĕнле ăша хывнине тĕрĕслет.

**III. Киле ĕç пани.**

43-мĕш хăнăхтару.

## *8-мĕш урок.* Ыйтуллă тата ыйтусăр предложенисем. Кăшкăруллă предложени (6§)

**Урок тĕллевĕсем:** 1. Пуçламăш классенче калуллă, ыйтуллă, хистевлĕ, кăшкăруллă е кăшкăрусăр предложенисем çинчен мĕн пĕлнине аса илесси. 2. Ачасене пуплевре ыйтуллă тата ыйтусăр, кăшкăруллă тата кăшкăрусăр предложенисене тупма, шухăша палăртнă чух вĕсемпе пĕлсе усă курма хăнăхтарасси.

**Урок тĕсĕ: содержани тăрăх** – синтаксис урокĕ; **тĕллевне кура** – аса илӳ урокĕ; **формине кура** – яланхи йĕркепе ирттерекен урок.

**Вĕрентӳ меслечĕсем:** учитель ăнлантарăвĕ, калаçу.

### Урок юхăмĕ

**I. Килти ĕçе тĕрĕслени.**

43-мĕш хăнăхтару.

**II. Вĕреннине аса илни.**

1. Теори материалне аса илсе çирĕплетни.

– Каланин тĕллевне кура предложенисем мĕнлисем пулаççĕ?

– Мĕнле предложенисене калуллă теççĕ?

– Кăмăл-туйăма вăйлăн палăртса каланă предложение мĕнле предложени теççĕ?

Ачасем тĕллевне кура калуллă, ыйтуллă тата хистевлĕ предложенисем пулнине çирĕплетеççĕ (ку темăна 5-мĕш

И-42889

[1] Петрова Л.Г., Егорова В.А. Диктант пуххи. – Шупашкар, 2003.

Национальная библиотека Чувашской Республики

класс кĕнекинче пуçламăш классенче вĕреннине шута илсе çапла ăнлантарнă. Çĕнĕ программа палăртнине асра тытса ачасемпе ыйтуллă е ыйтусăр предложенисем çинчен калаçмалла).

2. Хăнăхтарусемпе ĕçлени.

49, 50, 53-мĕш хăнăхтарусем. Ачасем пуплев интонацине уйăрма, унăн пĕлтерĕшне палăртма вĕренеççĕ.

52, 55-мĕш хăнăхтарусем. Ачасем ыйтуллă предложенисен уйрăмлăхĕсене курма тата вĕсене тĕрĕс йĕркелеме хăнăхаççĕ.

3. Учебникри чĕлхе материалне (22 с.) тишкерни.

**III. Киле ĕç пани.**

56-мĕш хăнăхтару.

## *9-мĕш урок.* Тĕрĕслев диктанчĕ

**Урок тĕллевĕсем:** 1. Ачасен орфографипе пунктуаци пĕлĕвĕпе хăнăхăвĕсене тĕрĕслесси. 2. Пĕр йышши членсене чарăну паллипе уйăрма, япала ячĕпе глагол формисене тĕрĕс çырма хăнăхтарасси.

**Урок тĕсĕ: содержани тăрăх** – орфографипе пунктуаци урокĕ; **тĕллевне кура** – тĕрĕслев урокĕ; **формине кура** – яланхи йĕркепе ирттерекен урок.

**Вĕренту меслечĕсем:** учитель ăнлантарăвĕ, калаçу.

### Урок юхăмĕ

**I. Килти ĕçе тĕрĕслени.**

56-мĕш хăнăхтару.

**II. Малтан вĕреннине аса илни.**

Ачасем сăмахсене тĕрĕс çырассипе çыхăннă правилăсене аса илеççĕ: 1) вăраммăн илтĕнекен хупă сасăсем: *паллană, вуллисем, хускалаççĕ, хул пуççийĕ, таяннă, хуппийĕ, шатраллă, тăррисем, хаяррăн, ачашшăн, шавлаççĕ, параççĕ, тăршшĕпех, хушшинче;* 2) мăшăр сăмахсем тата икĕ хут калакан сăмахсем: *йĕри-тавра, сăтăра-сăтăра, шĕпĕлтете-шĕпĕлтете, хытă-хытă.*

**III. Диктант çырни.**

ЙЫВĂÇСЕМ

Кĕретĕн вăрмана, йĕри-тавра паллană йывăç! Хурăн, ăвăс, çирĕк, хыр, чăрăш, пилеш, çăка, вĕрене, юман. Тахçанхи тусна ачашланă пек

вĕсене пурне те алăпа сăтăра-сăтăра ачашлатăн. Вуллисем пурин те ăшă, чĕрĕ, сывланă чухнехи пек кăшт çеç хускалаççĕ.

Йывăç вулли çумне сывăх тусун хул пуççийĕ çумне таяннă пек таянатăн. Юман хуппийĕ çирĕп те хытă хуйăрлă, пĕркеленчĕклĕ. Хурăн хуппийĕ яка та ачаш. Ăвăсăн вара кăтăрка та шатраллă пек.

Йывăç тураттисем пĕрре хаяррăн, тепре ачашшăн шавлаççĕ. Çулçисем хăйсен симĕс чĕлхисемпе сана тем шĕпĕлтете-шĕпĕлтете каласа параççĕ.

Ĕмĕр тăршшĕпех йывăç хушшинче, йывăçсемпе юнашар пурăнатпăр. Çавăнпа та вĕсен турат аллисене хытă-хытă тав туса чăмăртас килет. *(Н. Сладков. 123 сăмах.)*

**IV. Грамматика ĕçне туни.**

1. Пĕр йышши сказуемăйлă предложенисене çырса илни.

2. Глаголсене çырса илни, вĕсен вăхăтне, сăпатне, хисепне палăртни.

**V. Урока пĕтĕмлетни.**

## *10-мĕш урок.* Текст. Унăн пайĕсем (7§)

**Урок тĕллевĕсем:** 1. Текст пайĕсене уйăрма вĕрентесси. 2. Ачасене текст йĕркелеме хăнăхтарасси.

**Урок тĕсĕ: содержани тăрăх** – синтаксис урокĕ; **тĕллевне кура** – çирĕплетӳ урокĕ; **формине кура** – яланхи йĕркепе ирттерекен урок.

**Вĕрентӳ меслечĕсем:** учитель ăнлантарăвĕ, калаçу.

### Урок юхăмĕ

**I. Диктантри йăнăшсемпе ĕçлени.**

**II. Вĕреннине аса илни.**

1. Малтан вĕреннине ыйтусем парса аса илни.

– Мĕн вăл текст? Текст теми тесе мĕне калаççĕ?

– Текст мĕнле пайсенчен тăрать?

– Текст пайĕсене ят пама пулать-и?

– Текстри предложенисем пĕр-пĕринпе мĕнле çыхăнса пыраççĕ?

2. Кĕнекери (24 с.) тĕслĕхсемпе паллашни.

3. Ӳкерчĕк тăрăх (57-мĕш хăнăхтару) текст калăплани. Ачасем малтан ӳкерчĕкре çулталăкăн хăш вăхăтне сăнланине, ăна мĕнрен пĕлме май пуррине, шкул ачисен кăмăлĕ мĕншĕн лайăх пулнине калаççĕ. Унтан ӳкерчĕк тăрăх текст йĕркелеççĕ: темăпа килĕшӳллĕ мĕн хыççăн мĕн каламаллине палăртаççĕ.

**III. Вĕреннине çирĕплетни.**

Хăнăхтарусемпе ĕçлени.

58–59-мĕш хăнăхтарусем – çыхăнуллă текстсем. Хăнăхтарусене пурнăçланă хыççăн пĕтĕмлетӳ тумалла: текстри предложенисем шухăшĕ енчен пĕр-пĕринпе тачă çыхăнса тăраççĕ, çав çыхăнăва тума чĕлхе мелĕсем пулăшаççĕ.

60-мĕш хăнăхтару.

**IV. Киле ĕç пани.**

7§; 61-мĕш хăнăхтару.

## *11-мĕш урок.* Текст пайĕсене çыхăнтармалли мелсем (7§)

**Урок тĕллевĕсем:** 1. Текстри предложенисене çыхăнтармалли мелсене вĕрентесси. 2. Ачасене текстри предложенисене çыхăнтаракан мелсене тупма, вĕсемпе пуплевре вырăнлă усă курма хăнăхтарасси.

**Урок тĕсĕ: содержани тăрăх** – синтаксис урокĕ; **тĕллевне кура** – çирĕплетӳ урокĕ; **формине кура** – яланхи йĕркепе ирттерекен урок.

**Вĕрентӳ меслечĕсем:** учитель ăнлантарăвĕ, калаçу.

### Урок юхăмĕ

**I. Килти ĕçе тĕрĕслени.**

1. Текст çинчен мĕн пĕлнине ачасенчен ыйтса тĕрĕслени.

– Мĕне текст тесе калаççĕ?

– Текст пайĕсене мĕнле уйăрмалла?

– Текст пайĕсене ят пама пулать-и?

2. 61-мĕш хăнăхтару.

3. Сăмах диктанчĕ (хупă сасă вăраммăн илтĕннине икĕ сас паллипе палăртасси): *талккăшпех, хушши, туратти, аяккалла, малалла, каялла, унталла, кунталла, çунатти.*

**II. Вĕреннине çирĕплетни.**

Хăнăхтарусемпе ĕçлени.

62, 64-мĕш хăнăхтарусем. Ачасем текст планĕ çинчен вĕреннине аса илсе çирĕплетеççĕ.

**III. Киле ĕç пани.**

7§; 65-мĕш хăнăхтару.

## *12-мĕш урок.* Изложени

**Урок тĕллевĕсем:** 1. Ачасене изложени çырма вĕрентесси. 2. Текст йĕркелеме (пуçламăшне, тĕп пайне, вĕçне, тĕп шухăшне тĕрĕс палăртма, предложенисене пĕр-пĕринпе çыхăнтарма) хăнăхтарасси.

**Урок тĕсĕ: тĕллевне кура** – пуплеве аталантармалли урок; **формине кура** – яланхи йĕркепе ирттерекен урок.

### Урок юхăмĕ

**I. Изложени çырма хатĕрленни.**

1. Текст содержанийĕпе ĕçлени. Ачасем текст темине, тĕп шухăшне палăртаççĕ.

– Çак ятсенчен хăшĕ текст шухăшне лайăхрах палăртать: «Чĕкеç чĕппи», «Инкекрен хăтарни», «Ырă ĕç»?

2. Текст тытăмĕпе ĕçлени. Ачасем ыйтусене хуравлаççĕ.

– Текста шухăшĕ тăрăх миçе пая пайлама пулать?

– Текстăн пуçламăшне палăртăр. Вăл хăш предложенисемпе пĕтет?

– Текстăн тĕп пайне тупса вулăр.

– Текстăн вĕçне кăтартăр.

– Автор текст пуçламăшĕпе тĕп пайне мĕнле майпа çыхăнтарнă?

– Текстăн тĕп пайĕпе пĕтмĕшне мĕнле çыхăнтарнине ăнлантарăр.

3. Текст чĕлхине тишкерни.

– *Пăхăр-ха, чĕкеç хăйĕн чĕппине шыв çийĕн ярăнма вĕрентет, – терĕ пире вĕрентекен.* Панă предложенири чарăну палли лартассипе çыхăннă уйрăмлăхсене ăнлантарăр.

– *Аяккалла, малалла, каялла, унталла, ярăнса, вăрвар* сăмахсемпе усă курса предложенисем йĕркелĕр.

**II. Изложени çырни.** Ачасем изложение уйрăм хут çине çыраççĕ.

**III. Урока пĕтĕмлетни.**

**IV. Киле ĕç пани.**

Изложение тетраде куçарса çырмалла.

## *13-мĕш урок.* Чĕнӳ сăмахĕсем, вĕсене чарăну паллисемпе уйăрасси (8§)

**Урок тĕллевĕсем:** 1. Чĕнӳ сăмахĕсемпе паллаштарасси, вĕсене чарăну палли лартса уйăрма вĕрентесси. 2. Ачасене пуплевре чĕнӳ сăмахĕсене тупма, вĕсемпе усă курма, чарăну паллисемпе тĕрĕс уйăрма хăнăхтарасси.

**Урок тĕсĕ: содержани тăрăх** – синтаксис урокĕ; **тĕллевне кура** – çĕнĕ темăна вĕрентмелли урок; **формине кура** – яланхи йĕркепе ирттерекен урок.

**Вĕрентӳ меслечĕсем:** учитель ăнлантарăвĕ, калаçу.

### Урок юхăмĕ

**I. Изложенири йăнăшсене тишкерни.**

**II. Çĕнĕ темăна вĕрентни.**

1. 66-мĕш хăнăхтару. Ачасем тĕслĕхсене тишкереççĕ.

2. Ыйтусене хуравлани.

– Чĕнсе каланă сăмахсем мĕнле те пулин ыйтура тăраççĕ-и? Вĕсем предложенири ытти сăмахсемпе çыхăнаççĕ-и?

– Чĕнсе калакан сăмахсем предложенире хăш вырăнта тăраççĕ?

3. Кĕнекери теори материалĕпе паллаштарни. Пĕтĕмлетӳ туни.

**III. Вĕреннине çирĕплетни.**

Хăнăхтарусемпе ĕçлени.

67-мĕш хăнăхтару. Ачасем чĕнӳ сăмахĕсене мĕнле чарăну паллисемпе уйăрнине сăнаççĕ, 30-мĕш страницăри правилăсемпе паллашаççĕ.

68–69-мĕш хăнăхтарусем. Ачасем чĕнӳ сăмахĕсемпе предложени членĕсем хушшинчи уйрăмлăха палăртаççĕ.

73–75, 79-мĕш хăнăхтарусем. Ку хăнăхтарусене суйласа илсе тумалла, пĕтĕмлетмелле.

70-мĕш хăнăхтару.

**IV. Киле ĕç пани.** 8§; 78-мĕш хăнăхтару.

## *14-мĕш урок.* Текст теми, тĕп шухăшĕ (9§)

**Урок тĕллевĕсем:** 1. Текст темипе тĕп шухăшĕ çинчен мĕн пĕлнине аталантарасси. 2. Ачасене текстăн темине, тĕп шухăшне тĕрĕс палăртма хăнăхтарасси.

**Урок тĕсĕ: содержани тăрăх** – синтаксис урокĕ; **тĕллевне кура** – çĕнĕ темăна вĕрентмелли урок; **формине кура** – яланхи йĕркепе ирттерекен урок.

**Вĕрентӳ меслечĕсемпе ĕç хатĕрĕсем:** учитель ăнлантарăвĕ, калаçу; В.Ю.Андреев. «Кайăксем» электрон пособийĕ, 2006.

## Урок юхăмĕ

**I. Килти ĕçе тĕрĕслени.**

1. 8§; 78-мĕш хăнăхтару.

2. Сăмах диктанчĕ: *укăлча, мунча, пылчăк, шанчăк, вăлча, пăнчă, анчăк, хылчăк, ярăнчăк, ванчăк, анчах.*

**II. Çĕнĕ темăна вĕрентни.**

1. Пуçламăш классенче вĕреннине аса илни.

80-мĕш хăнăхтару. Ачасем ыйтусене хуравлаççĕ, пĕтĕмлетӳ тăваççĕ.

2. Çĕнĕ материалпа паллаштарни.

**III. Вĕреннине çирĕплетни.**

Хăнăхтарусемпе ĕçлени.

81-мĕш хăнăхтару. Çак ĕçе тума ула такка ӳкерчĕкĕ пулсан аван.

83, 85-мĕш хăнăхтарусем.

**IV. Киле ĕç пани.**

9§; 84-мĕш хăнăхтарури темăсенчен пĕрне суйласа илсе сочинени çырма хатĕрленмелле.

# *15-мĕш урок.* Сочинени

**Урок тĕллевĕсем:** 1. Ачасене сочинени çырма вĕрентесси. 2. Текст йĕркелеме хăнăхтарасси, орфографипе пунктуаци хăнăхăвĕсене çирĕплетесси.

**Урок тĕсĕ: тĕллевне кура** – пуплеве аталантармалли урок; **формине кура** – яланхи йĕркепе ирттерекен урок.

**Вĕрентӳ меслечĕсем:** учитель ăнлантарăвĕ, калаçу.

## Урок юхăмĕ

**I. Пуплеве аталантармалли материалпа ĕçлени.**

1. Урок тĕллевĕпе паллаштарни. Суйласа илнĕ темăна сӳтсе явни.

2. Сочинени планне туни.

3. План тăрăх çыхăнуллă каласа пани.
4. Ачасем сочинени çырни.

**II. Урока пĕтĕмлетни.**

Сочинение пĕтĕмĕшле тишкерни. Ачасем сочинени çырнă чух асра юлнă йывăрлăхсене пĕлтереççĕ.

– Сочинени çырнă чух чи йывăрри мĕн пулчĕ?

– Мĕнле сăмахсене çырасси шухăшлаттарчĕ?

**III. Киле ĕç пани.**

Сочинение тетраде куçарса çырмалла.

## *16-мĕш урок.* Хутлă предложени. Союзсăр тата сыпăнуллă хутлă предложенисем (10§)

**Урок тĕллевĕсем:** 1. Союзсăр тата сыпăнуллă хутлă предложенисене вĕрентесси. 2. Ачасене пуплевре союзсăр тата союзлă сыпăнуллă хутлă предложенисене тупма, вĕсемпе пуплевре пĕлсе усă курма хăнăхтарасси.

**Урок тĕсĕ: содержани тăрăх** – синтаксис урокĕ; **тĕллевне кура** – çĕнĕ темăна вĕрентмелли урок; **формине кура** – яланхи йĕркепе ирттерекен урок.

**Вĕрентӳ меслечĕсем:** учитель ăнлантарăвĕ, калаçу.

### Урок юхăмĕ

**I. Сочиненири йăнăшсемпе ĕçлени.**

**II. Çĕнĕ темăна вĕрентни.**

1. Кĕнекери чĕлхе материалне тишкерни. Вĕрентекен ертсе пынипе ачасем предложенисене тишкереççĕ, пĕтĕмлетӳ тăваççĕ: пĕрремĕш предложенире подлежащипе сказуемăй ушкăнĕ пĕрре, çавăнпа ку предложени хутсăр пулать; иккĕмĕшпе виççĕмĕш предложенисем хутлă, мĕншĕн тесен вĕсенче икшер подлежащипе сказуемăй.

2. Теори материалĕпе паллаштарни.

**III. Вĕреннине çирĕплетни.**

Хăнăхтарусемпе ĕçлени.

86-мĕш хăнăхтару. Хăнăхтарури хутлă предложенисене тишкернĕ, схемисене тунă май ачасем хутсăр предложенисем пĕр-пĕринпе союзпа тата союзсăр çыхăнма пултарнине палăртаççĕ, предложенисене пĕр-пĕринчен запятой лартса уйăрнине асăрхаççĕ.

87–89-мĕш хăнăхтарусем.

91, 94-мĕш хăнăхтарусем. Ачасем хутлă предложени çинчен мĕн пĕлнине çирĕплетеççĕ, çыхăнуллă пуплеве аталантараççĕ.

90, 93-мĕш хăнăхтарусем (çырса тумалла).

**IV. Киле ĕç пани.**

10§; 95-мĕш хăнăхтару.

## *17-мĕш урок.* Союзсăр тата сыпăнуллă хутлă предложенисем

**Урок тĕллевĕсем:** 1. Хутлă предложенисем çинчен мĕн пĕлнине çирĕплетесси. 2. Ачасене пуплевре хутлă предложенисемпе пĕлсе усă курма, вĕсенче чарăну палли тĕрĕс лартма хăнăхтарасси.

**Урок тĕсĕ: содержани тăрăх** – синтаксис урокĕ; **тĕллевне кура** – çирĕплетӳ урокĕ; **формине кура** – яланхи йĕркепе ирттерекен урок.

**Вĕрентӳ меслечĕсем:** учитель ăнлантарăвĕ, калаçу.

### Урок юхăмĕ

**I. Килти ĕçе тĕрĕслени.**

1. 10§; 95-мĕш хăнăхтару.

2. Сăмах диктанчĕ: *ула такка, кукăр сăмса, вĕлтрен тăрри, Атăл, Сĕве, Пăла, анчăк, калча, ванчăк.*

**II. Вĕреннине аса илсе çирĕплетни.**

1. Теори материалне аса илни.

– Мĕнле предложение хутлă теççĕ?

– Хутлă предложенири хутсăр предложенисем пĕр-пĕринпе мĕнле мелпе çыхăнаççĕ?

– Хутлă предложение кĕрекен хутсăр предложенисене пĕр-пĕринчен мĕнле уйăраççĕ?

2. Хăнăхтарусемпе ĕçлени.

96-мĕш хăнăхтару. Ӳкерчĕкпе ĕçленĕ май текстăн теми, тĕп шухăшĕ, пĕтĕмĕшле тытăмĕ (пуçламăшĕ, тĕп пайĕ, вĕçĕ) пирки маларах мĕн калаçнине аса илмелле. Ун хыççăн ачасене ӳкерчĕк тăрăх кĕске калав йĕркелеме, калава хутлă предложенисене кĕртме сĕнмелле.

98, 100-мĕш хăнăхтарусем. Хутлă предложенисенче

чарӑну палли лартмалли правилӑна ҫирӗплетсе хӑварас тӗллевпе ҫырса тумалла.

97, 99, 103-мӗш хӑнӑхтарусем. Ачасен ҫыхӑнуллӑ пуплевне аталантарма усӑ курмалла.

3. Сӑмахсен орфографине аса илсе ҫирӗплетни: *анчӑк, калча, ванчӑк; ҫиллен, кулян, кӳллен; йӑлт-ялт, кӑлт-калт, шӑлт-шалт.*

**III. Киле ӗҫ пани.**

10§; 102-мӗш хӑнӑхтару.

## *18-мӗш урок.* Текст планӗ (11§)

**Урок тӗллевӗсем:** 1. Текст планне тума вӗрентесси. 2. Ачасене план тӑрӑх каласа е ҫырса пама хӑнӑхтарасси.

**Урок тӗсӗ: содержани тӑрӑх** – лексика урокӗ; **тӗллевне кура** – ҫӗнӗ темӑна вӗрентмелли урок; **формине кура** – яланхи йӗркепе ирттерекен урок.

**Вӗрентӳ меслечӗсемпе ӗҫ хатӗрӗсем:** учитель ӑнлантарӑвӗ, калаҫу; В.Ю.Андреев. «Кайӑксем» электрон пособийӗ, 2006.

### Урок юхӑмӗ

**I. Килти ӗҫе тӗрӗслени.**

1. 10§; 102-мӗш хӑнӑхтару.

2. Сӑмах диктанчӗ: *ҫиллен, кулян, кӳллен, кӑлт-калт, шӑлт-шалт, ҫӑмӑллан, йӑлтӑр-ялтӑр, кӑлтӑр-кӑлтӑр, пӑлтӑр-палтӑр, хӑвӑллан.*

**II. Ҫӗнӗ темӑна вӗрентни.**

1. Вӗреннӗ материала аса илни.

Ачасем текстӑн пуҫламӑшне, тӗп пайне, пӗтмӗшне асӑрхама, текста темиҫе пая уйӑрма, пайӗсене ят парса план тума, планпа усӑ курса текст тӑрӑх изложени ҫырма е каласа пама вӗреннӗ. 5-мӗш класра ҫак пӗлӗве тарӑнлатас, хӑнӑхусене малалла аталантарас тӗлӗшпе ӗҫлемелле. Малтан ҫак ыйтусене хуравлаҫҫӗ:

– Текст мӗнле пайсенчен тӑрать?

– Текста унӑн шухӑшне, содержанине кура мӗнле пайламалла?

2. Текстпа ӗҫлени. Вӗрентекен ертсе пынипе ачасем текста (104-мӗш хӑнӑхтару) вулаҫҫӗ, шухӑш енчен вӑл 3 пая

пайланнине палӑртаççӗ, кашни пайне ят параççӗ, пӗтӗмлетӳ тӑваççӗ: пайсен ячӗсем текстӑн планӗ пулнине, вӑл текстӑн шухӑшне питӗ кӗскен уçса панине палӑртаççӗ.

План.

1) Ирина пӗве хӗррине пӗчченех пыни.

2) Хӗр ача шыва пута пуçлани.

3) Андрей Иринӑна çӑлни.

3. Хӑнӑхтарусемпе ӗçлени.

105–107, 109, 112-мӗш хӑнӑхтарусем.

**III. Киле ӗç пани.**

11§; 111-мӗш хӑнӑхтару.

## *19-мӗш урок.* Тӳрӗ пуплевлӗ предложенисем (12§)

**Урок тӗллевӗсем:** 1. Тӳрӗ пуплевлӗ предложенисене вӗрентесси. 2. Ачасене тӳрӗ пуплевлӗ предложенисемпе пӗлсе усӑ курма хӑнӑхтарасси.

**Урок тӗсӗ: содержани тӑрӑх** – синтаксис урокӗ; **тӗллевне кура** – çӗнӗ темӑна вӗрентмелли урок; **формине кура** – яланхи йӗркепе ирттерекен урок.

**Вӗрентӳ меслечӗсем:** учитель ӑнлантарӑвӗ, калаçу.

### Урок юхӑмӗ

**I. Килти ӗçе тӗрӗслени.**

1. 11§; 111-мӗш хӑнӑхтару.

2. Сӑмах диктанчӗ: *хӑш-пӗр, ӑс-тӑн, пит-куç, тӑвайкки, карçинкка, вӑрттӑн, ӑшшӑн, симӗссӗн, кӑмӑллӑн.*

**II. Çӗнӗ темӑна вӗрентни.**

1. Чӗлхе материалне тишкерни. Ачасем икӗ предложение танлаштараççӗ: пӗринче И.Я. Яковлев каланӑ сӑмахсене ним улӑштармасӑр панӑ, тепринче – улӑштарнӑ. Учитель ертсе пынипе ачасем ыйтусене хуравлаççӗ, пӗтӗмлетӳ тӑваççӗ.

2. Теори материалӗпе паллаштарни.

**III. Вӗреннине çирӗплетни.**

1. Хӑнӑхтарусемпе ӗçлени.

113–114-мӗш хӑнӑхтарусем. Ачасем тӳрӗ пуплевпе автор сӑмахӗсене уйӑрма, автор сӑмахӗсене хӑвӑртрах тата сасса антарса вулама вӗренеççӗ; тӳрӗ пуплев предложенире хӑш вырӑнта тӑнине, чарӑну палли лартмалли йӗркене сӑнаççӗ.

115–116, 118-мĕш хăнăхтарусем. Ачасем тӳрĕ пуплевлĕ предложенисенче чарăну палли лартмалли правилăсене çирĕплетсе хăвараççĕ: тӳрĕ пуплеве кавычкăна илесси, пысăк сас паллинчен пуçласа çырасси, автор сăмахĕсене вырăнне кура пысăкран е пĕчĕкрен пуçласа çырасси.

2. Çыхăнуллă пуплеве аталантарни.

117, 119-мĕш хăнăхтарусене тунă май текста ят парасси, текстăн планне тăвасси, темипе тĕп шухăшне палăртасси. 119-мĕш хăнăхтарăва çырмасăр тумалла.

**IV. Киле ĕç пани.**

12§; 120-мĕш хăнăхтару.

## *20-мĕш урок.* Тӳрĕ пуплевлĕ предложенисем

**Урок тĕллевĕсем:** 1. Тӳрĕ пуплевлĕ предложенисем çинчен мĕн пĕлнине çирĕплетесси. 2. Ачасене тӳрĕ пуплевлĕ предложенисемпе усă курма, вĕсенче чарăну паллисене тĕрĕс лартма хăнăхтарасси.

**Урок тĕсĕ: содержани тăрăх** – синтаксис урокĕ; **тĕллевне кура** – çирĕплетӳ урокĕ; **формине кура** – яланхи йĕркепе ирттерекен урок.

**Вĕрентӳ меслечĕсем:** учитель ăнлантарăвĕ, калаçу.

### Урок юхăмĕ

**I. Килти ĕçе тĕрĕслени.**

1. 12§; 120-мĕш хăнăхтару.

2. Ыйтусене хуравлани.

– Мĕнле сăмахсене тӳрĕ пуплев теççĕ?

– Тӳрĕ пуплевпе юнашар мĕнле сăмахсем пулаççĕ?

– Тӳрĕ пуплев предложенире хăш вырăнта пулма пултарать?

– Тӳрĕ пуплеве мĕнле чарăну паллисем лартса уйăрмалла? Автор сăмахĕсене мĕнле çырмалла?

**II. Вĕреннине çирĕплетни.**

1. Теори материалне (54 с.) вуласа ăнланни.

Ачасем диалог уйрăмлăхĕсемпе паллашаççĕ.

2. Хăнăхтарусемпе ĕçлени.

121, 124-мĕш хăнăхтарусем. Ачасем тӳрĕ пуплевлĕ предложенисем çинчен мĕн пĕлнине çирĕплетеççĕ.

125-мĕш хăнăхтару. Вĕренекенсем ӳкерчĕкри ачасем ăçта пулнине тата мĕн-мĕн тунине асăрхаççĕ, кашнин кăмăлĕ епле пулни çинчен калаçаççĕ, калав ятне тупаççĕ, мĕн хыççăн мĕн каламаллине, мĕнрен пуçласа мĕнпе вĕçлемеллине палăртаççĕ, ун хыççăн ӳкерчĕк тăрăх сăмах вĕççĕн каласа параççĕ.

**III. Киле ĕç пани.**

12§; 127-мĕш хăнăхтару.

## *21-мĕш урок.* Текст тĕсĕсем. Сăнлав. Калав. Ăслав (13§)

**Урок тĕллевĕсем:** 1. Текст тĕсĕсемпе паллаштарасси. 2. Ачасене калав, сăнлав, ăслав йĕркелеме хăнăхтарасси.

**Урок тĕсĕ: тĕллевне кура** – пуплеве аталантармалли урок; **формине кура** – яланхи йĕркепе ирттерекен урок.

**Вĕрентӳ меслечĕсем:** учитель ăнлантарăвĕ, калаçу.

### Урок юхăмĕ

**I. Килти ĕçе тĕрĕслени.**

12§; 127-мĕш хăнăхтару.

**II. Çĕнĕ темăна вĕрентни.**

1. Умĕн калани.

Пуçламăш классенче ачасем ытларах калуллă сочиненисемпе изложенисем çырнă, калава ансат сăнлав тата ăслав элеменчĕсене кĕртме вĕреннĕ. Сăмахпа каласа ӳкерчĕксем тума (лайăх пĕлекен япаласене, çут çанталăк пулăмĕсене, эteме сăнлама т.ыт.те) ансат шайра хăнăхса пынă. Çавăнпа та сăнлав, калав, ăслав мелĕсем ачасемшĕн çĕнех мар. Палăртнă ыйтусене вĕрентнĕ чух çакна шута илмелле.

2. Текстсене тишкерни, пĕтĕмлетӳ туни.

Ачасем учитель пулăшнипе кĕнекери виçĕ текста танлаштараççĕ, вĕсен уйрăмлăхĕсене асăрхама тăрăшаççĕ: пĕринче чакак мĕнлине сăнласа панă, вăл сăнлавлă текст пулать; тепринче чакак мĕн тунине каласа панă, вăл калав пулать; виççĕмĕшĕнче чакак мĕншĕн усăллине çырса панă, çавăнпа вăл ăслав пулать. Кĕнекери материала (56 с.) вуланă хыççăн ачасем пĕтĕмлетӳ тăваççĕ.

Сăнлава пĕр сăн ÿкерчĕке кĕртме май пуррине те палăртаççĕ ачасем, мĕншĕн тесен сăнлакан япаласем е пулăмсем пĕр конкретлă самантпа (вăхăтпа) çыхăннă.

**III. Вĕреннине çирĕплетни.**

Хăнăхтарусемпе ĕçлени.

128-мĕш хăнăхтару. Ачасем текстсене танлаштарса вĕсен тĕсне калаççĕ, уйрăмлăхĕсене палăртаççĕ.

129-мĕш хăнăхтару. Темăсене танлаштарса пăхнă хыççăн ачасем пĕрремĕш темăна сăнлав мелĕпе, иккĕмĕшне ăслав мелĕпе, виççĕмĕшне калав мелĕпе çырса пани вырăнлăрах пулнине палăртаççĕ.

130-мĕш хăнăхтару. Ачасем текст тĕсĕ тата текст теми мĕнпе уйрăлса тăнине сăнаççĕ, унтан пĕтĕмлетÿ тăваççĕ: текст тĕсĕ пĕрешкел пулма пултарать, анчах вĕсен теми тĕрлĕрен пулать.

**IV. Киле ĕç пани.**

13§; 129-мĕш хăнăхтару.

## *22-мĕш урок.* Сăнлав, калав, ăслав (13§)

**Урок тĕллевĕсем:** 1. Сăнлав, ăслав, калав çинчен мĕн пĕлнине çирĕплетесси. 2. Ачасене калав, сăнлав, ăслав йĕркелеме хăнăхтарасси.

**Урок тĕсĕ: тĕллевне кура** – пуплеве аталантармалли урок; **формине кура** – яланхи йĕркепе ирттерекен урок.

**Вĕрентÿ меслечĕсем:** учитель ăнлантарăвĕ, калаçу.

### Урок юхăмĕ

**I. Килти ĕçе тĕрĕслени.**

13§; 129-мĕш хăнăхтару.

**II. Пуплеве аталантармалли материалпа ĕçлени.**

1. Хăнăхтарусемпе ĕçлени.

132–134-мĕш хăнăхтарусем. Ачасем текст тĕсĕсене уйăрма вĕренеççĕ.

2. Сăнлав, ăслав, калав йĕркелени. Ачасем хăнăхтарусенчи тĕслĕхсемпе тата ÿкерчĕксемпе усă курса ĕçлеççĕ.

**III. Киле ĕç пани.**

Ыйтусемпе ĕçсем (60 с.).

# ФОНЕТИКА. ОРФОЭПИ. ГРАФИКА. ОРФОГРАФИ

## *23-мĕш урок.* Алфавит. Вĕреннине аса илни (14§)

**Урок тĕллевĕсем:** 1. Алфавита вĕреннине аса илесси. 2. Сасăсемпе, сас паллисемпе пуплевре (калаçура, çырура) тĕрĕс усă курма хăнăхтарасси. 3. Алфавитпа тĕрĕс усă курни кирек мĕнле профессипе ĕçлекен çынна та кирлĕ пулнине ăнланса илме пулăшасси.

**Урок тĕсĕ: содержани тăрăх** – фонетика урокĕ; **тĕллевне кура** – аса илӳ урокĕ; **формине кура** – яланхи йĕркепе ирттерекен урок.

**Вĕрентӳ меслечĕсем:** учитель ăнлантарăвĕ, калаçу.

### Урок юхăмĕ

**I. Вĕреннине аса илни.**

1. Умĕн калани.

Учитель «фонетика», «орфоэпи», «орфографи», «графика» терминсен пĕлтерĕшĕсене ăнлантарса парать.

2. Хăнăхтарусемпе ĕçлени.

135-мĕш хăнăхтару. Пĕр ача алфавита вуласа парать. Ун хыççăн ачасем алфавита пăхмасăр каласа тухаççĕ, хăнăхтару хыççăн панă ыйтусене хуравлаççĕ.

138-мĕш хăнăхтару. Ачасенчен пĕри малтан чăваш писателĕсемпе поэчĕсен хушамачĕсене вулать, унтан вĕсене алфавит йĕркипе каласа парать. Кайран текстра асăннă çыравçăсем çинчен калаçу ирттермелле.

139–141 хăнăхтарусем. Ачасем сасăпа сас паллисем çинчен мĕн пĕлнине аса илеççĕ. Учитель ачасене сасăпа сас паллисене уйăрма пĕлнине пăтраштарасран асăрхаттарать.

142–143-мĕш хăнăхтарусем. Ачасем *е, ё, ю, я* сас паллисем хăш-пĕр чухне икĕ сасса пĕлтернине аса илеççĕ.

**II. Киле ĕç пани.**

137, 144–145-мĕш хăнăхтарусем.

## *24-мĕш урок.* Уçă сасăсем, вĕсен мăшăрлăхĕ (15§)

**Урок тĕллевĕсем:** 1. Уçă сасăсен мăшăрлăхне вĕрентесси. 2. Уçă сасăсемпе, сас паллисемпе пуплевре (калаçура, çырура) тĕрĕс усă курма хăнăхтарасси.

**Урок тĕсĕ: содержани тăрăх** – фонетика урокĕ; **тĕллевне кура** – çĕнĕ темăна вĕрентмелли урок; **формине кура** – яланхи йĕркепе ирттерекен урок.

**Вĕрентÿ меслечĕсем:** сăнав-тĕпчев меслечĕ, учитель ăнлантарăвĕ, калаçу.

### Урок юхăмĕ

**I. Килти ĕçе тĕрĕслени.**

137, 144–145-мĕш хăнăхтарусем.

**II. Çĕнĕ темăна вĕрентни.**

1. 146-мĕш хăнăхтарупа ĕçлени.

Ачасем пуплеври сасăсем икĕ ушкăна (уçă сасăсемпе хупă сасăсем) уйрăлнине аса илсе çирĕплетеççĕ.

2. Таблицăпа ĕçлени. Уçă сасăсен сăмахри вырăнне аса илеççĕ *(а* сасă сăмах пуçламăшĕнче, варринче тата вĕçĕнче).

**А** – арман, лаша
**Ă** – ăман, вăтăр, пулă
**Ĕ** – ĕлĕк, кĕпе, тенкĕ
**У** – упа, сурăх, пăру
**Ы** – ыран, пысăк
**И** – иккĕ, пиллĕк, шăши
**Э** – этем

3. 147–148-мĕш хăнăхтарусене туни. Учитель ачасене уçă сасăсем мăшăрлă пулнине *(а-э, ă-ĕ, ы-и, у-ÿ), о* уçă сасă вырăс чĕлхинчен йышăннă сăмахсенче çеç тĕл пулнине *(отряд, поход, кино)* ăнлантарать.

**III. Вĕреннине çирĕплетни.**

Хăнăхтарусемпе ĕçлени.

149-мĕш хăнăхтару. Ачасем хытă уçă сасăсене çемçисемпе ылмаштарса пулнă çĕнĕ сăмахсемпе паллашаççĕ.

152-мĕш хăнăхтару (çырмасăр). *Йĕлме* сăмах ытлашши, мĕншĕн тесен ыттисем пурте хытă сăмахсем.

**IV. Киле ĕç пани.**

15§; 150–151-мĕш хăнăхтарусем. «Кĕрхи хурăнсем» сăвва пăхмасăр калама вĕренмелле.

## *25-мӗш урок.* Уҫӑ сасӑсем, вӗсен мӑшӑрлӑхӗ

**Урок тӗллевӗсем:** 1. Уҫӑ сасӑсен мӑшӑрлӑхӗ ҫинчен мӗн пӗлнине ҫирӗплетесси. 2. Уҫӑ сасӑсемпе, сас паллисемпе пуплевре (калаҫура, ҫырура) тӗрӗс усӑ курма хӑнӑхтарасси.

**Урок тӗсӗ: содержани тӑрӑх** – фонетика урокӗ; **тӗллевне кура** – ҫирӗплетӳ урокӗ; **формине кура** – яланхи йӗркепе ирттерекен урок.

**Вӗрентӳ меслечӗсем:** учитель ӑнлантарӑвӗ, калаҫу.

### Урок юхӑмӗ

**I. Килти ӗҫе тӗрӗслени.**

1. 15§; 150–151-мӗш хӑнӑхтарусем.

2. Сӑмах диктанчӗ (вырӑс чӗлхинчен йышӑннӑ сӑмахсенче *о* сас палли ҫырасси): *общество, кино, домино, отметка, одеколон, отчет.*

**II. Вӗреннӗ материала ҫирӗплетни.**

1. Пуплеве аталантарни.

Вӗренекенсем калава (153-мӗш хӑнӑхтару) вулаҫҫӗ, ноябрьти ҫанталӑк ҫинчен каласа параҫҫӗ.

2. Хӑнӑхтарусемпе ӗҫлени.

154–155-мӗш хӑнӑхтарусем. *Ӑ, ӗ* сас паллисене тӗрӗс ҫырманни сӑмахсене ӑнланма чӑрмантарнине, хӑш-пӗр чухне сас паллисен ылмашӑвӗ *(а, е – ӑ, ӗ)* тӗрлӗ пӗлтерӗшлӗ сӑмахсем тунине ҫирӗплетсе хӑвармалла.

156-мӗш хӑнӑхтару. Панӑ сӑмахсенчи *ӑ, ӗ* сасӑсене тури тата хутӑш диалектсенче тутана малалла тӑсса *(ӑє, ӗє)* калаҫҫӗ. Унсӑр пуҫне хӑнӑхтаруri ҫемҫе сӑмахсенчи *т, п, к* хупӑ сасӑсене, ҫемҫе уҫӑ сасӑсемпе юнашар пулсан та, анатри диалектӑн калаҫӑвӗсенче хытӑ калаҫҫӗ. Ҫак уйрӑмлӑхсене, паллах, асӑннӑ диалектсен условийӗсенче ӗҫлекен учительсен асра тытмалла.

157-мӗш хӑнӑхтару. Учитель ачасене сӑмахсене вулаттарать (вӗсем пурте *е* сас паллипе пуҫланаҫҫӗ), ачасем тунӑ йӑнӑшсене тӳрлетет *(епле – йэпле, ерипен – йэрипен* т.ыт.те), мӗнле вуламаллине асӑрхаттарса пырать.

**III. Киле ӗҫ пани.**

15§; 158-мӗш хӑнӑхтару.

## *26-мĕш урок.* Уçă сасăсене палăртакан сас паллисем (16§)

**Урок тĕллевĕсем:** 1. Уçă сасăсене палăртакан сас паллисемпе паллаштарасси. 2. Уçă сасăсене палăртакан сас паллисемпе пуплевре (калаçура, çырура) тĕрĕс усă курма хăнăхтарасси.

**Урок тĕсĕ: содержани тăрăх** – фонетика урокĕ; **тĕллевне кура** – çĕнĕ темăна вĕрентмелли урок; **формине кура** – яланхи йĕркепе ирттерекен урок.

**Вĕрентӳ меслечĕсем:** сăнав-тĕпчев меслечĕ, учитель ăнлантарăвĕ, калаçу.

**Словарь ĕçĕ:** *юрă, юхать; япала, ясмăк; ешĕл, епле.*

### Урок юхăмĕ

**I. Килти ĕçе тĕрĕслени.**

15§; 158-мĕш хăнăхтару.

**II. Çĕнĕ темăна вĕрентни.**

1. Сăмах диктанчĕ: *арман, лаша, пӳлĕм, пулă, пăру, ĕлĕк, сĕлĕ.* Вĕренекенсем сăмахсенче уçă сас паллисене тупаççĕ, вĕсем сăмахăн хăш позицийĕсенче (сăмах пуçламăшĕнче, варринче тата вĕçĕнче) тăнине палăртаççĕ.

2. Тĕслĕхсем тупса çырни. Ачасем уçă сас паллисемлĕ сăмахсем тупса çыраççĕ, вĕсем сăмахăн хăш позицийĕнче тăнине палăртаççĕ.

3. Теори материалĕпе паллаштарни, пĕтĕмлетӳ туни.

– Алфавитра 9 уçă сас палли *(а, ă, е, ĕ, у, ӳ, ы, и, э).*

– Сас паллисенчен ытларахăшне сăмахăн виçĕ позицийĕнче те çыраççĕ; *э* сас паллине сăмах пуçламăшĕнче çеç, *ы* сас паллине сăмах пуçламăшĕпе варринче кăна çыраççĕ.

– Икĕ сасса пĕлтерекен сас паллисем – *е, ю, я: епле [йэпле], юмах [йумах], япала [йапала].*

– *Ю, я* сас паллисене сăмах варринче *у* тата *а* сасăсем умĕнчи хупă сасăсем çемçе чухне те çыраççĕ: *Люся [Л'уçça], выля [выл'а].*

– Чăваш çырăвĕнче *э* сасса икĕ сас паллипе палăртаççĕ: сăмах пуçламăшĕнче – *э* сас паллипе *(этем, эрне);* сăмах варринче тата вĕçĕнче – *е* сас паллипе *(тепĕр, кĕнеке).*

**III. Вĕреннине çирĕплетни.**

1. Сăмах диктанчĕ: *юрă, юхать; япала, ясмăк; ешĕл, епле.*

2. Ыйтусене хуравлани.

– *Е, ю, я* сас паллисем мĕнле сасăсене пĕлтереççĕ?

– Вăл сас паллисем сăмахри хăш позицире тăраççĕ?

3. 159-мĕш хăнăхтарăва çырса туни.

**IV. Киле ĕç пани.**

16§; 160–161-мĕш хăнăхтарусем.

## *27-мĕш урок.* Сăмахри уçă сасăсен килĕшĕвĕ (17§)

**Урок тĕллевĕсем:** 1. Сăмахри уçă сасăсен килĕшĕвне вĕрентесси. 2. Сăмахри уçă сасăсен килĕшĕвĕпе пуплевре (калаçура, çырура) тĕрĕс усă курма хăнăхтарасси.

**Урок тĕсĕ: содержани тăрăх** – фонетика урокĕ; **тĕллевне кура** – çĕнĕ темăна вĕрентмелли урок; **формине кура** – яланхи йĕркепе ирттерекен урок.

**Вĕрентӳ меслечĕсем:** сăнав-тĕпчев меслечĕ, учитель ăнлантарăвĕ, калаçу.

**Словарь ĕçĕ:** *путек, пукане, тиха, тăри, кавле.*

### Урок юхăмĕ

**I. Килти ĕçе тĕрĕслени.**

Килти ĕçе икĕ майпа тĕрĕслеме пулать.

1) Уйрăм вĕренекенсем сăмахсене вулаççĕ те вĕсенче миçе сасăпа сас палли хисепне калаççĕ, ăнлантараççĕ.

2) Доска патĕнче икĕ вĕренекен ĕçлет: вĕсенчен пĕри сасăсемпе сас паллисен шучĕ пĕрешкел сăмахсене, тепри тан маррисене çырать, кашниех ăнлантарса парать.

**II. Çĕнĕ темăна вĕрентни.**

1. 162-мĕш хăнăхтарăва тишкерни. Вĕренекенсем хытă тата çемçе уçă сасăсене палăртаççĕ.

2. Теори материалне ăнлантарни. Учитель пуплеври уçă сасăсем хытăлăхпа çемçелĕх тĕлĕшĕнчен килĕшсе тăнине ăнлантарать, çав килĕшĕве чĕлхе ăслăлăхĕнче «сингармонизм» терминпа палăртнине калать. Сăмахĕ ку чăвашла куçарсан *уçă сасăсен килĕшĕвĕ* тенине пĕлтерет.

3. Сăмах диктанчĕ çырни.

Ачасем *путек, пукане, тиха, тăри, кавле* сăмахсене çыраççĕ, мĕнле çырнине тĕрĕслеççĕ. Учитель ертсе пынипе сăмахри уçă сасăсем килĕшсе тăнипе тăманнине палăртаççĕ. Уçă сасăсен килĕшĕвĕ пăсăлнă сăмахсене «хутăш сăмахсем» теççĕ.

**III. Вĕреннине çирĕплетни.**

1. Хăнăхтарусемпе ĕçлени.

163–165-мĕш хăнăхтарусем. Ачасем хытă, çемçе тата хутăш сăмахсене палăртаççĕ, ыйтусене туллин хуравлаççĕ. Асăннă хăнăхтарусем вĕренекенсен пуплевне аталантарма, вĕсен лексикине пуянлатма кирлĕ.

2. Кĕнекери правилăсемпе паллаштарни.

Пĕр-пĕр вĕренекен сасăпа вулать тата каласа парать.

**IV. Киле ĕç пани.**

17§; 166–167-мĕш хăнăхтарусем. Хăнăхтарусем вĕçĕнчи хушма ĕçсене мĕнле тумаллине ăнлантармалла.

## *28-мĕш урок.* Сăмахри уçă сасăсен килĕшĕвĕ

**Урок тĕллевĕсем:** 1. Сăмахри уçă сасăсен килĕшĕвне ăнлантарасси; *ль, нь, ть, нч, лч, лç, л, н* сас паллисене тĕрĕс çырма вĕрентесси. 2. Сăмахри уçă сасăсен (сас паллисен) килĕшĕвĕпе пуплевре (калаçура, çырура) тĕрĕс усă курма хăнăхтарасси.

**Урок тĕсĕ: содержани тăрăх** – орфографи урокĕ; **тĕллевне кура** – çĕнĕ темăна вĕрентмелли урок; **формине кура** – яланхи йĕркепе ирттерекен урок.

**Вĕрентӳ меслечĕсем:** сăнав-тĕпчев меслечĕ, учитель ăнлантарăвĕ, калаçу.

**Словарь ĕçĕ:** *çемье, кĕсье, статья, тухья; укăлча, хупăлча; çулçă, чулçă.*

### Урок юхăмĕ

**I. Килти ĕçе тĕрĕслени.**

1. 17§, 166–167-мĕш хăнăхтарусем.

2. Теори материалне класран пĕтĕмĕшле ыйтса тĕрĕслени.

– Мĕнле сăмахсене хытă сăмахсем теççĕ?

– Мĕнлисене çемçе тата хутăш сăмахсем теççĕ?

– Ял таврашĕнчи çăл куçсен ячĕсене мĕнлисене пĕлетĕр?

– Вăрманти чĕр чунсен тата йывăçсен ячĕсене тата мĕнлисене пĕлетĕр?

**II. Ҫӗнӗ темӑна вӗрентни.**

1. Чӗлхе материалне тишкерни.

*Ҫунат – ҫунать, турат – турать* тата ытти сӑмахсене ачасем танлаштараҫҫӗ, сӑмах вӗҫӗнчи хупӑ сасӑсене, вӗсем сӑмахсен пӗлтерӗшне улӑштарнине палӑртаҫҫӗ.

2. Хӑнӑхтарусемпе ӗҫлени.

168-мӗш хӑнӑхтару. Учитель *ль, нь, ть* сас паллисене ҫырмалли правилӑна ӑнлантарать, ӑна тӗслӗхсемпе ҫирӗплетет.

169–170, 172–173-мӗш хӑнӑхтарусем (ҫырмасӑр). 173-мӗш хӑнӑхтарӑва тунӑ май хытӑ уҫӑ сасӑллӑ сӑмахсенче *л, н* хупӑ сасӑсем, *ҫ, ч* умӗн калаҫура ҫемҫен илтӗнеҫҫӗ пулсан та вӗсем хыҫҫӑн *ь* ҫырмалла маррине ӑнлантармалла *(мунча, калча, ҫулҫӑ),* ҫавӑн йышши сӑмахсене сасӑ тӗлӗшӗнчен тӗрӗс калама вӗрентмелле.

**III. Вӗреннине ҫирӗплетни.**

1. 174-мӗш хӑнӑхтару.

– Ҫемҫелӗх палли (ь) ҫырмалла мар сӑмахсене тата мӗнлисене пӗлетӗр?

2. Сӑмах диктанчӗ: *ҫемье, кӗсье, статья, тухья; укӑлча, хупӑлча; ҫулҫӑ, чулҫӑ.*

**IV. Киле ӗҫ пани.**

17§, 171-мӗш хӑнӑхтару.

## *29-мӗш урок.* Сӑмахри уҫӑ сасӑсен килӗшӗвӗ

**Урок тӗллевӗсем:** 1. Сӑмахри уҫӑ сасӑсен килӗшӗвӗ аффикссенче мӗнле палӑрни ҫинчен вӗрентесси. 2. Сӑмахри уҫӑ сасӑсен (сас паллисен) килӗшӗвӗпе пуплевре (калаҫура, ҫырура) тӗрӗс усӑ курма хӑнӑхтарасси.

**Урок тӗсӗ: содержани тӑрӑх** – фонетика урокӗ; **тӗллевне кура** – ҫӗнӗ темӑна вӗрентмелли урок; **формине кура** – яланхи йӗркепе ирттерекен урок.

**Вӗрентӳ меслечӗсем:** сӑнав-тӗпчев меслечӗ, учитель ӑнлантарӑвӗ, калаҫу.

### Урок юхӑмӗ

**I. Килти ӗҫе тӗрӗслени.**

1. 17§, 171-мӗш хӑнӑхтару.

2. Сӑмах майлашӑвӗсем туни.

Доска çине çак сăмахсене çырнă: *пыл...чăк, мун...ча, çул...çă, кĕс...е, мăкăл...* Тĕслĕх: *мунча – ăшă мунча, çĕнĕ мунча; калча – симĕс калча, ешĕл калча, лутра калча.*

Кунта çемçелĕх палли *(ь)* çырмаллипе çырмалла марри-не асра тытмалла.

**II. Çĕнĕ материала вĕрентни.**

1. 175-мĕш хăнăхтарăва тишкерни.

2. Теори материалĕпе (73 с.) паллаштарни. Учитель чăваш чĕлхинче мĕнле-мĕнле аффикссем пуррине, аффикс-сем хытă тата çемçе уçă сасăллă (икĕ вариантлă) пулнине, аффикссене уйрăм çырнă чухне вĕсен çемçе вариантне скобкăра палăртнине ăнлантарса парать, тĕслĕхсемпе çирĕплетет.

**III. Вĕреннине çирĕплетни.**

1. Хăнăхтарусемпе ĕçлени.

176-мĕш хăнăхтару. Ачасем малтанхи ултă сăмахра аффикссене уйăраççĕ, тĕслĕхрен: *шкул-а, кил-е* т.ыт.те.

177-мĕш хăнăхтару (çырса туни). Тĕслĕхрен: *юман – юманлăх, юманлăха, юманлăхра.*

2. Ыйтусене хуравлани.

– Аффикссем мĕнле уçă сасăллă пулаççĕ?

– Хытă сăмах çумне мĕнле уçă сасăллă аффикс хушăнать?

– Çемçе сăмах çумне мĕнле уçă сасăллă аффикс хушăнать?

– *Пичче, шăллăм, инке, аппа, йăмăк* сăмахсене пĕрлелĕх падежĕнче калăр. Аффиксăн хăш варианчĕ хушăнчĕ? Мĕншĕн?

**IV. Киле ĕç пани.**

17§; 178-мĕш хăнăхтару.

## *30-мĕш урок.* Сăмахри уçă сасăсен килĕшĕвĕ

**Урок тĕллевĕсем:** 1. Сăмахри уçă сасăсен килĕшĕвне пăсакан аффикссем çинчен вĕрентесси. 2. Сăмахри уçă сасăсен килĕшĕвне пуплевре тытса пыма хăнăхтарасси.

**Урок тĕсĕ: содержани тăрăх** – фонетика урокĕ; **тĕллевне кура** – çĕнĕ темăна вĕрентмелли урок; **формине кура** – яланхи йĕркепе ирттерекен урок.

**Вĕрентў меслечĕсемпе ĕç хатĕрĕсем:** сăнав-тĕпчев меслечĕ, учитель ăнлантарăвĕ, калаçу, 182-мĕш хăнăхтару условийĕпе çыхăннă ӳкерчĕк.

## Урок юхăмĕ

**I. Килти ĕçе тĕрĕслени.**

178-мĕш хăнăхтару.

**II. Çĕнĕ темăна вĕрентни.**

1. 180-мĕш хăнăхтарупа ĕçлени. Ачасем тĕслĕхсене вулаççĕ, ыйтусене хуравлаççĕ.

– Сăмахсем çумне мĕнле аффикссем хушăннă?

– Хăш сăмахсенче сингармонизм (уçă сасăсен килĕшĕвĕ) пăсăлнă, хăшĕсенче пăсăлман?

– Сингармонизм мĕншĕн пăсăлнă?

2. Сăмах диктанчĕ: *хуласем, кӳлĕсем, çырмасем; иккĕмĕш, вуннăмĕш; тухиччен, киличчен, каличчен; хураскер, хĕрлĕскер* сăмахсене икĕ юпа туса çырмалла (пĕрремĕшĕнче сингармонизм пăсăлман сăмахсене, иккĕмĕшĕнче – сингармонизм пăсăлнă сăмахсене).

– Хăш сăмахсенче сингармонизм пăсăлнă, хăшĕсенче пăсăлман? Мĕншĕн?

3. Правилăсемпе (74 с.) ĕçлени. Ачасем правилăсене, тĕслĕхсене вулаççĕ, çĕнĕ сăмахсем тупаççĕ.

4. 181-мĕш хăнăхтару тексчĕпе ĕçлени. Ачасем палăртнă сăмахсен *(улăхпа, пăхакан, чечеке, чарăнса, тытса)* аффиксĕсене тупаççĕ, вĕсем сингармонизма пăхăнни е пăхăнманни çинчен ăнлантараççĕ, текст тăрăх калаçаççĕ.

– Калава мĕнле ят пама пулать?

– Эсир ку чечеке курнă-и?

– Сирĕн ялта ку чечеке мĕнле калаççĕ?

– Эсир мĕнле чечексене пĕлетĕр? Вĕсем çинчен каласа парăр.

**III. Вĕреннине çирĕплетни.**

1. Ӳкерчĕкпе ĕçлени (182-мĕш хăнăхтару).

– Ӳкерчĕкре камсене ӳкернĕ?

– Ачасем мĕн тăваççĕ? Вĕсем миçен?

– Ачасене ят парса тухăр.

– Ӳкерчĕкри япаласен ячĕсене калăр, вĕсене çырса тухăр.

– Çав сăмахсем уçă сасăсен хытăлăхĕпе çемçелĕхĕ тĕлĕшĕнчен килĕшсе тăраççĕ-и?

2. Ӳкерчĕк айĕнчи ыйтусене хуравлани.

**IV. Киле ĕç пани.**

Правилăсем (74 с.), 183-мĕш хăнăхтару.

## *31-мĕш урок.* Чăваш сăмахĕсенче икĕ уçă сасă юнашар тăма пултарайманни (18§)

**Урок тĕллевĕсем:** 1. Чăваш сăмахĕсенче икĕ уçă сасă юнашар тăма пултарайманнине вĕрентесси. 2. Чăваш сăмахĕсенче икĕ уçă сасă юнашар тăма пултарайманнине шута илсе пуплеве (калаçăва, çырăва) тĕрĕс йĕркелеме хăнăхтарасси.

**Урок тĕсĕ: содержани тăрăх** – фонетика урокĕ; **тĕллевне кура** – çĕнĕ темăна вĕрентмелли урок; **формине кура** – яланхи йĕркепе irttерекен урок.

**Вĕрентӳ меслечĕсем:** сăнав-тĕпчев меслечĕ, учитель ăнлантарăвĕ, калаçу.

### Урок юхăмĕ

**I. Килти ĕçе тĕрĕслени.**

1. 183-мĕш хăнăхтару, правилăсем (74 с.).

2. Сăмах диктанчĕ: *асатте, асанне, анне, атте, мăн акка, йăмăк, шăллăм, кукка.*

3. Ыйтусене хуравлани.

– Çырнă сăмахсене пĕтĕмлетсе мĕнле ят пама пулать? (Тăванлăх сăмахĕсем.)

– Тăванлăх сăмахĕсем хушшинче уйрăмлăх пур-и? Вăл мĕнле уйрăмлăх?

– Эсир тăванлăха пĕлтерекен тата мĕнле сăмахсене пĕлетĕр?

**II. Çĕнĕ темăна вĕрентни.**

1. 184-мĕш хăнăхтарăва туни (малтан сăмахпа каласа, кайран – çырса).

2. Сăмах диктанчĕ çырни.

Ачасем *вула, ĕçле, тĕпче, хупла* сăмахсем çумне *-акан(-екен)* аффикс хушса çыраççĕ, мĕнле çырмаллине ăнлантарса параççĕ. Унтан *ача, улма, купăста, ĕне* сăмахсем çумне пару падежĕн аффиксне *-а(-е)* хушса çырни.

3. Теори материалĕпе паллаштарни.

18-мĕш параграфăн пĕрремĕш пайне (76 с.) вĕренекенсем вулаççĕ, тĕп шухăшне тĕслĕхсемпе çирĕплетеççĕ.

4. 185-мĕш хăнăхтарури тĕслĕхсене тишкерни.

Вĕренекенсем сăмахсене вулаççĕ, вырăс чĕлхинчен йышăннисене тупса палăртаççĕ. Вĕсен йышĕнче икĕ уçă сасă юнашар тăракан *поэт* сăмах пуррине пĕлтереççĕ.

5. Пĕтĕмлетӳ туни.

Учитель вырăс чĕлхинчен йышăннă икĕ уçă сасăллă сăмахсене мĕнле каламалли-çырмаллине пĕтĕмлетсе калать *(поэт, поэма, аэродром, аэропорт, дуэт, риелтер),* хăшпĕр сăмахăн пĕлтерĕшне ăнлантарса парать: *риелтер* – çурт-йĕр, вăрмансемпе çĕр участокĕсем тата ытти çавăн йышши куçман пурлăх сутас тĕлĕшпе ĕçлекен çын.

**III. Вĕреннине çирĕплетни.**

Сăмах диктанчĕ çырни.

Вĕренекенсем панă сăмахсене аффикссем хушса çыраççĕ: *-а(-е) – ĕне, тиха, сысна*; *-акан(-екен) – шутла, хисепле, висте.*

**IV. Киле ĕç пани.**

18§; *поэт, аэродром, поэма* сăмахсемпе предложенисем туса çырмалла.

## *32-мĕш урок.* Вырăс чĕлхинчен йышăннă сăмахсем сингармонизма пăхăнманни (19§)

**Урок тĕллевĕсем:** 1. Вырăс чĕлхинчен йышăннă сăмахсем сингармонизма пăхăнманнине кăтартасси. 2. Вырăс чĕлхинчен йышăннă сăмахсем сингармонизма пăхăнманнине шута илсе пуплеве (калаçăва, çырăва) тĕрĕс йĕркелеме хăнăхтарасси.

**Урок тĕсĕ: содержани тăрăх** – фонетика урокĕ; **тĕллевне кура** – çĕнĕ темăна вĕрентмелли урок; **формине кура** – яланхи йĕркепе ирттерекен урок.

**Вĕрентӳ меслечĕсем:** сăнав-тĕпчев меслечĕ, учитель ăнлантарăвĕ, калаçу.

**Словарь ĕçĕ:** *депо, глобус, циркуль, ёлка, институт, ковёр, ледокол, магазин, водитель, гектар.*

## Урок юхăмĕ

**I. Килти ĕçе тĕрĕслени.**

**II. Çĕнĕ темăна вĕрентни.**

1. Çĕнĕ темăна ăнлантарни.

Учитель ачасене хытă хупă сасăпа тата *й* сасăпа пĕтекен вырăс чĕлхинчен çырупа йышăннă сăмахсем çумне аффиксăн хытă е çемçе варианчĕ хушăннипе сыхăннă уйрăмлăхсем çинчен каласа парать, тĕслĕхсемпе çирĕплетет: *старик – старикăн, старика; ответ – ответле, номер – номерте; музей – музейăн, музейĕн* т.ыт.те.

2. Хăнăхтарусемпе ĕçлени.

186–187-мĕш хăнăхтарусем. Ачасем вырăс чĕлхинчен çырупа йышăннă сăмахсене асăрхаççĕ, хăш-пĕр сăмахсен *(депо, глобус, циркуль)* пĕлтерĕшĕсене ăнлантарса параççĕ. Сăмахсенчи уçă сасăсем сингармонизма пăхăннипе пăхăнманнине пĕлтереççĕ.

188–189-мĕш хăнăхтарусем.

3. Пĕтĕмлетӳ туни.

**III. Вĕреннине çирĕплетни.**

1. Сăмах диктанчĕ çырни.

1-мĕш вариант: *балет, белок, велосипед, водитель, гектар.*

2-мĕш вариант: *ёлка, институт, ковёр, ледокол, магазин.* Вĕренекенсем сингармонизма пăсакан сăмахсене тупса калаççĕ.

2. *Трактор, директор, фермер, учитель* сăмахсем çумне камăнлăхпа вырăн падежĕсен аффиксĕсене хушса çырни. Ачасем сăмахсене мĕнле çырнине тĕрĕслеççĕ, асăрханă йăнăшсене тӳрлетеççĕ.

**IV. Киле ĕç пани.**

19§; 190–191-мĕш хăнăхтарусем.

## *33-мĕш урок.* Суйлав диктанчĕ

**Урок тĕллевĕсем:** 1. 15–19-мĕш параграфсенчи материала ачасем мĕнле ăнланса ăса хывнине тĕрĕслесси. 2. Сасăсемпе калаçура, сас паллисемпе çырура тĕрĕс усă курма хăнăхса çитнине тĕрĕслесси.

**Урок тĕсĕ: содержани тăрăх** – фонетика урокĕ; **тĕллевне кура** – тĕрĕслев урокĕ; **формине кура** – яланхи йĕркепе ирттерекен урок.

**Вĕрентӳ меслечĕсемпе ĕç хатĕрĕсем:** учитель ăнлантарăвĕ, калаçу, карточкăсем, ыйтусемпе ĕçсем.

## Урок юхăмĕ

**I. Килти ĕçе тĕрĕслени.**

19§; 190–191-мĕш хăнăхтарусем.

**II. Вĕреннĕ материала тĕрĕслени.**

1. Суйлав диктанчĕ çырни. Ачасем малтан *лч, нч, лç* сас паллисемлĕ сăмахсене çырса илеççĕ, унтан кашни вĕренекен 4-шар тĕслĕх вуласа парать, мĕнле çырмаллине ăнлантарать.

1) Аякри уйра кĕр калчисем ем-ешĕл курăнаççĕ. 2) Вăл тĕттĕм чӳречеллĕ мунча умĕнче чарăнчĕ, кăкарнă утне салтса илсе утланчĕ те чĕлпĕр вĕççĕпе хытă çапрĕ. 3) Çăка пулать ялан яштака, çулçи пулать ялан çавракa. 4) Уринче сăран атă кунчи ялтăртатса çеç тăрать. 5) Халь пулăсем вăлча сапас вăхăт çитрĕ, вĕсене пăлхатма юрамасть. 6) Çанталăк ĕнер çав тери ырă пулчĕ. Клуб умне халăх питĕ йышлă пухăнчĕ. 7) Хĕвел пăхмасть, анчах ăшă. 8) – Мунча хутса ярам-ха, – терĕ вăл. 9) Укăлча хапхи уçăлса кайнă та, пĕтĕм выльăх калча çине ыткăннă. 10) Ванюк Кавăрли арча хупăлчине сăрласаларатчĕ. 11) Çумăра пула тусан пылчăкланнă, юхса пуçтарăннă шыв пакăлчак таран. 12) Каçалапа урнă çил лăпланчĕ, хĕвел çутатса ячĕ.

2. Тĕрĕслев ĕçĕ ирттерни. 15–19-мĕш параграфсемпе çыхăннă материала ачасем мĕнле ăнланнине учитель тест мелĕпе тĕрĕслет.

**III. Урока пĕтĕмлетни.**

1. Урока ачасемпе калаçса пĕтĕмлетни. Тĕрĕслев материалĕпе ĕçленĕ май тĕл пулнă йывăрлăхсем çинчен калаçмалла.

2. Ачасен ĕçне хак пани.

## *34-мĕш урок.* Калаçу чĕлхи. Илемлĕ чĕлхе. Официаллă чĕлхе (20§)

**Урок тĕллевĕсем:** 1. Калаçу чĕлхи, илемлĕ, официаллă чĕлхесем çинчен ачасене вĕрентесси. 2. Калаçу чĕлхи, илемлĕ, официаллă чĕлхе уйрăмлăхĕсене шута илсе пуплеве (калаçăва, çырăва) тĕрĕс йĕркелеме хăнăхтарасси.

**Урок тĕсĕ:** **содержани тăрăх** – пуплеве аталантармалли урок; **тĕллевне кура** – çĕнĕ темăна вĕрентмелли урок; **формине кура** – яланхи йĕркепе ирттерекен урок.

**Вĕрентӳ меслечĕсем:** учитель ăнлантарăвĕ, калаçу.

## Урок юхăмĕ

### I. Çĕнĕ темăна вĕрентни.

1. Текстсене тишкерни (192-мĕш хăнăхтару). Малтан виçĕ текстне те умлăн-хыçлăн вуламалла, унтан ыйтусемпе ĕçлемелле.

– Вуланă текстсенчен хăшĕ илемлĕ, сăнарлă? Мĕншĕн? (Ачасем учитель пулăшса пынипе илемлĕ текст паллисене, илемлĕх мелĕсене тупса палăртаççĕ: танлаштарусем *(йĕрмĕшсе çӳрекен ача пек çанталăк, тӳпе пăр татăкĕсенчен тасалнă евĕр уçăлса каять),* эпитетсем *(тачка та йăраланчăк пĕлĕтсем),* чĕрĕ мар япалана чĕрĕ пек кăтартни *(хĕвел ялкăшса кулкаласа илет, пĕлĕтсем персе çитеççĕ).* Вĕсем текста илемлĕ те сăнарлă тăваççĕ. Çавăнпа та пĕрремĕш текста илемлĕ чĕлхепе (стильпе) çырнă тесе калама пулать.

– Иккĕмĕш текста мĕнле манерпе çырнă? (Ахаль калаçу манерĕпе, кулленхи калаçу манерĕпе.) Унта илемлĕх мелĕсем пур-и? Текстра мĕнле сăмахсем ытларах тĕл пулаççĕ? (Ахаль калаçу сăмахĕсем.)

– Виççĕмĕш текстра мĕнле сăмахсем ытларах тĕл пулаççĕ? Кунта официаллă документсенче тăтăш усă куракан сăмахсем *(республика, патшалăх, статус, представитель);* терминсем (*чăваш, вырăс, чĕлхе, правило*) чылай. Ку текстра сăмахсен тӳрĕ пĕлтерĕшĕпе усă курнă. Çавăнпа та ку текста официаллă чĕлхепе (стильпе) çырнă тесе калатпăр.

2. Кĕнекери теори материалĕпе паллаштарни.

### II. Вĕреннине çирĕплетни, пĕтĕмлетни.

1. Хăнăхтарусемпе ĕçлени.

193-мĕш хăнăхтару. Ачасем текста илемлĕ чĕлхепе çырнине палăртаççĕ, текста илемлетекен мелсене тупаççĕ: *тĕнче кулать, пĕлĕтсем капланса килеççĕ* (чĕрĕ мар япаласене чĕрĕ пек кăтартни), *сар хĕр пек кулать, тарăн шухăша путнă çын пек* (танлаштарусем), *шурă та кăтра çӳç* (эпитет).

194-мĕш хăнăхтару – официаллă документ тексчĕ. Ачасем

текст чĕлхине палăртаççĕ: кунта текста илемлетекен мелсем çук, ахаль калаçу сăмахĕсем те тĕл пулмаççĕ.

2. Пĕтĕмлетӳ туни.

196, 200–203-мĕш хăнăхтарусенчи текстсене тĕрлĕ чĕлхепе (стильпе) çырнă, ачасем вĕрентекен пулăшнипе вĕсен уйрăмлăхĕсене тупса палăртаççĕ, пĕтĕмлетӳ тăваççĕ.

**III. Киле ĕç пани.**

20§; 199-мĕш хăнăхтару.

## *35-мĕш* урок. **Текст стилĕсене уйăрма вĕрентесси. Хайлав çырасси**

**Урок тĕллевĕсем:** 1. Текст стилĕсене уйăрма вĕреннине çирĕплетесси. 2. Калаçу чĕлхи, илемлĕ, официаллă чĕлхе уйрăмлăхĕсене шута илсе пуплеве (калаçăва, çырăва) тĕрĕс йĕркелеме хăнăхтарасси.

**Урок тĕсĕ: содержани тăрăх** – пуплеве аталантармалли урок; **тĕллевне кура** – çирĕплетӳ урокĕ; **формине кура** – яланхи йĕркепе ирттерекен урок.

**Вĕрентӳ меслечĕсем:** учитель ăнлантарăвĕ, калаçу.

**Çыхăнуллă пуплеве аталантарассипе çыхăннă ĕç:** «Кăмаша вăрманĕнче» текст тăрăх изложени йĕркелесси.

## Урок юхăмĕ

**I. Килти ĕçе тĕрĕслени.**

20§; 199-мĕш хăнăхтару.

**II. Текста çывăх изложени çырни.**

1. «Кăмаша вăрманĕнче» текстпа паллаштарни. Ачасем малтан текста хăйсем тĕллĕн ăшра, унтан сасăпа вулаççĕ.

2. Текста тишкерни. Ачасем учитель пулăшнипе текст темине тата тĕп шухăшне палăртаççĕ. Тема – чаплă Кăмаша вăрманĕ. Тĕп шухăшĕ – Кăмаша вăрманĕ йывăç-курăкпа пуян, илемлĕ, чаплă.

3. План туни. План тунă хыççăн текст пайĕсене тупса вулаççĕ.

4. Тĕрĕс çырассипе ĕçлени. Ачасем çырма йывăр сăмахсене *(лапсăркка тураттисем, туйăнаççĕ, ула такка, йывăç хуппи, пуç тăрри, хĕрлĕ пĕсехеллĕ, хура шлепкеллĕ)* палăртаççĕ, тĕрĕс çырмалли правилăсене аса илеççĕ.

5. Текста ачасем тепӗр хут вулани.

6. Изложени ҫырни. Ачасем изложение уйрӑм хут ҫине ҫыраҫҫӗ.

**III. Урока пӗтӗмлетни.**

**IV. Киле ӗҫ пани.**

Изложение тетраде куҫарса ҫырмалла.

## *36-мӗш урок.* Хупӑ сасӑсем (21§)

**Урок тӗллевӗсем:** 1. Хупӑ сасӑсене вӗрентесси. 2. Хупӑ сасӑсемпе пуплевре тӗрӗс усӑ курма хӑнӑхтарасси.

**Урок тӗсӗ: содержани тӑрӑх** – фонетика урокӗ; **тӗллевне кура** – ҫӗнӗ темӑна вӗрентмелли урок; **формине кура** – яланхи йӗркепе ирттерекен урок.

**Вӗрентӳ меслечӗсем:** сӑнав-тӗпчев меслечӗ, учитель ӑнлантарӑвӗ, калаҫу.

**Словарь ӗҫӗ:** *учительница, портфель, спектакль, карамель, аэропорт.*

### Урок юхӑмӗ

**I. Ҫӗнӗ темӑна вӗрентни.**

1. Вӗреннине ыйтусем парса аса илни.

– Ачасем, эсир хупӑ сасӑсене пуҫламӑш классенче вӗреннӗ. Хупӑ сасӑсене мӗнлисене пӗлетӗр?

– Хупӑ сасӑсем ҫинчен тата мӗн пӗлетӗр?

2. Теори материалне ӑнлантарни.

Учитель ҫӗнӗ темӑна хӑнӑхтарусем тунӑ май ӑнлантарать.

204-мӗш хӑнӑхтару. Уҫӑ сасӑсене каланӑ чух сывлӑш юхӑмӗ ҫӑвар хӑвӑлӗнчен ирӗккӗн тухать. Хупӑ сасӑсене каланӑ чух апла мар: сывлӑш юхӑмӗ ирӗккӗн тухаймасть. Малалла учитель чӑваш алфавитӗнче хупӑ сасса пӗлтерекен сас палли 22 пулнине ӑнлантарса парать.

205-мӗш хӑнӑхтару. Сӑмахсем умне пӗрер хупӑ сасӑ лартсан сӑмах пӗлтерӗшӗ пачах улшӑннине – ҫӗнӗ сӑмах пулнине – ӑнлантармалла, вӗренекенсене ҫавӑн пек тӗслӗхсем шыраса тупма хушмалла. Тӗслӗхсем: *ула, ӗрле, ан, ус, ут.*

206-мӗш хӑнӑхтару (ҫырмасӑр). Вӗренекенсем хӑнӑхтарури сӑмахсене вулаҫҫӗ, вӗсен пуҫламӑшӗнчи хупӑ сассисене танлаштараҫҫӗ. Учитель вӗренекенсене ҫав са-

сăсене юнашарлатса хытăн та çирĕппĕн калаттарать. Вĕренекенсем асăннă сасăсемпе пуçланакан сăмахсем тупса мĕн ăнланнине çирĕплетеççĕ.

3. Çĕнĕ темăна пĕтĕмлетни.

Учитель пĕтĕмлетет. Хупă сасăсем икĕ ушкăна уйрăлаççĕ – шавлă хупă сасăсем тата янăравлă хупă сасăсем. Вĕсем сăмахăн виçĕ позицийĕнче те (пуçламăшĕнче, варринче тата вĕçĕнче) тĕл пулаççĕ.

**II. Вĕреннине çирĕплетни.**

1. 207-мĕш хăнăхтарăва (84 с.) çырмасăр туни.

2. Сăмах диктанчĕ: *учительница, портфель, спектакль, карамель, аэропорт.*

**III. Киле ĕç пани.**

21§, 207-мĕш хăнăхтару.

## *37-мĕш урок.* Ялан янăравлă хупă сасăсем (22§)

**Урок тĕллевĕсем:** 1. Ялан янăравлă хупă сасăсемпе паллаштарасси. 2. Ялан янăравлă хупă сасăсемпе пуплевре тĕрĕс усă курма хăнăхтарасси.

**Урок тĕсĕ: содержани тăрăх** – фонетика урокĕ; **тĕллевне кура** – çĕнĕ темăна вĕрентмелли урок; **формине кура** – яланхи йĕркепе ирттерекен урок.

**Вĕрентӳ меслечĕсем:** сăнав-тĕпчев меслечĕ, учитель ăнлантарăвĕ, калаçу.

**Словарь ĕçĕ:** *выльăх, мăкăль, вăльт, калча, хупăлча.*

**Çыхăнуллă пуплеве аталантарассипе çыхăннă ĕç:** «Хĕллехи вăрманта» текст тăрăх изложени йĕркелесси.

### Урок юхăмĕ

**I. Килти ĕçе тĕрĕслени.**

21§; 207-мĕш хăнăхтару.

**II. Çĕнĕ темăна вĕрентни.**

1. Чĕлхе материалне тишкерни.

208-мĕш хăнăхтару. Вĕренекенсем сăмахсене вулаççĕ, хупă сасăсем сăмахăн тĕрлĕ позицийĕсенче мĕнле илтĕннине сăнаççĕ, каласа параççĕ.

209-мĕш хăнăхтару. Ачасем *ль, нь* сасăсемлĕ сăмахсене вуласа тишкереççĕ, сасăсен уйрăмлăхĕсене ăнланса илме тăрăшаççĕ.

2. Теори материалне (85 с.) ăнлантарни. Учитель ăнлантарнă хыççăн ачасем тĕслĕхсем тупаççĕ, ялан янăравлă хупă сасăсене палăртаççĕ.

**III. Вĕреннине çирĕплетни.**

Хăнăхтарусемпе ĕçлени.

211-мĕш хăнăхтару. Тупмалли юмахсен тупсăмĕ: *тура – пура, тулă – пулă.*

213-мĕш хăнăхтару. Ачасем ваттисен сăмахĕсенчи ялан янăравлă хупă сасăсене палăртаççĕ, çав сасăсем хыççăнхи хупă сасăсем мĕнле илтĕннине каласа параççĕ. Хăнăхтарăва тунă хыççăн ваттисен сăмахĕсем тупаççĕ.

214-мĕш хăнăхтару.

215-мĕш хăнăхтару. Вĕренекенсем малтан сăвва илемлĕ вуласа параççĕ, унтан ялан янăравлă хупă сасăсемлĕ сăмахсене тупаççĕ: *Натали, сантал, сантали, туянтăм, сан, валли, савăнса, йăл, кулăпа, кайăп, унпа, сукмакпа, мĕн, тери, хитре, юлĕç, тусусем, çил, чупмалли, пур, халь, санăн.*

**IV. Киле ĕç пани.**

22§ (85 с.); 210, 216-мĕш хăнăхтарусем. «Хĕллехи вăрманта» калав тăрăх изложени çырмалла. Учитель ĕçе мĕнле йĕркелемеллине ăнлантарса парать.

## *38-мĕш урок.* Ялан янăравлă хупă сасăсем

**Урок тĕллевĕсем:** 1. Ялан янăравлă хупă сасăсене вĕрентесси. 2. Ялан янăравлă хупă сасăсемпе пуплевре тĕрĕс усă курма хăнăхтарасси.

**Урок тĕсĕ: содержани тăрăх** – фонетика урокĕ; **тĕллевне кура** – çĕнĕ темăна вĕрентмелли урок; **формине кура** – яланхи йĕркепе ирттерекен урок.

**Вĕрентӳ меслечĕсем:** сăнав-тĕпчев меслечĕ, учитель ăнлантарăвĕ, калаçу.

**Словарь ĕçĕ:** *суйлав, урай, каçăрăл, шукăль, нихçан, супăнь, патмар, консерв, мастерской, фестиваль, космодром, ветеран, пельмень, семинар.*

### Урок юхăмĕ

**I. Килти ĕçе тĕрĕслени.**

1. 22§; 210, 216-мĕш хăнăхтарусем.
2. «Хĕллехи вăрманта» изложение тишкерни.

3. Сăмах диктанчĕ çырни.

1-мĕш вариант: *суйлав, урай, каçăрăл, шукăль, нихçан, супăнь, патмар.*

2-мĕш вариант: *консерв, мастерской, фестиваль, космодром, ветеран, пельмень, семинар.*

**II. Çĕнĕ темăна вĕрентни.**

1. 217-мĕш хăнăхтарăва туни. Ачасем сăмахсене тĕрĕс те уçăмлă вулаççĕ, вĕсен вĕçĕнчи сасă мĕнле илтĕннине ăнлантараççĕ, тĕрĕс калама хăнăхаççĕ.

2. Теори материалне (88 с.) ăнлантарни. Ун хыççăн ачасем ялан янăравлă хупă сасăсемлĕ тĕслĕхсем тупаççĕ, тĕрĕс калама вĕренеççĕ.

**III. Вĕреннине çирĕплетни.**

218-мĕш хăнăхтару. Ачасем ют чĕлхерен йышăннă сăмахсене тĕрĕс вулама-калама хăнăхаççĕ.

**IV. Киле ĕç пани.**

22§ (88 с.); 219-мĕш хăнăхтару.

## *39-мĕш урок.* Шавлă хупă сасăсем (23§)

**Урок тĕллевĕсем:** 1. Шавлă хупă сасăсене вĕрентесси. 2. Шавлă хупă сасăсемпе пуплевре тĕрĕс усă курма хăнăхтарасси.

**Урок тĕсĕ: содержани тăрăх** – фонетика урокĕ; **тĕллевне кура** – çĕнĕ темăна вĕрентмелли урок; **формине кура** – яланхи йĕркепе ирттерекен урок.

**Вĕрентӳ меслечĕсем:** сăнав-тĕпчев меслечĕ, учитель ăнлантарăвĕ, калаçу.

**Словарь ĕçĕ:** *кăсăя, лотерея, аллея, марля, дыня, статья.*

**Çыхăнуллă пуплеве аталантарассипе çыхăннă ĕç:** 226-мĕш хăнăхтарури текст çине таянса сăмах вĕççĕн калав йĕркелесси.

### Урок юхăмĕ

**I. Килти ĕçе тĕрĕслени.**

22§; 219-мĕш хăнăхтару.

**II. Çĕнĕ темăна вĕрентни.**

1. Хăнăхтарусемпе ĕçлени.

221-мĕш хăнăхтару. Вĕренекенсем виçĕ юпари сăмахсенчи *к, п, с, ç, т, х, ч, ш* хупă сасăсем каланă чух мĕнле

илтĕннине сăнаççĕ (кашни ретри сăмахсене умлă-хыçлă темиçе хут вулаççĕ), янăраса илтĕннине палăртаççĕ.

222-мĕш хăнăхтару.

2. Теори материалĕпе (89 с.) паллаштарни. Учитель ачасене шавлă хупă сасăсене çырура мĕнле сас паллисемпе кăтартнине ăнлантарать, тĕслĕхсемпе çирĕплетет.

**III. Вĕреннине çирĕплетни.**

1. 223–225-мĕш хăнăхтарусене туни.

2. Пĕтĕмлетÿ туни.

**IV. Киле ĕç пани.**

23§; 226-мĕш хăнăхтару.

## *40-мĕш урок.* Шавлă хупă сасăсем

**Урок тĕллевĕсем:** 1. Шавлă хупă сасăсене вĕреннине çирĕплетесси. 2. Шавлă хупă сасăсемпе пуплевре тĕрĕс усă курма хăнăхтарасси. 3. Ачасен чунĕсенче кайăк-кĕшĕке йывăр вăхăтра хĕрхенес, пулăшас туйăма вăратасси.

**Урок тĕсĕ: содержани тăрăх** – фонетика урокĕ; **тĕллевне кура** – çирĕплетÿ урокĕ; **формине кура** – яланхи йĕркепе ирттерекен урок.

**Вĕрентÿ меслечĕсем:** учитель ăнлантарăвĕ, калаçу.

**Словарь ĕçĕ:** *мăрйи, çемье, статья, çемйи, статйи.*

**Çыхăнуллă пуплеве аталантарассипе çыхăннă ĕç:** «Декабрь» текст çине таянса сăмах вĕççĕн калав йĕркелесси.

### Урок юхăмĕ

**I. Килти ĕçе тĕрĕслени.**

1. 23§; 226-мĕш хăнăхтару.

2. Сăмах диктанчĕ.

**II. Вĕреннине çирĕплетни.**

1. Хăнăхтарусемпе ĕçлени.

228–230-мĕш хăнăхтарусем.

227-мĕш хăнăхтару. Шавлă хупă сасăсем тĕрлĕ позицире янăраса илтĕннине аса илсе çирĕплетеççĕ.

2. «Декабрь» текстпа ĕçлени (пуплеве аталантарни, воспитани тĕллевне пурнăçлани).

– Декабрь çулталăкăн миçемĕш уйăхĕ?

– Вăл ытти уйăхсенчен мĕнле паллăсемпе уйрăлса тăрать?

– Ку уйăха чăвашла мĕнле калаççĕ?
– Декабрь уйăхĕнче камсене (мĕнсене) йывăр? Вĕсене эсир пулăшатăр-и?
– Декабрь уйăхĕ çинчен эсир тата мĕн калама пултаратăр?
3. 231-мĕш хăнăхтарăва туни. Ачасем текста вулаççĕ, ыйтусене хуравлаççĕ.
– Калавра мĕнле вăхăта сăнласа кăтартнă?
– Эсир хĕлле вăрманта пулнă-и?
– Сирĕн ял çумĕнчи вăрман мĕн ятлă?
– Хĕллехи вăрманта мĕнле кайăксем пурăнаççĕ?

**III. Киле ĕç пани.**

1. 23§; 232-мĕш хăнăхтару.
2. «Хĕллехи вăрман» темăпа çыхăннă ӳкерчĕк, сăвă, текст тупмалла.

## *41-мĕш урок.* «Хĕллехи вăрман» калав (сочинени)

**Урок тĕллевĕсем:** 1. «Хĕллехи вăрман» темăпа калав (сочинени) çырма вĕрентесси. 2. Шухăша вĕçевĕçĕн, çыхăнуллă сăнлав-калав формипе (çырса, каласа) кăтартма хăнăхтарасси. 3. Çынсемпе вăрман хушшинчи çыхăнăва ачасене ăнланса илме пулăшасси.

**Урок тĕсĕ: тĕллевне кура** – пуплеве аталантармалли урок; **формине кура** – яланхи йĕркепе ирттерекен урок.

**Вĕрентӳ меслечĕсемпе ĕç хатĕрĕсем:** учитель ăнлантарăвĕ, калаçу, «Хĕллехи вăрман» темăпа çыхăннă ӳкерчĕк, хĕллехи вăрмана сăнласа парассипе çыхăннă илемлĕ текст тĕслĕхĕсем, сăвăсем.

**Çыхăнуллă пуплеве аталантарассипе çыхăннă ĕç:** «Хĕллехи вăрман» темăпа калав çырасси.

### Урок юхăмĕ

**I. Килти ĕçе тĕрĕслени.**

23§; 232-мĕш хăнăхтару.

**II. Пуплеве аталантармалли материалпа ĕçлени.**

1. «Хĕллехи вăрман» темăпа ĕçлени.

Ачасем темăпа çыхăннă ӳкерчĕке, текста, сăвва тишкереççĕ. Учитель илемлĕ литературăран илнĕ хĕллехи вăрмана

сăнласа паракан текст тĕслĕхĕсенче, сăвăсенче сăнлав формине уçса пама пулăшакан илемлĕх мелĕсене курма пулăшать. Ачасем предложенисен тытăмне сăнаççĕ, шухăша палăртас çĕрте вĕсем мĕнле вырăн йышăннине кăтартаççĕ.

2. Ыйтусене хуравлани.

Вĕрентекен ачасене хĕллехи вăрманти уйрăм япаласене сăнлама вĕрентет.

– Хĕллехи вăрмана аякран пăхса сăнлăр. Сирĕн куç умне вăл мĕнле тухса тăрать? Чунра вăл мĕнле туйăм çуратать?

– Хĕллехи вăрмана пырса кĕнĕ хыççăн мĕн курнине, мĕнле туйăм çуралнине каласа парăр.

– Хĕллехи вăрманти йывăççене, кайăк-кĕшĕке, пĕлĕте, хĕвеле, çиле, çĕр питне, унти пурнăçа уйрăммăн сăнлăр.

– Çак уйрăмлăхсене писательсемпе поэтсем мĕнле сăнланине текстсем çине таянса танлаштарăр.

– Çынсемпе вăрман хушшинче мĕнле çыхăну пур?

– Çын пурнăçĕнче вăрман мĕнле вырăн йышăнать? Мĕншĕн пирĕн унта теплерен пĕрре те пулин каяс килет?

3. Хĕллехи вăрман çинчен ачасем каласа пани.

4. Сочинение çырни.

**III. Урока пĕтĕмлетни.**

1. Сочинение пĕтĕмĕшле тишкерни.

– Сочинени çырнă чух чи йывăр самант сирĕншĕн мĕн пулчĕ?

– Сочиненин тĕп шухăшне ăнлантарса парăр.

– Хĕллехи вăрман уйрăмлăхне уçса пама мĕнле пулăмсене суйласа илтĕр?

– Писательсемпе поэтсен мĕнле сăнлăхĕсемпе усă куртăр?

– Орфографи тĕлĕшĕнчен иккĕленӳллĕ сăмахсем тĕл пулчĕç-и? Вĕсене доска умне тухса çырса парăр.

2. Урока вĕçлени.

## *42-мĕш урок.* Хупă сасăсен хытăлăхĕпе çемçелĕхĕ (24§)

**Урок тĕллевĕсем:** 1. Хупă сасăсен хытăлăхĕпе çемçелĕхĕ çинчен вĕрентесси. 2. Хупă сасăсен хытăлăхĕпе тата çемçелĕхĕпе пуплевре (калаçура, çырура) тĕрĕс усă курма хăнăхтарасси.

**Урок тĕсĕ: содержани тăрăх** – фонетика урокĕ; **тĕллевне кура** – çĕнĕ темăна вĕрентмелли урок; **формине кура** – яланхи йĕркепе ирттерекен урок.

**Вĕрентӳ меслечĕсемпе ĕç хатĕрĕсем:** сăнав-тĕпчев меслечĕ, учитель ăнлантарăвĕ, калаçу, таблица.

**Словарь ĕçĕ:** *пилеш, палан, кĕлет, хăват, супăнь.*

## Урок юхăмĕ

**I. Килти ĕçе тĕрĕслени.**

1. Вĕреннине аса илни. 27§.

2. Сăмах диктанчĕ: *кухньăра, шинельпе, медальлĕ, хальлĕхе.*

**II. Çĕнĕ темăна вĕрентни.**

1. Чĕлхе материалне (92 с.) тишкерни. Вĕренекенсем сăмахсен хытă тата çемçе мăшăрĕсен уйрăмлăхĕсене палăртаççĕ.

2. Ыйтусене хуравлани, пĕтĕмлетӳ туни.

– Мăшăрлатса çырнă сăмахсенче уçă сасăсем мĕнлисем? (Хытă тата çемçе уçă сасăсем.)

– Сăмахсен мăшăрĕсенчи хупă сасăсем мĕнле илтĕнеççĕ? (Хытă тата çемçе.)

– Хытă уçă сасăпа юнашар тăракан хупă сасăсем мĕнле илтĕнеççĕ? (Хупă сасăсем пурте хыттăн илтĕнеççĕ.)

– Çемçе уçă сасăпа юнашар тăракан хупă сасăсем мĕнле илтĕнеççĕ? (Пурте çемçен илтĕнеççĕ.)

Ачасем сăмахра çемçе уçă сасăпа юнашар тăракан хупă сасăсем пурте çемçен, хытă уçă сасăпа юнашар тăраканнисем хыттăн илтĕннине пĕтĕмлетсе калаççĕ.

3. 233–234-мĕш хăнăхтарусене туни.

4. Таблица хатĕрлени. Сасăсенчен чылайăшĕ хытăлăхпа çемçелĕх тĕлĕшĕнчен мăшăрлă пулнине кăтартма ачасем учитель пулăшнипе таблица тăваççĕ.

| | |
|---|---|
| Хытă хупă сасăсем | в, к, л, м, н, п, р, т, х |
| Çемçе хупă сасăсем | в', к', л', м', н', п', р,' т', х' |

**III. Вĕреннине çирĕплетни.**

1. 235-мĕш хăнăхтару. Ку сăвăри *тее-теех* форма пĕлтерĕшне тата пулăвне учитель ăнлантарса парать.

2. Сăмах диктанчĕ: *пилеш, палан, кĕлет, хăват, супăнь.*

**IV. Киле ĕç пани.** 24§; 236-мĕш хăнăхтару.

## *43-мӗш урок.* Хупӑ сасӑсен хытӑлӑхӗпе ҫемҫелӗхӗ

**Урок тӗллевӗсем:** 1. Хупӑ сасӑсен хытӑлӑхӗпе, ҫемҫелӗхӗпе паллаштарасси. 2. Хупӑ сасӑсен хытӑлӑхӗпе ҫемҫелӗхне пуплевре шута илме хӑнӑхтарасси.

**Урок тӗсӗ: содержани тӑрӑх** – фонетика урокӗ; **тӗллевне кура** – ҫӗнӗ темӑна вӗрентмелли урок; **формине кура** – яланхи йӗркепе ирттерекен урок.

**Вӗрентӳ меслечӗсем:** сӑнав-тӗпчев меслечӗ, учитель ӑнлантарӑвӗ, калаҫу.

### Урок юхӑмӗ

**I. Килти ӗҫе тӗрӗслени.**

24§; 236-мӗш хӑнӑхтару.

**II. Ҫӗнӗ темӑна вӗрентни.**

1. Сӑмахсене тишкерни. Доска ҫинчи сӑмахсене *(кукӑль, супӑнь, мӑкӑль, мӑкӑнь, юрат, хӑть, мӑкӑльть, вулать)* вӗренекенсем малтан вулаҫҫӗ, унтан тетраде ҫыраҫҫӗ, кайран ыйтусене хуравлаҫҫӗ.

– Сӑмахсенчи уҫӑ сасӑсем мӗнлисем?

– Вӗсемпе юнашар тӑракан хупӑ сасӑсем мӗнлисем?

– Сӑмах вӗҫӗнчи хупӑ сасӑсем мӗнлисем?

– Вӗсемпе юнашар уҫӑ сасӑсем мӗнлисем?

– Сасӑсем ҫемҫен илтӗннине мӗнле палӑртнӑ?

2. Правилӑсене (94 с.) вулани, пӗтӗмлетӳ туни.

3. 239-мӗш хӑнӑхтарупа ӗҫлени. Вӗренекенсем сӑмахсен пуҫламӑшӗнчи *й, с, ҫ, ч* хупӑ сасӑсем хыҫҫӑн уҫӑ сасӑсем ҫемҫисем те, хыттисем те тӗл пулнине ӑнланса илеҫҫӗ.

**III. Вӗреннине ҫирӗплетни.**

237-мӗш хӑнӑхтару.

241-мӗш хӑнӑхтару. Сӑмахсене вуласа ачасем ҫемҫе хупӑ сасӑсем мӗнле уҫӑ сасӑсем ҫумӗнче пулнине каласа параҫҫӗ.

**IV. Киле ӗҫ пани.**

24§; 238, 240-мӗш хӑнӑхтарусем.

## *44-мĕш урок.* Хупă сасăсен çемçелĕхне çырура палăртасси (25§)

**Урок тĕллевĕсем:** 1. Хупă сасăсен çемçелĕхне çырура палăртма вĕрентесси. 2. Хупă сасăсен çемçелĕхĕпе пуплевре (çырура) тĕрĕс усă курма хăнăхтарасси.

**Урок тĕсĕ: содержани тăрăх** – фонетика урокĕ; **тĕллевне кура** – çĕнĕ темăна вĕрентмелли урок; **формине кура** – яланхи йĕркепе ирттерекен урок.

**Вĕрентӳ меслечĕсем:** сăнав-тĕпчев меслечĕ, учитель ăнлантарăвĕ, калаçу.

**Словарь ĕçĕ:** *хĕвеллĕ, пĕлĕтлĕ, йĕркеллĕ, медальлĕ, çуллă.*

### Урок юхăмĕ

**I. Килти ĕçе тĕрĕслени.**

1. 24§; 238, 240-мĕш хăнăхтарусем.
2. Сăмах диктанчĕ.

**II. Çĕнĕ темăна вĕрентни.**

1. Чĕлхе материалне тишкерни (95 с.).

Вĕренекенсем сăмахсенчи усă тата хупă сасăсем мĕнле илтĕннине калаççĕ, çакăн пек пĕтĕмлетӳ тăваççĕ: çемçе сăмахсенчи хупă сасăсен çемçелĕхне çемçелĕх паллипе палăртмаççĕ.

2. Правилăпа (96 с.) паллаштарни.

Ун хыççăн 242-мĕш хăнăхтарăва тăваççĕ. Сăмахсенчи усă сасăсем пурте хытă усă сасăсем, сăмах вĕçĕнче вара (вĕсем умĕнче хытă усă сасăсем пулсан та) – пурте çемçе хупă сасăсем. Çав сасăсене çырура хупă сас палли хыççăн çемçелĕх палли *(ь)* çырса палăртаççĕ.

3. Рамка ăшĕнчи вырăс чĕлхинчен йышăннă сăмахсене (96 с.) тишкерни.

**III. Вĕреннине çирĕплетни.**

1. Хăнăхтарусемпе ĕçлени.

243–245-мĕш хăнăхтарусем. Учитель çемçелĕх палли *(ь)* çырнипе çырманни сăмах пĕлтерĕшне улăштарма пултарнине тĕслĕхсем çине таянса (96 с.) ăнлантарса парать, унашкал сăмахсене тĕрĕс çырмаллине асăрхаттарать.

246-мĕш хăнăхтару пуплеве аталантарассипе çыхăннă: панă сăмахсенчен сăмах майлашăвĕсем туса çырмалла.

2. Рамка ăшĕнчи сăмахсене (97 с.) вулани, ыйтусене хуравлани.

– Çак сăмахсем хăш чĕлхерен кĕнĕ?

– Сăмах вĕçĕнче мĕнле сасăсем илтĕнеççĕ? Вĕсене çырура мĕнле палăртмалла?

**IV. Киле ĕç пани.**

25§; 247-мĕш хăнăхтару.

## *45-мĕш урок.* Хупă сасăсен çемçелĕхне çырура палăртасси

**Урок тĕллевĕсем:** 1. Хупă сасăсен çемçелĕхне çырура палăртма вĕрентесси. 2. Хупă сасăсен çемçелĕхне шута илсе пуплеве (калаçăва, çырăва) тĕрĕс йĕркелеме хăнăхтарасси.

**Урок тĕсĕ: содержани тăрăх** – фонетика урокĕ; **тĕллевне кура** – çĕнĕ темăна вĕрентмелли урок; **формине кура** – яланхи йĕркепе ирттерекен урок.

**Вĕрентӳ меслечĕсем:** сăнав-тĕпчев меслечĕ, учитель ăнлантарăвĕ, калаçу.

**Словарь ĕçĕ:** а) *бинокль, библиотекарь, шинель, писатель, токарь;* ă) *диагональ, госпиталь, сирень, акварель, числитель.*

### Урок юхăмĕ

**I. Килти ĕçе тĕрĕслени.**

1. 25§; 247-мĕш хăнăхтару.

2. Сăмах диктанчĕ. Сăмахсене камăнлăх падежĕнче çырмалла.

**II. Çĕнĕ темăна вĕрентни.**

1. 248-мĕш хăнăхтарăва тишкерни. Ачасем ыйтусене хуравлаççĕ.

– Ку сăмахсем пирки мĕн калама пулать? *(Вырăс чĕлхинчен йышăннă сăмахсем.)*

– Вĕсене мĕнле çыраççĕ? *(Сăмах вĕçĕнче çемçелĕх палли лартаççĕ.)*

– Çав сăмахсенче хăçан çемçелĕх палли *(ь)* çырмаççĕ? *(Камăнлăх тата пару падежĕсенче.)*

– Хăш падеж формисенче çемçелĕх палли çыраççĕ? *(Вырăн, туху, çуклăх, пирке падежĕсенче; нумайлă хисеп форминче – хупă сас паллипе пуçланакан аффикссем умĕн.)*

2. Правилăпа (97 с.) ĕçлени. Учитель çемçелĕх паллипе пĕтекен вырăс сăмахĕсене мĕнле çырмаллине ăнлантарса парать. Чăваш чĕлхинчи хăш-пĕр сăмахсен варринчи çемçе хупă сасăсене *(выльăх, атьăр, хуньăм)* çемçелĕх паллипе кăтартнине тĕслĕхсемпе çирĕплетет.

3. 249-мĕш хăнăхтарăва туни. *Л', н', т'* хупă сасăсен çемçелĕхне *е, ю, я* сас паллисем умĕн çемçелĕх паллипе кăтартманнине пĕтĕмлетеççĕ.

**III. Вĕреннине çирĕплетни.**

1. 25-мĕш параграфри правилăсене вуласа ăнланни.
2. 250-мĕш хăнăхтарăва хăйсем тĕллĕн çырса туни, тĕрĕслени.

**IV. Киле ĕç пани.**

25§; 251–252-мĕш хăнăхтарусем.

## *46-мĕш урок.* Тĕрĕслев диктанчĕ

**Урок тĕллевĕсем:** 1. Çемçе хупă сасăсене çырура тĕрĕс палăртма вĕреннине тĕрĕслесси. 2. Хупă сасăсен çемçелĕхне шута илсе пуплеве (калаçупа çырăва) тĕрĕс йĕркелеме хăнăхтарасси.

**Урок тĕсĕ: содержани тăрăх** – фонетика урокĕ; **тĕллевне кура** – тĕрĕслев урокĕ; **формине кура** – яланхи йĕркепе ирттерекен урок.

**Вĕрентӳ меслечĕсем:** учитель ăнлантарăвĕ, калаçу.

### Урок юхăмĕ

**I. Кӳртĕм калаçу.**

**II. Диктант çырни.**

1-мĕш вариант

ЭМЕЛ КУРĂКĔСЕМ ПУХРĔÇ

Иртнĕ эрнере ытларах тĕтреллĕ çанталăк тăчĕ, çумăр та çукаларĕ. Паян акă хĕвел хĕртсе пăхнипе пылчăк типрĕ. Вара Саша, Юрик, Света, Коля, Володя сумкăсем йăтса ĕне ферми çумĕпе вăрман еннелле уттарчĕç. Çанталăкĕ уяр та ăшă.

«Паян ытларах татăпăр. Эпĕ пилеш йывăççисем ăçтарах нумайййине пĕлетĕп: мана атте каласа пачĕ», – пĕлтерет юлташĕсене Света.

Тепĕр çур сехетрен ачасем Чăрăшьел вăрманне пырса та кĕчĕç. Пĕр уçланка тухрĕç те часах хăйсем шыракан вырăна тупрĕç. Тавралăх калама çук илемлĕ. Йывăç çинче пилешсем хĕп-хĕрлĕн курăнса лараççĕ. Ачасем пилеше асăрханса татрĕç, туратсене пĕрре те хуçмарĕç.

Çуллахи вăхăтра та шкул ачисем биологи учителĕ ертсе пынипе эмел курăкĕсем пуçтарчĕç.

Утмăл турат чечекне, пилешпе чăрăш тăрри курăкĕсене, ромашка, шăнăр курăк çулçисене, ландыш чечекĕпе çулçисене пуçтарса типĕтрĕç те хатĕрлев пунктне леçсе пачĕç. Ырă ĕç турĕç ачасем çу каçипе. Ара, питех те кирлĕ-çке вĕсем пухнă эмел курăкĕсем тăван çĕр-шыва.

2-мĕш вариант

САДРА

Кĕрхи садра каçа хирĕç питĕ лăпкă. Хăлхана хуплакан шăв-шавлă хула урамĕсенчен çакăнта килсе кĕрсен чуна ирĕк. Кăкăр тулли сывлама сывлăш уçă, сулхăн. Ура айĕнче типĕ çулçă чăштăртатать. Чие тĕмĕсем хушшинче хаваслă çерçисем чĕвĕлтетеççĕ.

Вăрманта шултăра йывăççем тахçанах ешĕл тумне улăштарнă. Унта çав тери шăп. Çилсĕр çанталăкра сарăхнă çулçă вĕлтĕртетсе ўкнине те илтме пулать. Сад хăйĕн симĕс тумне хывсах пĕтерейменха, акаци, чие тĕмĕсем сип-симĕсех лараççĕ. Улмуççисем кăна чăл-чал чăпарланнă. Вĕсен çатрака турачĕсем шап-шурă улмасем пуснипе çĕрелле усăна-усăна аннă. Ир пулакан улма йывăçĕсем саралнă. Вĕсем пурĕ те иккĕ кăна. *(А. Артемьев çырни тăрăх.)*

### III. Грамматика ĕçне туни.

– Пĕрремĕшпе иккĕмĕш абзацри çемçе хупă сасăсене аялтан пĕр йĕр туртса паллă тăвăр.

– Хупă сасăсем хăçан çемçен илтĕнме пултараççĕ? Тĕслĕхсем илсе ăнлантарăр.

– Çемçелĕх палли сăмах пĕлтерĕшне улăштарнине кăтартакан тĕслĕхсем тупса çырăр.

– Çак сăмахсенче çемçелĕх паллине мĕншĕн çырнипе çырманнине ăнлантарăр: *писателе, писательсĕр, площадьрен, токарьпе, библиотекарьшĕн, шинеле, площадĕн, учительпе, учителĕн.*

### IV. Урока пĕтĕмлетни.

– Диктант çырнă чух орфографи тĕлĕшĕнчен çырма йывăр сăмахсем тĕл пулчĕç-и? Вĕсене доска çине çырса парăр.

– Çак сăмахсене доска çине çырса парăр: *сип-симĕсех, усăна-усăна, чăл-чал, шап-шурă, пĕтерейменха, кирлĕ-çке, Чăрăшьел, хĕп-хĕрлĕн, утмăл турат.*

## *47-мĕш урок.* Тĕрĕслев диктанчĕн тишкерĕвĕ

**Урок тĕллевĕсем:** 1. Диктантра тунă йăнăшсене пĕтерессипе ĕçлесси. 2. Хупă сасăсен çемçелĕхне шута илсе пуплеве (калаçăва, çырăва) тĕрĕс йĕркелеме хăнăхтарасси.

**Урок тĕсĕ: содержани тăрăх** – фонетика урокĕ; **тĕллевне кура** – йăнăшсемпе ĕçлемелли урок; **формине кура** – яланхи йĕркепе ирттерекен урок.

**Вĕрентӳ меслечĕсемпе ĕç хатĕрĕсем:** учитель ăнлантарăвĕ, калаçу, карточкăсем, палăртнă темăпа çыхăннă тест ыйтăвĕсем.

## Урок юхăмĕ

### I. Диктантри йăнăшсемпе ĕçлени.

### II. Тест ирттерни.

Кашни икĕ ачана пĕрер карточка памалла. Карточкăри ыйтусем:

1) Мĕнле сасăсене тĕрĕс каламан?

Б (бă), в (вă), й (йă), к (кă), л (лă).

2) Хăш сăмахсене тĕрĕс çырман?

Кальча, укăлча, кунча, пыльчăк, хупăльча.

3) Хăш сăмахсене тĕрĕс çырнă?

Кĕсье, мăрйе, тухья, тухйи, çемьи.

4) Сасăпа сас палли шучĕ тан сăмахсене калăр.

Кăсăя, хăю, алса, кая, шухăш.

5) Хăш сăмахсенче сасăсем сас паллисенчен нумай?

Юпа, хăю, июль, нуль, рояль.

6) Алфавитри мĕнле сас паллисем сасса пĕлтермеççĕ?

7) Мĕнле сас паллисем икĕ сасса пĕлтереççĕ?

8) Хăш сăмахсенче хупă сасăсем янăраса илтĕнеççĕ?

Сăпса, укçа, чавса, шăрçа, лапта, пăта.

9) Сасă тытăмĕ енчен пăхсан виçĕ сăмахран пĕри ытлашши. Мĕншĕн?

Самăр, симĕс, сахал; шĕшкĕ, чышкă, çĕмел; сынсем, çĕлĕксем, йăмрасем; паттăр, тĕттĕм, пĕтĕм.

10) Хăш сăмахсенче усă сасăсен килĕшĕвĕ пăсăлнă?

Çуркунне, хĕлле, кĕркунне, çулла, çӳллĕ, тухиччен, кунсерен.

### III. Урока вĕçлени.

## *48-мĕш урок.* Хупă сасăсем вăраммăн илтĕнни, ăна çырура палăртасси (26§)

**Урок тĕллевĕсем:** 1. Хупă сасăсем вăраммăн илтĕннине çырура палăртма вĕрентесси. 2. Хупă сасăсем вăраммăн илтĕннине, вĕсене çырура палăртассине шута илсе пуплеве (калаçăва, çырăва) тĕрĕс йĕркелеме хăнăхтарасси.

**Урок тĕсĕ: содержани тăрăх** – фонетика урокĕ; **тĕллевне кура** – çĕнĕ темăна вĕрентмелли урок; **формине кура** – яланхи йĕркепе ирттерекен урок.

**Вĕрентӳ меслечĕсем:** сăнав-тĕпчев меслечĕ, учитель ăнлантарăвĕ, калаçу.

### Урок юхăмĕ

**I. Килти ĕçе тĕрĕслени.**

251–252-мĕш хăнăхтарусем.

**II. Çĕнĕ темăна вĕрентни.**

1. 253-мĕш хăнăхтару. Вĕренекенсем хăнăхтарури палăртнă сăмахсене уйрăмшарăн танлаштарса вулаççĕ, мĕнле илтĕннине пĕлтереççĕ.

– Палăртнă сăмахсем пĕр-пĕринчен уйрăлса тăраççĕ-и? *(Уйрăлса тăраççĕ: вĕсем пачах расна сăмахсем. Иккĕмĕш юпари сăмахсенче варринчи хупă сасăсем вăраммăн, пĕрремĕшĕнче кĕскен илтĕнеççĕ.)*

– Хупă сасăсем вăраммăн илтĕннине мĕнле çырса кăтартнă? *(Икĕ хупă сас паллипе.)*

2. Теори материалне ăнлантарни. Ачасен хуравĕсене пĕтĕмлетсе учитель вăрăм хупă сасăсене мĕнле çырса палăртмалли çинчен каласа парать.

3. 254-мĕш хăнăхтару. Кунта *-лă(-лĕ), -ла(-ле)* аффикслă сăмахсене тишкереççĕ, мĕнле çырмаллине калаççĕ (икĕ хупă сас паллипе палăртни).

**III. Вĕреннине çирĕплетни.**

1. 255-мĕш хăнăхтару.
2. 256-мĕш хăнăхтару (çырса).
3. Кĕнекери (99 с.) правилăсене вулани, тĕслĕхсемпе çирĕплетни.

**IV. Киле ĕç пани.**

26§; 257-мĕш хăнăхтару.

## *49-мӗш урок.* Хупӑ сасӑсем вӑрӑммӑн илтӗнни, ӑна ҫырура палӑртасси

**Урок тӗллевӗсем:** 1. Хупӑ сасӑсем вӑрӑммӑн илтӗннине, вӗсене ҫырура палӑртассине вӗрентесси. 2. Хупӑ сасӑсем вӑрӑммӑн илтӗннине, вӗсене ҫырура палӑртнине шута илсе пуплеве (каласӑва, ҫырӑва) тӗрӗс йӗркелеме хӑнӑхтарасси.

**Урок тӗсӗ: содержани тӑрӑх** – фонетика урокӗ; **тӗллевне кура** – ҫӗнӗ темӑна вӗрентмелли урок; **формине кура** – яланхи йӗркепе ирттерекен урок.

**Вӗрентӳ меслечӗсем:** сӑнав-тӗпчев меслечӗ, учитель ӑнлантарӑвӗ, каласу.

**Словарь ӗҫӗ:** а) *йӳнӗ, ҫӗнӗ, нӳрӗ, тырӑ, вутӑ, ташӑ, пӗкӗ;* ӑ) *капӑр, самӑр, пысӑк, троллейбус, ванна, кросс, конгресс.*

### Урок юхӑмӗ

**I. Килти ӗҫе тӗрӗслени.**

26§; 257-мӗш хӑнӑхтару.

**II. Ҫӗнӗ темӑна вӗрентни.**

1. Теори материалне ӑнлантарни (102 с.).

Учитель чӑваш сӑмахӗсен тӗрлӗ формисенче вӑрӑм хупӑ сасса пӗлтерме икӗ пӗр пек хупӑ сас палли ҫырмалли ҫинчен каласа парать.

2. Хӑнӑхтарусемпе ӗҫлени.

259-мӗш хӑнӑхтару (ҫырмасӑр). Ачасем хӑнӑхтаруri сӑмахсене вулаҫҫӗ, учитель ыйтӑвӗсене ушкӑнпа хуравлаҫҫӗ.

– *-И* аффикслӑ япала ячӗсене мӗнле ҫырмалла?

– *-И* аффикслӑ паллӑ ячӗсене мӗнле ҫырмалла?

260-мӗш хӑнӑхтару. Вӗренекенсем кашни йӗркерен пилӗкшер сӑмах илсе *-и* аффикс хушса ҫыраҫҫӗ, мӗнле ҫырмаллине калаҫҫӗ.

3. Теори материалне малалла ӑнлантарни (102–103 с.). Учитель вырӑс чӗлхинчен йышӑннӑ сӑмахсен варринче тата вӗҫӗнче икӗ пӗр пек хупӑ сас палли ҫырасси ҫинчен калать.

4. 261–262-мӗш хӑнӑхтарусене ҫырмасӑр туни.

**III. Вӗреннине ҫирӗплетни.**

1. Сӑмах диктанчӗ (учитель сӑмахсене вулать, ачасем вӗсене *-и* аффикс хушса ҫыраҫҫӗ): а) *йӳнӗ, ҫӗнӗ, нӳрӗ;* ӑ) *тырӑ, вутӑ, ташӑ, пӗкӗ;* б) *капӑр, самӑр, пысӑк;* в) *троллейбус, ванна; кросс, конгресс.*

2. Диктантри сăмахсене тĕрĕслени. Ачасем хăйсем çырнине ăнлантарасçĕ.

**IV. Киле ĕç пани.**

26§ (102–103 с.); 263–264-мĕш хăнăхтарусем.

## *50-мĕш урок.* Хупă сасăсем вăрăммăн илтĕнни, ăна çырура палăртасси

**Урок тĕллевĕсем:** 1. Хупă сасăсем вăрăммăн илтĕнни, вĕсене çырура палăртасси çинчен мĕн пĕлнине çирĕплетесси. 2. Хупă сасăсем вăрăммăн илтĕннине, вĕсене çырура палăртнине шута илсе пуплеве (калаçăва, çырăва) тĕрĕс йĕркелеме хăнăхтарасси.

**Урок тĕсĕ: содержани тăрăх** – фонетика урокĕ; **тĕллевне кура** – çирĕплетӳ урокĕ; **формине кура** – яланхи йĕркепе ирттерекен урок.

**Вĕрентӳ меслечĕсемпе ĕç хатĕрĕсем:** учитель ăнлантарăвĕ, калаçу.

**Çыхăнуллă пуплеве аталантарассипе çыхăннă ĕç:** 268-мĕш хăнăхтарури «Ăман» текст тăрăх изложени çырасси.

### Урок юхăмĕ

**I. Килти ĕçе тĕрĕслени.**

26§; 263–264-мĕш хăнăхтарусем.

**II. Вĕреннине çирĕплетни.**

Хăнăхтарусемпе ĕçлени.

Ачасем 265–268-мĕш хăнăхтарусене тăвасçĕ, вăрăм хупă сасăллă сăмахсене тĕрĕс çырассине çирĕплетесçĕ.

**III. Киле ĕç пани.**

26§; 269-мĕш хăнăхтару.

## *51-мĕш урок.* Вырăс чĕлхинчен çырупа йышăннă сăмахсенчи хупă сасăсен хытăлăхĕпе çемçелĕхĕ (27§)

**Урок тĕллевĕсем:** 1. Вырăс чĕлхинчен йышăннă сăмахсенчи хупă сасăсен хытăлăхĕпе çемçелĕхне уçса парасси. 2. Вырăс чĕлхинчен йышăннă сăмахсенчи хупă сасăсен хытăлăхĕпе çемçелĕхне шута илсе пуплеве (калаçăва, çырăва) тĕрĕс йĕркелеме хăнăхтарасси.

**Урок тĕсĕ: содержани тăрăх** – фонетика урокĕ; **тĕллевне кура** – ҫĕнĕ темăна вĕрентмелли урок; **формине кура** – яланхи йĕркепе ирттерекен урок.

**Вĕрентỹ меслечĕсем:** сăнав-тĕпчев меслечĕ, учитель ăнлантарăвĕ, калаҫу.

**Словарь ĕҫĕ:** а) *грузовик, медик, дневник, антенна, пакет, термин, туалет;* ă) *балет, университет, тетрадь, аптекарь, карамель, циркуль, нуль, букварь.*

## Урок юхăмĕ

**I. Килти ĕҫе тĕрĕслени.**

1. 26§; 269-мĕш хăнăхтару.
2. Сăмах диктанчĕ.

Ачасем *курăк, ҫырма, пылчăк, ыйту, тавлашу* сăмахсем ҫумне *-лă(-лĕ)* аффикс, *кивĕ, шашка, вырăс, мечĕк, кулăш* сăмахсем ҫумне *-ла(-ле)* аффикс хушса ҫыраҫҫĕ.

**II. Ҫĕнĕ темăна вĕрентни.**

1. Хăнăхтарусемпе ĕҫлени.

270, 272-мĕш хăнăхтарусем. Ачасем ыйтусене хуравлаҫҫĕ, пĕтĕмлетỹ тăваҫҫĕ.

– Мăшăрлатса ҫырнă сăмахсем вĕҫĕнче хупă сасă умĕн мĕнле уҫă сасăсем тăраҫҫĕ?

– Вырăсларан ҫырупа йышăннă сăмахсен вĕҫĕнчи хупă сасăсем мĕнле илтĕнеҫҫĕ? Чăваш сăмахĕсенче мĕнле илтĕнеҫҫĕ?

271-мĕш хăнăхтару (ҫырмасăр).

273-мĕш хăнăхтару. Вĕренекенсем хăнăхтарури сăмахсене вуласа параҫҫĕ.

2. Теори материалне ăнлантарни.

Учитель сăмахсем ҫумне аффикссем хушăннипе ҫыхăннă уйрăмлăхсене (107 с.) ăнлантарать.

3. Хăнăхтарусемпе малалла ĕҫлени.

274-мĕш хăнăхтару.

275-мĕш хăнăхтару. Вĕренекенсем икĕ юпаран малтанхи виҫшер сăмаха аффикссем хушса ҫырса илеҫҫĕ.

4. Теори материалне малалла ăнлантарни. Ачасене сăмах вĕҫĕнчи хупă сасăсене *(шинель – кĕтмел, клевер – пĕвер)* тĕрĕс калама вĕрентмелле, мĕншĕн тесен пĕтмĕшри хупă сасăсем сăмахне кура тĕрлĕрен илтĕнеҫҫĕ (ҫемҫелĕх паллипе ҫырнă сăмахсемсĕр пуҫне): *клевер – р* хытă

илтĕнет, *пĕвер – р* çемçе илтĕнет; *шинель – ль* çемçе хупă сасă, *кĕтмел* – кунта та *л* çемçе илтĕнет. Çак уйрăмлăхсене пула аффиксăн хытă тата çемçе варианчĕсем хушăннине ачасем тĕплĕн тишкереççĕ, правилăна тĕслĕхсемпе çирĕплетеççĕ.

Вырăс чĕлхинче *ль, нь, рь* сас паллисемпе çыракан сăмахсене чăвашла мĕнле çырмаллине (107 с.) учитель каласа парать.

**III. Вĕреннине çирĕплетни.**

1. Сăмах диктанчĕ çырни. Ачасем çак сăмахсене çыраççĕ: 1) *грузовик, медик, дневник; 2) антенна, пакет, термин; 3) туалет, балет, университет; 4) тетрадь, аптекарь, карамель; 5) циркуль, нуль, букварь.*

2. Диктантри сăмахсемпе предложенисем туни. Сăмах ушкăнĕ мĕнлерех иккенне кура ачасем кĕнекери правилăсене вуласа параççĕ.

**IV. Киле ĕç пани.**

27§; 273, 276-мĕш хăнăхтарусем.

## *52-мĕш урок.* Вырăс чĕлхинчен çырупа йышăннă сăмахсенче *б, г, д, ж, з* сас паллисене çырасси (28§)

**Урок тĕллевĕсем:** 1. Вырăс чĕлхинчен çырупа йышăннă сăмахсенче *б, г, д, ж, з* сас паллисене çырма вĕрентесси. 2. Вырăс чĕлхинчен çыру урлă йышăннă сăмахсенче *б, г, д, ж, з* сас паллисемпе пуплевре тĕрĕс усă курма хăнăхтарасси.

**Урок тĕсĕ: содержани тăрăх** – фонетика урокĕ; **тĕллевне кура** – çĕнĕ темăна вĕрентмелли урок; **формине кура** – яланхи йĕркепе ирттерекен урок.

**Вĕрентӳ меслечĕсем:** сăнав-тĕпчев меслечĕ, учитель ăнлантарăвĕ, калаçу.

**Словарь ĕçĕ:** *апельсин, спортсмен, отличник, коньки, командир.*

**Çыхăнуллă пуплеве аталантарассипе çыхăннă ĕç:** Шупашкарпа Хусан хулисем çинчен сăмах вĕççĕн калав йĕркелесси.

## Урок юхăмĕ

**I. Килти ĕçе тĕрĕслени.**

1. 27§; 273-мĕш хăнăхтару.

2. 276-мĕш хăнăхтару (çырса).

3. Сăмах диктанчĕ (словарь ĕçĕнче панă сăмахсене пару падежĕнче çыраççĕ).

**II. Çĕнĕ темăна вĕрентни.**

1. Чĕлхе материалне (108 с.) тишкерни.

2. 277–280-мĕш хăнăхтарусем.

3. Ыйтусене хуравлани. Ун хыççăн учитель *б, г, д, ж, з* хупă сасăсем вырăс чĕлхинчен çырупа йышăннă сăмахсенче çеç тĕл пулнине, вĕсем сăмах пуçламăшĕнче тата вĕçĕнче мĕнле илтĕннине çĕнĕ тĕслĕхсемпе çирĕплетет.

– *Б, г, д, ж, з* сасăсем вырăс чĕлхинчен çырупа йышăннă сăмахсенче сăмах пуçламăшĕнче тата вĕçĕнче мĕнле илтĕнеççĕ?

– Аффикссем хушăнсан çав сасăсем мĕнле илтĕнеççĕ?

**III. Вĕреннине çирĕплетни.**

1. 281–283, 285-мĕш хăнăхтарусем.

2. Калав йĕркелени. Шупашкарпа Хусан хулисем çинчен унта пулнă ачасем каласа параççĕ.

**IV. Киле ĕç пани.**

1. 28§; 284-мĕш хăнăхтару.

2. 286-мĕш хăнăхтару. «Кăсăя» калав тăрăх изложени çырма хатĕрленмелле.

## *53-мĕш урок.* «Кăсăя» изложени

**Урок тĕллевĕсем:** 1. «Кăсăя» текст тăрăх изложени çырма вĕрентесси. 2. Шухăша вĕçе-вĕçĕн, çыхăнуллă, çырса е каласа пама хăнăхтарасси. 3. Ачасен чунĕнче кайăк-кĕшĕке хĕрхенес туйăм вăратасси.

**Урок тĕсĕ: тĕллевне кура** – пуплеве аталантармалли урок; **формине кура** – яланхи йĕркепе ирттерекен урок.

**Вĕрентӳ меслечĕсем:** учитель ăнлантарăвĕ, калаçу, текст тишкерĕвĕ.

**Çыхăнуллă пуплеве аталантарассипе çыхăннă ĕç:** «Кăсăя» темăпа изложени çырасси.

## Урок юхăмĕ

**I. Пуплеве аталантармалли материалпа ĕçлени.**

1. Урок темипе, тĕллевĕсемпе паллаштарни.

2. Текстпа ĕçлени. «Кăсăя» калава ачасем вулаççĕ, чĕлхине тишкереççĕ, содержанине каласа параççĕ.

3. Изложени çырни.

4. Грамматика ĕçне туни: 1) вырăс чĕлхинчен çыру урлă йышăннă сăмахсемпе виçĕ предложени йĕркелесе çыраççĕ; 2) *класс, грипп, металл, Донбасс, килограмм, Филипп* сăмахсене тĕрлĕ падеж формисенче çырса тухаççĕ.

**II. Урока пĕтĕмлетни.**

Изложение пĕтĕмĕшле тишкерни. Ачасем изложени çырнă, грамматика ĕçне тунă чух тĕл пулнă орфографи тĕлĕшĕнчен йывăр сăмахсемпе ĕçлеççĕ, мĕн вĕреннине пĕтĕмлетсе хăвараççĕ.

## *54-мĕш урок.* Вырăс чĕлхинчен çырупа йышăннă сăмахсенче *ф, ц, щ, ъ* сас паллисене çырасси (29§)

**Урок тĕллевĕсем:** 1. Вырăс чĕлхинчен çырупа йышăннă сăмахсенче *ф, ц, щ, ъ* сас паллисене çырма вĕрентесси. 2. *Ф, ц, щ, ъ* сас паллиллĕ сăмахсемпе пуплевре (калаçура, çырура) тĕрĕс усă курма хăнăхтарасси.

**Урок тĕсĕ: содержани тăрăх** – фонетика урокĕ; **тĕллевне кура** – çĕнĕ темăна вĕрентмелли урок; **формине кура** – яланхи йĕркепе ирттерекен урок.

**Вĕрентӳ меслечĕсем:** сăнав-тĕпчев меслечĕ, учитель ăнлантарăвĕ, калаçу.

**Словарь ĕçĕ:** а) *фигура, центнер, щетка, подъезд, параграф, абзац;* ă) *финиш, съезд, цитата, гвардеец, фотограф.*

## Урок юхăмĕ

**I. Килти ĕçе тĕрĕслени.**

1. 28§; 284-мĕш хăнăхтару.

2. Изложение тишкерни. Ачасем изложени содержанине мĕнле уçса пани çинчен калаçаççĕ; орфографипе пунктуаци йăнăшĕсене тӳрлетеççĕ; вырăс чĕлхинчен йышăннă сăмахсене тупса вулаççĕ; пуплев çитменлĕхĕсене палăртаççĕ.

**II. Çĕнĕ темăна вĕрентни.**
1. Çĕнĕ темăна ăнлантарни.
2. 287–289-мĕш хăнăхтарусене туни.
3. Сăмах диктанчĕ (290-мĕш хăнăхтару) çырни.
**III. Вĕреннине çирĕплетни.**
291, 294-мĕш хăнăхтарусемпе ĕçлени.
**IV. Киле ĕç пани.**
292–293-мĕш хăнăхтарусем. Ӳкерчĕк тăрăх «Пирĕн стена хаçачĕ» калав çырма хатĕрленмелле.

## *55-мĕш урок.* «Пирĕн стена хаçачĕ» калав

**Урок тĕллевĕсем:** 1. Ӳкерчĕк тăрăх «Пирĕн стена хаçачĕ» темăпа калав çырма вĕрентесси. 2. Шухăша вĕçе-вĕçĕн, çыхăнуллăн, калав формипе (çырса, каласа) пама хăнăхтарасси. 3. Туслăх пĕлтерĕшне, хакне ăнланса илме пулăшасси.

**Урок тĕсĕ: тĕллевне кура** – пуплеве аталантармалли урок; **формине кура** – яланхи йĕркепе ирттерекен урок.

**Вĕрентӳ меслечĕсемпе ĕç хатĕрĕсем:** учитель ăнлантарăвĕ, калаçу, ӳкерчĕк.

**Словарь ĕçĕ**: *культура, фильм, портфель, рояль, модель.*

**Çыхăнуллă пуплеве аталантарассипе çыхăннă ĕç:** «Пирĕн стена хаçачĕ» темăпа калав çырасси.

### Урок юхăмĕ

**I. Килти ĕçе тĕрĕслени.**
1. 29§; 292–293-мĕш хăнăхтарусем.
2. Сăмах диктанчĕ.

**II. Пуплеве аталантармалли материалпа ĕçлени.**
1. Ӳкерчĕк тăрăх калаçу ирттерни.
2. Тĕрĕс çырассипе ĕçлени. Ачасем калавра усă курмалли сăмахсене *(стакан, стена, портрет, ручка, кофта, свитер, блузка, юбка, кисть)* тĕрĕс çырас пирки калаççĕ.
3. Калав çырни. Ачасем калава уйрăм хут çине çыраççĕ.

**III. Киле ĕç пани.**
Калава тетраде куçарса çырмалла.

## *56-мĕш урок.* Ударени (30§)

**Урок тĕллевĕсем:** 1. Ударени çинчен вĕрентесси. 2. Ударенипе пуплевре (калаçура, çырура) тĕрĕс усă курма хăнăхтарасси.

**Урок тĕсĕ: содержани тăрăх** – фонетика урокĕ; **тĕллевне кура** – çĕнĕ темăна вĕрентмелли урок; **формине кура** – яланхи йĕркепе ирттерекен урок.

**Вĕрентӳ меслечĕсемпе ĕç хатĕрĕсем:** сăнав-тĕпчев мелĕ, учитель ăнлантарăвĕ, калаçу, ударени йĕркин таблици.

**Словарь ĕçĕ:** *магнитофон, компьютер, концерт, разъезд, плащ.*

### Урок юхăмĕ

**I. Килти ĕçе тĕрĕслени.**

1. Калава тишкерни.
2. Сăмах диктанчĕ çырни.

**II. Çĕнĕ темăна вĕрентни.**

1. 295–296-мĕш хăнăхтарусемпе ĕçлени.
2. Ударени йĕркипе паллаштарни.

**III. Вĕреннине çирĕплетни.**

1. 301–304-мĕш хăнăхтарусем (çырмасăр).
2. Ударени таблицине туни. Ачасем *лаша, вăрман, пĕлĕт, халăх* сăмахсен ударени таблицине тăваççĕ (пĕр ача доска çинче, ыттисем – хăйсен тетрачĕсенче).
3. Правилăсене вулани (114 с.), каласа пани.

**IV. Киле ĕç пани.** 30§; 305-мĕш хăнăхтару.

## *57-мĕш урок.* Вырăс чĕлхинчен çырупа йышăннă сăмахсенчи ударени (31§)

**Урок тĕллевĕсем:** 1. Вырăс чĕлхинчен йышăннă сăмахсенчи ударени çинчен вĕрентесси. 2. Вырăс чĕлхинчен йышăннă сăмахсене тĕрĕс ударенипе вулама, калама хăнăхтарасси.

**Урок тĕсĕ: содержани тăрăх** – фонетика урокĕ; **тĕллевне кура** – çĕнĕ темăна вĕрентмелли урок; **формине кура** – яланхи йĕркепе ирттерекен урок.

**Вĕрентӳ меслечĕсем:** сăнав-тĕпчев меслечĕ, учитель ăнлантарăвĕ, калаçу.

**Словарь ĕçĕ:** *октябрь, медаль, словарь, автомобиль.*

## Урок юхăмĕ

**I. Килти ĕçе тĕрĕслени.**

1. 30§; 305-мĕш хăнăхтару.

2. Сăмах диктанчĕ. Ачасем вырăс чĕлхинчен йышăннă сăмахсене камăнлăх тата вырăн падежĕсенче çыраççĕ.

**II. Çĕнĕ темăна вĕрентни.**

1. 307-мĕш хăнăхтарăва туни.

2. Теори материалне ăнлантарни.

Учитель малтан вырăс чĕлхинчен йышăннă сăмахсенчи ударени вырăс чĕлхинчи пекех пулнине каласа парать, тĕслĕхсемпе çирĕплетет. Унтан вырăс чĕлхинчен йышăннă сăмахсем çумне аффикссем хушăнсан ударени йĕрки мĕнле улшăннине ăнлантарать, тĕслĕхсемпе çирĕплетет.

Класс – клáсăн, класá, класпалá.

Портфéль – портфéлĕн, портфелé, портфельпé.

3. Хăнăхтарусемпе ĕçлени.

308-мĕш хăнăхтару. Ачасем чĕлхе ăслăлăхĕн терминĕсенчи ударени çинчен калаççĕ.

309-мĕш хăнăхтару. Культурăпа çыхăннă сăмахсенче ударени лартаççĕ.

310-мĕш хăнăхтару. Шкул хатĕрĕсен ячĕсене тĕрĕс вулама вĕренеççĕ.

**III. Вĕреннине çирĕплетни.**

1. Хăнăхтарусемпе ĕçлени.

311-мĕш хăнăхтару.

312, 314-мĕш хăнăхтарусем. Ачасем учебникри сăмахсем евĕрлĕ çĕнĕ сăмахсем тупаççĕ, вĕсене мĕнле çырмаллине каласа параççĕ.

2. Правилăсене вулани (117 с.). Пĕр вĕренекен кĕнекери правилăсемпе тĕслĕхсене вулать, тепĕр вĕренекенĕ çĕнĕ тĕслĕхсем тупать.

**IV. Киле ĕç пани.**

31§; 313, 315-мĕш хăнăхтарусем.

## *58-мӗш урок.* **Вӗреннине аса илни. Суйлав диктанчӗ**

**Урок тӗллевӗсем:** 1. Икӗ пӗр пек сас паллиллӗ сӑмахсене мӗнле ҫырнине аса илесси. 2. Икӗ пӗр пек сас паллиллӗ сӑмахсене тӗрӗс ҫырма хӑнӑхтарасси.

**Урок тӗсӗ: содержани тӑрӑх** – орфографи урокӗ; **тӗллевне кура** – аса илӳ урокӗ; **формине кура** – яланхи йӗркепе irttерекен урок.

**Вӗрентӳ меслечӗсем:** учитель ӑнлантарӑвӗ, калаҫу.

### Урок юхӑмӗ

**I. Килти ӗҫе тӗрӗслени.**

31§; 313-мӗш хӑнӑхтару.

**II. Вӗреннӗ материала аса илни.**

1. Хупӑ сасӑсене аса илни. Ачасем хупӑ сасӑсем вӑрӑммӑн илтӗнни, ӑна ҫырура мӗнле палӑртмалли ҫинчен калаҫҫӗ, шухӑшӗсене тӗслӗхсемпе ҫирӗплетеҫҫӗ.

2. Суйлав диктанчӗ ҫырни. Учитель сӑмахсем вуласа парать. Ачасем икӗ пӗр пек сас палли ҫырмалли тӗслӗхсене суйласа ҫыраҫҫӗ.

Класс, техника, бассейн, витрина, металл, гитара, аппарат, артист, аллея, артель, грамм, духи, диаграмма, вертолет, коллекци, ботаника, колонка, плита, комисси, витрина, кросс, вратарь, миллион, жакет, пассажир, деепричасти, программа, заняти, тонна, фасоль, шоссе, плита, бюллетень, лампа, искусство, велосипед, сцена, баррикада, помидор, гирлянда, диаграмма.

3. Ачасен ӗҫӗсене тӗрӗслеме пухса илни.

## *59-мӗш урок.* **Сӑмахри уҫӑ сасӑсемпе хупӑ сасӑсем тухса ӳкме пултарни (32§)**

**Урок тӗллевӗсем:** 1. Сӑмахри уҫӑ сасӑсемпе хупӑ сасӑсем тухса ӳкме пултарни ҫинчен ачасене вӗрентесси. 2. Сӑмахри уҫӑ сасӑсемпе хупӑ сасӑсем тухса ӳкме пултаракан сӑмахсемпе пуплевре (калаҫура, ҫырура) тӗрӗс усӑ курма хӑнӑхтарасси.

**Урок тӗсӗ: содержани тӑрӑх** – фонетика урокӗ; **тӗллевне кура** – ҫӗнӗ темӑна вӗрентмелли урок; **формине кура** – яланхи йӗркепе irttерекен урок.

**Вĕрентӳ меслечĕсем:** сăнав-тĕпчев меслечĕ, учитель ăнлантарăвĕ, калаçу.

**Словарь ĕçĕ:** *банан, грузовик, бидон, гараж, зонтик.*

## Урок юхăмĕ

**I. Килти ĕçе тĕрĕслени.**

1. 31§; 315-мĕш хăнăхтару.
2. Сăмах диктанчĕ.

**II. Çĕнĕ темăна вĕрентни.**

1. 316-мĕш хăнăхтарăва тишкерни. Ачасем сăмахсене танлаштарса вулаççĕ, вĕсен тытăмĕнчен *ă, ĕ* уçă сасăсем тухса ӳкнине тавçăрса илеççĕ, ыйтусене хуравлаççĕ.

– Уçă сасăсем сăмахăн хăш позицийĕнче тухса ӳкеççĕ?

– Унашкал сăмахсене эсир тата пĕлетĕр-и? Каласа парăр.

2. Çĕнĕ темăна ăнлантарни.

Вĕрентекен *ă, ĕ* уçă сасăсем сăмах варринче тата вĕçĕнче тухса ӳкме пултарни çинчен калать, çĕнĕ тĕслĕхсемпе паллаштарать: *шурă тутăр – шур тутăр, сарă чечек – сар чечек, сăвăçă – сăвăç, пулăçă – пулăç.*

**III. Вĕреннине çирĕплетни.**

1. 317-мĕш хăнăхтарăва çырни.
2. Тĕслĕхсем тупни. Ачасем *ă, ĕ* уçă сасăсем тухса ӳкме пултаракан сăмахсем тупса калаççĕ *(вĕтĕ пулă – вĕт пулă, çутă стакан – çут стакан, хытă çăкăр – хыт çăкăр, ăшă пӳлĕм – ăш пӳлĕм, пушă витре – пуш витре, çăл куçĕ – çăл куç, çĕр мамăкĕ – çĕр мамăк).*
3. 318-мĕш хăнăхтарăва çырса туни.

**IV. Киле ĕç пани.**

32§; 319-мĕш хăнăхтару.

## *60-мĕш урок.* Сăмахри уçă сасăсемпе хупă сасăсем тухса ӳкме пултарни

**Урок тĕллевĕсем:** 1. Сăмахри уçă сасăсемпе хупă сасăсем тухса ӳкме пултарнине аса илсе çирĕплетесси. 2. Сăмахри уçă сасăсемпе хупă сасăсем тухса ӳкме пултаракан сăмахсемпе пуплевре (калаçура, çырура) тĕрĕс усă курма хăнăхтарасси.

**Урок тĕсĕ:** **содержани тăрăх** – фонетика урокĕ; **тĕллевне кура** – çирĕплетӳ урокĕ; **формине кура** – яланхи йĕркепе ирттерекен урок.

**Вĕрентӳ меслечĕсем:** учитель ăнлантарăвĕ, калаçу.

**Словарь ĕçĕ:** *фарфор, циркуль, плащ, съезд, щетка.*

## Урок юхăмĕ

**I. Килти ĕçе тĕрĕслени.**

1. 32§; 319-мĕш хăнăхтару.
2. Сăмах диктанчĕ.

**II. Вĕреннĕ материала çирĕплетни.**

1. Хăнăхтарусемпе ĕçлени.

320-мĕш хăнăхтару. Ачасем кĕске формăсем çук сăмахсене тупаççĕ, вĕсемпе сăмах майлашăвĕсем туса çыраççĕ: *тимĕрçĕ – ĕçчен тимĕрçĕ, çыравçă – пултаруллă çыравçă, пулăçă – ватă пулăçă.*

321-мĕш хăнăхтару (çырмасăр).

322-мĕш хăнăхтару. *Ă, ĕ* тухса ӳкнĕ сăмахсем: *лăс(ă), çут(ă), ав(ă), сар(ă), шур(ă).*

– Ку тĕслĕхсенче *ă, ĕ* тухса ӳкни мĕнпе çыхăннă? (Сăвă йĕркипе.)

2. Пуплеве аталантарассипе ĕçлени. Ачасем 324-мĕш хăнăхтарăва çырмасăр тăваççĕ, ыйтусене хуравлаççĕ.

– Ачасем, эсир мĕнле ваттисен сăмахĕсене пĕлетĕр? Каласа парăр.

– *Ă ĕ* уçă сасăсем тухса ӳкнĕ тĕслĕхсем пур-и?

– *Ă, ĕ* сасăсем тухса ӳкнĕшĕн сăмахсен пĕлтерĕшĕ улшăнать-и?

**III. Киле ĕç пани.**

32§; 323-мĕш хăнăхтару. Пĕрер тупмалли юмах тупса çырмалла.

## *61-мĕш урок.* Сасăсен ылмашăвĕ (33§). Фонетика тишкерĕвĕ

**Урок тĕллевĕсем:** 1. Сасăсен ылмашăвĕпе фонетика тишкерĕвĕ çинчен вĕрентесси. 2. Сасăсен ылмашăвне шута илсе пуплеве (калаçупа çыру формисене) тĕрĕс йĕркелеме хăнăхтарасси.

**Урок тĕсĕ: содержани тăрăх** – фонетика урокĕ; **тĕллевне кура** – çĕнĕ темăна вĕрентмелли урок; **формине кура** – яланхи йĕркепе ирттерекен урок.

**Вĕрентӳ меслечĕсемпе ĕç хатĕрĕсем:** сăнав-тĕпчев меслечĕ, учитель ăнлантарăвĕ, калаçу, фонетика тишкерĕвĕн схеми.

**Словарь ĕçĕ:** *пĕлĕтлĕ* (çанталăк), *хăюллă* (салтак), *тăварлă* (пăтă), *тĕттĕм* (каç).

## Урок юхăмĕ

**I. Килти ĕçе тĕрĕслени.**

1. 32§; 323-мĕш хăнăхтару.
2. Сăмах диктанчĕ.

**II. Çĕнĕ темăна вĕрентни.**

1. 327-мĕш хăнăхтарăва туни. Вĕренекенсем хăнăхтарăва вуласа чăваш сăмахĕсен вĕçĕнчи *т* хупă сасă *ч* сасăпа ылмашнине асăрхаççĕ.

2. Çĕнĕ темăна ăнлантарни. Ачасен хуравĕсене пĕтĕмлетсе учитель *т, ть, д, дь* сасăсем япала ячĕсен 3-мĕш сăпат форминче *ч* сасăпа ылмашнине каласа парать: *ответ – унăн отвечĕ, тетрадь – унăн тетрачĕ, сад – ача сачĕ.*

3. 328–329-мĕш хăнăхтарусене туни.

4. Фонетика тишкерĕвĕ çинчен ăнлантарни, тĕслĕхпе çирĕплетни.

Тишкерӳ сăмахĕ: ***йăмра.***

1) Сыпăксем: ***йăм-ра.***
2) Ударени: ***йăмрá.***
3) Сасă, сас палли: 5 сасă, 5 сас палли.
4) Уçă сасăсем: [ă], [а] (хытă уçă сасăсем).
5) Хупă сасăсем:
   [й] – ялан янăравлă хупă сасă;
   [м] – ялан янăравлă хупă сасă;
   [р] – ялан янăравлă хупă сасă.
6) Сас паллисен ячĕсем: ***йă, ă, мă, рă, а.***
7) Сасăсемпе сас паллисен шучĕ тан (5 сасă, 5 сас палли).

**III. Вĕреннине çирĕплетни.**

1. 325-мĕш хăнăхтару. Сасăсемпе сас паллисен шучĕ тан мар сăмахсем: *ял, хăю, выльăх.*

2. Сăмах диктанчĕ: *çурт, ответ, билет, пĕлĕт.* Ачасем сăмахсене 3-мĕш сăпат формине çыраççĕ.

3. *Хуранта* сăмахăн фонетика тишкерĕвĕ (çырмасăр).

**IV. Киле ĕç пани.**

33§; 326-мĕш хăнăхтару. Учитель ытларах пĕлес текен ачасене килте 34–35-мĕш параграфсене вулама сĕнет, ĕçе мĕнле йĕркелемеллине ăнлантарать.

## *62-мĕш урок.* Фонетика тишкерĕвĕ

**Урок тĕллевĕсем:** 1. Фонетика тишкерĕвне вĕрентесси. 2. Сасăсен ылмашăвне шута илсе пуплеве (калаçупа çыру формисене) тĕрĕс йĕркелеме хăнăхтарасси.

**Урок тĕсĕ: содержани тăрăх** – фонетика урокĕ; **тĕллевне кура** – çĕнĕ темăна вĕрентмелли урок; **формине кура** – яланхи йĕркепе ирттерекен урок.

**Вĕрентÿ меслечĕсем:** калаçу, фонетика тишкерĕвĕ.

**Словарь ĕçĕ:** *татки (татăк), пит(ĕ), ик(ĕ), пулăç(ă)на, улт(ă), эп(ĕ), тип(ĕ), вут(ă).*

### Урок юхăмĕ

**I. Килти ĕçе тĕрĕслени.**

33§; 326-мĕш хăнăхтару.

**II. Çĕнĕ темăна вĕрентни.**

1. Суйлав диктанчĕ: *татки (татăк), пит(ĕ), ик(ĕ), пулăç(а), улт(ă), эп(ĕ), тип(ĕ), вут(ă).* Ачасем *ă, ĕ* усă сасăсем тухса ÿкнĕ сăмахсене суйласа çырса илеççĕ.

2. Фонетика тишкерĕвĕ туни. Ачасем çак сăмахсене тишкереççĕ: *тăван, ĕмĕрлĕх, кăвайт.*

**III. Киле ĕç пани.**

1. Алфавитри кашни сас паллипе пĕрер сăмах тупса çырмалла.

2. *Хурлăхан, пылчăк* сăмахсен фонетика тишкерĕвне тумалла.

## *63-мĕш урок.* «Фонетика, графика, орфографи, орфоэпи» темăсене вĕреннине аса илни

**Урок тĕллевĕсем:** 1. «Фонетика, графика, орфографи, орфоэпи» çинчен вĕреннине аса илесси. 2. Фонетика, графика, орфографи, орфоэпи правилисемпе пуплевре (калаçура, çырура) тĕрĕс усă курма хăнăхтарасси.

**Урок тĕсĕ: содержани тăрăх** – фонетика урокĕ; **тĕллевне кура** – аса илӳ урокĕ; **формине кура** – яланхи йĕркепе ирттерекен урок.

**Вĕрентӳ меслечĕсемпе ĕç хатĕрĕсем:** калаçу, фонетика тишкерĕвĕ, ударени схеми.

**Словарь ĕçĕ:** а) *пӳрт, сарай, кĕлет, пусă, вите, хапха;* ă) *кая, марля, кăсăя, выля, аллея, пекарня, туя, героиня.*

## Урок юхăмĕ

**I. Килти ĕçе тĕрĕслени.**

*Хурлăхан, пылчăк* сăмахсен фонетика тишкерĕвĕ.

**II. Вĕреннĕ материала аса илни.**

1. Сăмах диктанчĕсем çырни.

Кунне вăл правилăпа çыхăннă сăмахсене уйрăм ача доска çинче çырать, ыттисем – хăйсен тетрачĕсенче.

1) Хытă тата çемçе сăмахсене çырасси: *пӳрт, сарай, кĕлет, пусă, вите, хапха.*

2) *Е, ,, ю, я* сас паллиллĕ сăмахсене çырасси: *кая, марля, кăсăя, выля, аллея, пекарня, туя, героиня* сăмахсене икĕ юпа туса çырăр: пĕринче сас палли икĕ сасса пĕлтерет, тепринче – пĕр сасса çеç.

3) Çемçе хупă сасăсене çырасси: *пăнчă, кукăль, вăлча, калча, мăкăнь, турать.*

4) Пару падежĕнчи сăмахсене çырасси: *шăши, пăши, преми, варени, такси.*

2. Хушма ĕçсем туни.

1) *К, п, т, с, ç, х, ч, ш* шавлă хупă сасăсемпе пуçланакан тата пĕтекен пĕрер сăмах тупса калăр.

2) Вăрăм илтĕнекен хупă сасăсемлĕ пĕрер сăмах тупса çырăр. Çырура вĕсене мĕнле палăртаççĕ?

3) Вырăс чĕлхинчен йышăннă сăмахсене икĕ юпа туса çырăр: пĕринче *б, г, д, ж, з* сас паллисемпе пуçланаканнисем пулчăр, тепринче – çав сасăсемпе пĕтекеннисем.

4) *Ф, ц, щ* сас паллисемпе пуçланакан тата пĕтекен сăмахсене пĕрер тупса калăр.

5) *Çăмăллăх, кивелтер, савăнăçсăр, пархатарсăр, тавлашуллă* сăмахсен ударени схемисене тăвăр.

6) Ялан янăравлă хупă сасăпа пуçланакан тата пĕтекен сăмахсем тупса çырăр.

**III. Урока пĕтĕмлетни.**

# *64-мĕш урок.* Тĕрĕслев ĕçĕ (диктант)

**Урок тĕллевĕсем:** 1. Фонетика çинчен вĕреннине тĕрĕслесси. 2. Фонетика материалĕпе пуплевре (калаçура, çырура) тĕрĕс усă курма хăнăхтарасси.

**Урок тĕсĕ: содержани тăрăх** – фонетика урокĕ; **тĕллевне кура** – тĕрĕслев урокĕ; **формине кура** – яланхи йĕркепе irттерекен урок.

**Вĕрентӳ меслечĕсем:** учитель ăнлантарăвĕ, калаçу, фонетика тишкерĕвĕ.

## Урок юхăмĕ

**I. Кӳртĕм калаçу.**

**II. Тĕрĕслев материалĕпе ĕçлени.**

1. Диктант тексчĕсемпе паллаштарни.

1-мĕш вариант

**ПИРВАЙХИ ШĂНКĂРАВ**

Кĕркунне пуçламăшĕ. Çанталăк **янкăр** уяр та ăшă тăрать. Ирхи хĕвел тӳпенелле çăмхаланса хăпарнă май унăн ылтăн пайăркисем пушшех хаваслăн çиçме тытăнаççĕ, пин-пин шевлеллĕн йăлтăртатса **чĕтренеççĕ**.

Паян – сентябрĕн 1-мĕшĕ, вĕренӳ çулĕ пуçланнă кун. Тем тĕрлĕ капăрлатса пĕтернĕ çĕнĕ шкул умĕнче таса та пĕрешкел хӳхĕм тумланнă вĕтĕр-шакăрсем шакăлтатса калаçаççĕ. Пĕр-пĕрне хăйсен çуллахи ирĕк кунĕсене мĕнле irттерни çинчен каласа параççĕ ĕнтĕ.

Чи кĕçĕннисем аллисене чĕрĕ чечек **çыххисем** тытнă, вĕсем малти ретре ушкăнланса тăраççĕ.

Кĕçех пĕтĕм шăв-шав лăпланать, шкул карнизĕ çинчен çывăхри хурăн çине çерçи пăрăлтатса вĕçсе кайни те аван илтĕнсе юлать. Линейка. Чĕрене çĕклентерекен савăнăçлă **музыка**. Вĕрентекенсем пĕрин хыççăн тепри вĕренӳ çулне ăнăçлăн пуçлама ырă сунса сăмах калаççĕ. Ак шăнкăрав. Оркестр марш кĕвви **выляса** ярать. Ачасем пĕр харăс утса шкул еннелле çаврăнаççĕ. *(А.Лазарева çырни тăрăх.)*

2-мĕш вариант

**НОЯБРЬ**

**Ноябрьте** çанталăк çав тери **вылянчăк** кăмăллă, мартри майлах. Хăш-пĕр чух пĕр талăкрах темиçе хут улшăнать: çумăр та çăвать, уяртса та ярать, сивĕтет те юр вĕçтерме тытăнать. Çĕр улачăла. Çаралса, хуралса юлнă йывăçсем вĕтĕ туратсемпе перкелешеççĕ. **Юмансем** кăна хăмăр çулçисене çаплах тăкасшăн мар, çиле вăрçса чăштăртатса лараççĕ. Ăшă кунсем питĕ сахал пулаççĕ. Хĕвел асратĕсре кăна курăнкаласа илет. Тĕксĕм, тачка пĕлĕтсем çĕре аннă пекех. Час-часах çăра тĕтре тапса тухать. Кăнтăрлах вара машинăсен фара çутма тивет.

Уй-хир шăпах, **комбайнсем**, плуглă-сÿреллĕ тракторсем чарăнми кĕрленĕ вăхăт тахçанах иртнĕ. Утă капанĕсемпе улмурисем патĕнчен **ферма** еннелле каякан çул çинче кăна тепĕр чух тулли тиевлĕ машина е урапа-çуна курăнкалать.

Пĕве-кÿлĕри шыв пăрпа витĕннĕ пулин те сивĕнсех пырать. Ку вăхăтра хĕл каçма хатĕрленекен уланкăпа çăрттан калама çук çăткăн – пурне те хыпса çăтма хатĕр. Çавăнпах пулăçсен аллине халь нихçанхинчен те ытларах лекеççĕ.

2. Диктант çырни.

3. Фонетика тишкерĕвĕ туни (диктант текстĕнчен палăртнă сăмахсене илмелле).

4. Тетрадьсене тĕрĕслеме пухса илни.

## ЛЕКСИКА

## *65-мĕш урок.* Сăмахăн лексика пĕлтерĕшĕ (36§)

**Урок тĕллевĕсем:** 1. Ачасене «лексика» ăнлавпа паллаштарасси, сăмахăн пĕлтерĕш пуррине кăтартасси. 2. Сăмахсемпе пуплевре (калаçура, çырура) тĕрĕс усă курма хăнăхтарасси. 3. Ачасене çуркуннехи вăхăт хитрелĕхне курма, унăн асамлăхне туйма пулăшасси.

**Урок тĕсĕ: содержани тăрăх** – лексика урокĕ; **тĕллевне кура** – çĕнĕ темăна вĕрентмелли урок; **формине кура** – яланхи йĕркепе ирттерекен урок.

**Вĕрентÿ меслечĕсемпе ĕç хатĕрĕсем:** дедукци, «Сăмах пĕлтерĕшĕ» таблица, тĕрлĕ словарь, «Çуркунне» темăпа çыхăннă пысăк ÿкерчĕк.

**Словарь ĕçĕ:** *лексика, словарь.*

**Çыхăнуллă пуплеве аталантарассипе çыхăннă ĕç:** «Çуркунне» темăпа калав йĕркелесси.

### Урок юхăмĕ

**I. Çĕнĕ темăна вĕрентни.**

1. Малтан вĕреннине аса илни. Учитель пулăшнипе ачасем фонетика, синтаксис çинчен мĕн пĕлнине аса илеççĕ. «Лексика» сăмах пĕлтерĕшне учитель ачасене хатĕр таблицăпа усă курса ăнлантарать, ку сăмах грек сăмахĕнчен пулнине, вăл мĕне пĕлтернине уçса парать.

2. Теори материалне ăнлантарни. Учитель таблицăпа усă курса чĕлхе вĕрентĕвĕнче сăмахăн лексика, грамматика тата стилистика пĕлтерĕшĕсем çинчен ăнлантарать, кашни шухăша тĕслĕхсемпе çирĕплетет.

**<u>Сăмах пĕлтерĕшĕ</u>**

| **Лексика пĕлтерĕшĕ** | **Грамматика пĕлтерĕшĕ** | **Стилистика пĕлтерĕшĕ** |
|---|---|---|
| **Сăмах мĕне те пулин пĕлтерет** | **Сăмахăн тĕрлĕ формисем** | **Кашни сăмахăн хăйĕн чĕлхе (стиль) уйрăмлăхĕ пур** |
| **Лаша** - килти выльăх | лаша**ллă**<br>лаша**сăр**<br>лаша**па**<br>лаша**н**<br>лаш**и** | **Лаша** - урхамах - çил çунат |

Кунтах сăмах пĕлтерĕшĕпе пĕлсе те вырăнлă усă курни пуплеве сăнарлă та илемлĕ, ăнланмалла туни çинчен каласа хăвармалла. Тĕслĕхрен: *Тепĕр урокра «5» паллă çаклатрăм. Историпе вара хама килĕшӳллĕ паллăсем çаклатма тытăнтăм.* Çак предложенисенче калакан *çаклат* сăмахăн чăн пĕлтерĕшне ăнлансах çитерейменни курăнать: *çаклат* сăмах килĕшӳсĕр япала е ĕç-хĕл çинчен каланă чухне кăна вырăнлă (тĕслĕхрен, *«2» паллă çаклатрăм, хуйхă çаклатрăм, укçа çаклатнă*). Илсе кăтартнă тĕслĕхре *«5» паллă илтĕм* тени вырăнлăрах пулнă пулĕччĕ.

3. Словарьсемпе паллаштарни. Учитель ачасене ятарлă кĕнекесем – словарьсем çинчен каласа парать, вĕсен пĕлтерĕшне палăртать. Тĕрлĕ словарьпе (Н.И. Ашмарин словарĕ, орфографи словарĕ, чăвашла-вырăсла, вырăсла-чăвашла словарьсем т.ыт.те.) паллаштарнă хыççăн вĕсемпе мĕнле усă курмалли çинчен калать.

**II. Вĕреннине çирĕплетни.**

1. Хăнăхтарусемпе ĕçлени.

339-мĕш хăнăхтару. Ачасем ĕçе класпа пĕрле çырмасăр тăваççĕ ĕçлеççĕ.

342-мĕш хăнăхтару. Диктант формипе çыраççĕ.

341-мĕш хăнăхтару. Ачасем харпăр хăй тĕллĕн ĕçлеççĕ. Учитель уйрăм ачаран ыйтса тĕрĕслет.

344-мĕш хăнăхтару. Ăнлантару диктанчĕ формипе çыраççĕ.

2. Текст çинчен вĕреннине аса илни.

– Текстра мĕн çинчен каланă?

– Текстăн тĕп шухăшне палăртăр.

– Çуркунне тĕлĕнмелле аван вăхăт пулнине уçса пама пулăшакан сăмахсене текстра шыраса тупăр.

– Мĕнпе илĕртет пире çуркунне?

– Çуркунне чунра мĕнле кăмăл-туйăм çуратать? Вăл мĕнпе çыхăннă?

– Çуркуннехи çут çанталăка сăнласа парăр.

3. «Çуркунне» картинăпа ĕçлени.

– Картинăна кам çырнă?

– Художник картинăна мĕнле ят панă?

– Мĕншĕн ăна çавăн пек ят панă?

– Картинăра мĕнле вăхăта сăнланă?

– Çанталăк мĕнле тăрать?

– Художник картинăна мĕнле сăрăсемпе ӳкернĕ?

– Картинăна курса художник кăмăлне пĕлме пулать-и? Хăвăр шухăшăра ăнлантарса парăр.

– Картина сирте мĕнле туйăм çуратрĕ?

4. «Çуркунне» темăпа калав йĕркелени.

**III. Урока пĕтĕмлетни.**

1. Урока ачасемпе пĕтĕмлетни. Ачасем «Сăмах пĕлтерĕшĕ» таблицăпа усă кураççĕ.

– *Пӳрт, кермен, çурт, пӳртсĕр, çуртсем* сăмахсем çине таянса *пӳрт* сăмахăн лексика, грамматика, чĕлхе (стилистика) пĕлтерĕшне ăнлантарса парăр.

– *Телей, çамрăк (каччă), ватă (çын), тикĕс (çул), ывăн, хисепле, савăн* сăмахсен лексика пĕлтерĕшĕсене ытти çывăх сăмахсемпе усă курса ăнлантарăр.

2. Ачасен ĕçне хаклани.

**IV. Киле ĕç пани.**

1. 36§; 345-мĕш хăнăхтару.

2. «Çуркунне» темăпа кроссворд йĕркелемелле, унта *çуркунне* сăмах вулама май килтĕр.

Тĕслĕх: 1. Юр кайнă-кайман вăрманта çуркунне çитнине палăртса чи малтан шăтса тухакан чечек.

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| [1] ç | е | ç | п | ĕ | л |

## *66-мĕш урок.* Сăмах пĕлтерĕшĕ (36§)

**Урок тĕллевĕсем:** 1. Сăмах пĕлтерĕшĕ çинчен мĕн пĕлнине çирĕплетесси. 2. Сăмахсемпе пуплевре (калаçура, çырура) тĕрĕс усă курма хăнăхтарасси. 3. Ачасене хальхипе иртнĕ пурнăç улшăнăвне, лайăх енĕсемпе çитменлĕхĕсене курма пулăшасси.

**Урок тĕсĕ: содержани тăрăх** – лексика урокĕ; **тĕллевне кура** – çирĕплетӳ урокĕ; **формине кура** – яланхи йĕркепе ирттерекен урок.

**Вĕрентӳ меслечĕсемпе ĕç хатĕрĕсем:** Л.П.Сергеев. Грамматика ваййисем, 2008.

Словарь ĕçĕ: ***ӳпкеле*** – *ӳпкелеш,* ***факт*** – *фактор,* ***мăн кăмăллăх*** – *мăнаçлăх,* ***пуçару*** – *пуçарулăх,* ***сулнă*** – *вырнă,* ***хушăн*** – *хутшăн,* ***койка*** – *кравать.*

**Çыхăнуллă пуплеве аталантарассипе çыхăннă ĕç:** «Пурнăç улшăнăвĕ» темăпа калав йĕркелесси.

### Урок юхăмĕ

**I. Килти ĕçе тĕрĕслени.**

1. Теори материалне пĕтĕмĕшле ыйтса тĕрĕслени.

– Лексика тесе мĕнле наука пайне калаççĕ?

– Сăмахăн лексика пĕлтерĕшĕ çинчен мĕн пĕлнине тĕслĕхсем çине таянса ăнлантарса парăр.

– Сăмахăн грамматика пĕлтерĕшĕ çинчен каласа парăр. Тĕслĕхсемпе çирĕплетĕр.

– Сăмахăн стиль уйрăмлăхĕ пуррине кăтартса парăр. Тĕслĕхсемпе çирĕплетĕр.

– Сăмахăн лексика пĕлтерĕшĕсене ăнлантарма тĕслĕхсемпе усă курăр.

– Сăмахсен лексика пĕлтерĕшĕсене курма мĕнле словарьсем май параççĕ?

– Словарь статйисен тытăмĕ çинчен мĕн пĕлетĕр?

– Чăваш чĕлхин сăмах йышне мĕнле словарьсем палăртаççĕ?

2. Кроссвордпа ĕçлени. Икĕ-виçĕ ача килте хатĕрлесе килнĕ кроссворда доска çине ӳкерет, ыттисем вĕсен тупсăмне тупаççĕ.

**II. Вĕреннине çирĕплетни.**

1. Хăнăхтарусемпе ĕçлени.

343-мĕш хăнăхтару. Пĕр ача доска умĕнче, ыттисем хăйсем тĕллĕн ĕçлеççĕ. Ĕçре чăвашла-вырăсла тата вырăсла-чăвашла словарьсемпе усă кураççĕ. Доска умĕнчи ачан ĕçне класпа пĕрле тĕрĕслеççĕ.

347-мĕш хăнăхтару. Кашни ача пĕрер сăмахпа ĕçлет.

346-мĕш хăнăхтару.

2. Предложенисем туни. Ачасем панă сăмахсене пĕлтерĕш енчен çывăх сăмахсемпе улăштарса предложенисем тăваççĕ. Предложенисен шухăшĕ улшăннипе улшăнманнине сăнаççĕ.

Ешĕл, ачаш, çўллĕччĕ, вĕт шакăрсем, пайăрки-сăннисенчен, хўтĕленеттĕмĕр, хўми, тĕксĕм, тăтăшах, ырăпа.

3. Воспитани тĕллевне пурнăçлани (340-мĕш хăнăхтару).

– Ўкерчĕксене сăнăр. Вĕсен ячĕсене хăвăр тĕллĕн калама тăрăшăр.

– Паянхи кун çак япаласем пуррипе çуккине палăртăр. Вĕсемпе пурнăçра епле усă курни çинчен калăр.

– 7, 13-мĕш ўкерчĕксенчи япаласем çынна мĕн тума кирлĕ пулнă? Ку япаласемпе паянхи çынсем усă кураççĕ-и? *Ленкер* вырăнне паянхи пурнăçра мĕн йышăннă?

– 5–6, 10, 12-мĕш ўкерчĕксене сăнăр, вĕсенче мĕнле пĕр пеклĕхпе уйрăмлăх куратăр? Ўкернĕ япаласенчен сире хăшĕ ытларах кăмăла кайрĕ? Мĕншĕн?

– Хăш япаласемпе эпир паян кун та усă куратпăр? Ячĕсене пĕлетĕр-и? *(8 – шăвăшлăх, 2 – какăр, 4 – нирке, 7 – ленкер, 10 – хўме, 12 – тĕкме.)*

– 6-мĕш ўкерчĕкре кăтартнине тата миçемĕш ўкерчĕкре курма пулать? Унта мĕн ўкернĕ?

– Укăлча тенине мĕнле ăнланатăр? Вăл ĕлĕкхи ял çыннисен пурнăçĕнче мĕнле вырăн йышăннă? Хальхи вăхăтра укăлчаллă ялсем пур-и? 11-мĕш ўкерчĕке пăхсан сирĕн чунра мĕнле туйăм çуралчĕ?

– Ĕлĕкхи çынсен ал ăсталăхĕ паянхи çынсен ăсталăхĕнчен пысăкрах пулнă-и е пĕчĕкрех пулнă? Мĕнле шутлатăр? Шухăшăра тĕслĕхсемпе ĕнентерме тăрăшăр.

– Çак ўкерчĕксене пăхса сирĕн мĕн ăсталама вĕренес килчĕ?

– Сирĕн хальхи вăхăтра та ўкерчĕкри хăш япаласене сыхласа хăварас килет? Мĕншĕн?

– Хăш ӳкерчĕке пăхсан темле асамлăх, вăрттăнлăх пурри сисĕнет? Мĕнпе çыхăннă çак туйăм?

– Хальхи пурнăç пуянланса, лайăхланса пынипе пĕрлех çынсен пурнăçĕшĕн сиенлĕ, кирлĕ мар япаласем те нумайлансах пыни мĕнре, ăçта палăрать? Ку пулăмсем çине эсир мĕнле пăхатăр? Хăвăр шухăшăра тĕслĕхсемпе çирĕплетсе парăр.

– Ĕлĕкхипе паянхи яла, пурнăçа танлаштарса, çав улшăнăвăн лайăх енĕсемпе çитменлĕхĕсене палăртса сăмах вĕççĕн калав йĕркелĕр.

4. «Тупсăмне шырăр» вăйă ирттерни. Вăйă материалне Л.П. Сергеевăн «Грамматика вăййисем» кĕнекинче тупма пулать.

5. Сăмах диктанчĕ çырни: *ӳпкеле – ӳпкелеш, факт – фактор, мăн кăмăллăх – мăнаçлăх, пуçару – пуçарулăх, çулнă – вырнă, хушăн – хутшăн, койка – кравать.* Сăмахсене мĕнле тата мĕншĕн çавăн пек çырмаллине ăнлантарăр; пĕлтерĕшри пĕрешкеллĕхпе уйрăмлăха уçса парăр; сăмахсен ăнлантаруллă словарьне тăвăр; панă сăмахсемпе пĕрер предложени йĕркелĕр.

Т ĕ с л ĕ х р е н: *ӳпкеле – ӳпкелеш.* Çак глаголсен пĕр пек пĕлтерĕшĕ – кăмăлсăр пулнине палăртни. Çав вăхăтрах сăмахсем хушшинче уйрăмлăх та пур: *ӳпкеле* кама та пулин пĕр-пĕр айăпшăн сăмахпа тĕксе илнине, асăрхаттарнине, *ӳпкелеш* ху мĕн пирки те пулин кăмăлсăр пулнине палăртать. *(Кама ӳпкелеш* мар, *мĕн пирки те пулин ӳпкелеш. Кама вара ӳпкелес.)*

Çапла ĕнтĕ, *ӳпкеле* куçăмлă, *ӳпкелеш* куçăмсăр глагол. Апла пулсан – вĕсемпе пуплевре пĕр-пĕрин вырăнне усă курни тĕрĕс мар.

*Пуçару – пуçарулăх.* Пĕр тĕпрен пулнă сăмахсем пулин те, пĕлтерĕшĕпе кăшт раснарах: *пуçару* – кам та пулин пĕр-пĕр ырă (паха) ĕç пуçарса яни; *пуçарулăх* – кам та пулин кирек хăçан та пуçару кăтартма пултарни, активлăх.

*Çулнă – вырнă.* Ку сăмахсем тыр-пул пуçтарса кĕртнĕ чух мĕнпе, мĕнле ĕçленине, ĕç процесне палăртаççĕ, анчах *çулнă* сăмах çавапа çулнине, *вырнă* сăмах çурлапа вырнине палăртать.

*Хутшăн – хушăн.* Пĕр пек пĕлтерĕшĕ – пĕрлешнине палăртни, анчах уйрăмлăх та пур: *ĕçе хутшăн (хушăн мар), выставкăна хутшăн, пиллĕк çумне иккĕ хушăнчĕ.*

## III. Урока пĕтĕмлетни.

1. Урока ачасемпе пĕтĕмлетни.

– *Ентешлĕх, юлташлăх* сăмахсен пĕлтерĕшĕсене мĕнле майпа ăнлантарма пулать?

– Сăмахсен пĕлтерĕшне тата мĕнле мелсемпе ăнлантарма май пур? Тĕслĕхсемпе ҫирĕплетĕр.

– *Чĕкеҫ* сăмахăн лексика тата грамматика пĕлтерĕшĕсене уҫса парăр.

2. Ачасен ĕҫне хаклани.

**IV. Киле ĕҫ пани.**

36§; «Пурнăҫ улшăнăвĕ» темăпа пĕчĕк калав ҫырмалла.

## *67-мĕш урок.* Пĕр пĕлтерĕшлĕ тата нумай пĕлтерĕшлĕ сăмахсем (37§)

**Урок тĕллевĕсем:** 1. Пĕр пĕлтерĕшлĕ тата нумай пĕлтерĕшлĕ сăмахсем ҫинчен вĕрентесси. 2. Пĕр пĕлтерĕшлĕ тата нумай пĕлтерĕшлĕ сăмахсемпе пуплевре (калаҫура, ҫырура) тĕрĕс усă курма хăнăхтарасси. 3. Ачасене паянхи ĕҫе ырана хăварма юраманнине ăнланса илме пулăшасси.

**Урок тĕсĕ: содержани тăрăх** – лексика урокĕ; **тĕллевне кура** – ҫĕнĕ темăна вĕрентмелли урок; **формине кура** – яланхи йĕркепе ирттерекен урок.

**Вĕрентӳ меслечĕсем:** индукци-дедукци меслечĕ, учитель ăнлантарăвĕ.

**Словарь ĕҫĕ:** *пулă – пулли, кулă – кулли, тĕвĕ – тĕвви (пĕрчĕ тĕвви, ҫип тĕвви, ҫĕнĕ пурнăҫ тĕвви, ҫемье тĕвви).*

### Урок юхăмĕ

**I. Килти ĕҫе тĕрĕслени.**

1. Теори материалне уйрăм ачаран ыйтса тĕрĕслени.

2. Килте ҫырнă калава вулани. Пĕр-икĕ ача вуласа парать, ыттисен тетрачĕсене учитель пуҫтарса илет.

**II. Ҫĕнĕ темăна вĕрентни.**

1. Кĕнекери чĕлхе материалне тишкерни.

Вĕренекенсем малтан ӳкерчĕксенчи япаласем (е палăртнă сăмахсем) мĕн енчен ҫывăх пулнине, ку е вăл сăмахăн пĕлтерĕшĕ миҫе пулнине каласҫĕ, унтан учитель пулăшнипе пĕтĕмлетӳ тăвасҫĕ.

2. Теори материалне ăнлантарни.

**III. Вĕреннине ҫирĕплетни.**

1. Хăнăхтарусемпе ĕҫлени.

348, 351–352-мĕш хăнăхтарусем.

348-мĕш хăнăхтару. Паллă тунă сăмахсемпе *(тĕвĕ – тĕвви, пулă – пулли, кулă – кулли)* сăмах диктанчĕ çырни. Çакăн евĕрлĕ тĕслĕхсене ачасем хăйсем те тупаççĕ. Кайран ачасем асăннă виçĕ тĕслĕхпе сăмах майлашăвĕсем йĕркелесе çыраççĕ те вĕсен пĕлтерĕшне ăнлантарса параççĕ. Тĕслĕхрен: *пĕрчĕ тĕвви, çип тĕвви, çĕнĕ пурнăç тĕвви, çемье тĕвви.*

2. Вопитани тĕллевне пурнăçлани. (350-мĕш хăнăхтару.) Ку хăнăхтарура «Çу кунĕ çулталăк тăрантарать» текен шухăша асра тытса кашни ĕçĕн хăйĕн вăхăчĕ пулнине палăртмалла. Ачасен паянхи кун тĕп тĕллевĕ вĕренесси пулнине кăтартса хăвармалла. Паян вĕренни кайран кирлĕ пулнине ăнлантармалла. Ĕçе ыйту-хурав мелĕпе йĕркелемелле.

**IV. Урока пĕтĕмлетни.**

1. Урока ачасемпе пĕтĕмлетни.

– Пĕр пĕлтерĕшлĕ тата нумай пĕлтерĕшлĕ сăмахсем тесе мĕнле сăмахсене калаççĕ? Шухăшăра тĕслĕхсемпе çирĕплетĕр.

2. Ачасен ĕçне хак пани.

**V. Киле ĕç пани.**

37§; 349-мĕш хăнăхтару.

## *68-мĕш урок.* Пуплев этикечĕ

**Урок тĕллевĕсем:** 1. Ачасене пуплев этикетне вĕрентесси. 2. Пуплев этикечĕн уйрăмлăхĕсене пăхăнса калаçăва тĕрĕс йĕркелеме, тĕрлĕ лару-тăрура сăмахсемпе вырăнлă усă курма хăнăхтарасси. 3. Ачасене çынсем хушшинчи хутшăну правилисемпе паллаштарнă май çав уйрăмлăхсене шута илме хăнăхтарасси.

**Урок тĕсĕ: содержани тăрăх** – лексика урокĕ; **тĕллевне кура** – çĕнĕ темăна вĕрентмелли урок; **формине кура** – яланхи йĕркепе ирттерекен урок.

**Вĕрентӳ меслечĕсемпе ĕç хатĕрĕсем:** калаçу, ИКТ, слайдсем, телефон.

**Словарь ĕçĕ:** этикет хутшăнăвĕн сăмахĕсем.

## Урок юхăмĕ

**I. Килти ĕçе тĕрĕслени.**

1. Теори материалне ачасенчен ыйтса тĕрĕслени.

– Пĕр пĕлтерĕшлĕ сăмахсем тесе мĕнле сăмахсене калаççĕ? Шухăшăра тĕслĕхсемпе çирĕплетĕр.

– Мĕнле сăмахсене нумай пĕлтерĕшлĕ сăмахсем теççĕ? Тĕслĕхсемпе усă курса ăнлантарăр.

– Нумай пĕлтерĕшлĕ сăмахсем пĕр пĕлтерĕшлисенчен мĕнпе уйрăлса тăраççĕ?

– Сăмахсен тĕрлĕ пĕлтерĕшне мĕнле словарьсенче уçса кăтартаççĕ?

2. 349-мĕш хăнăхтарăва уйрăм ачана вулаттарса тĕрĕслени.

**II. Çĕнĕ темăна вĕрентни.**

1. Пуплев этикечĕ çинчен ăнлантарни.

Ку урока яланхи йĕркепе е проект формипе, е ИКТ элеменчĕсемпе усă курса йĕркелеме пулать. Кунта вĕрентекенĕн пуплев этикечĕпе çыхăннă ăнлантаруллă калаçăвĕпе ачасен шухăш-кăмăлĕ пысăк вырăн йышăнма тивĕç.

2. 353–354-мĕш хăнăхтарусем.

**III. Вĕреннине çирĕплетни.**

Пуплев этикечĕпе çыхăннă ĕçсем туни.

1) Телефонпа калаçнă чух эсир сăмаха мĕнле пуçласа яратăр? Калаçу пуçламăшĕн тĕрĕс варианчĕсене суйласа илĕр, телефонпа калаçнине малалла тăсса çырăр. Ыр кăмăллăха палăртакан сăмахсемпе май пур таран нумайрах усă курма тăрăшăр.

«Ку кам?», «Кам калаçать?», «Сире кам кирлĕ?» «Алло!»; «Итлетĕп», «Сывлăх сунатăп!», «Каçарăр, тархасшăн, мана Григорий Николаевич кирлĕччĕ».

2) Текстăн чĕлхине (стильне), тĕсне палăртăр. Çынсем пĕр-пĕринпе паллашасси çирĕп йĕркене пăхăнмалла. Çак икĕ вариантран тĕрĕсси, этикет правилине пăхăнаканни хăшĕ? Мĕншĕн эсир суйласа илнĕ вариант тĕрĕс тесе шутлатăр?

1-мĕш вариант

Наташа. Лида, акă паллаш: ку манăн хĕр тантăш Нина. Эпир унпа институтра пĕр курсра вĕренетпĕр. *(Нина енне çаврăнса.)* Нина, ку манăн йăмăк Лида. Вăл педучилищĕре иккĕмĕш курсра вĕренет. *(Хĕр ачасем пĕр-пĕрне сывлăх сунаççĕ.)*

2-мĕш вариант

Наташа. Нина, акă паллашăр: ку манăн йăмăк Лида. Вăл педучилищĕре иккĕмĕш курсра вĕренет. *(Лида енне çаврăнса.)* Лида, ку манăн хĕр тантăш Наташа. Эпир унпа институтра пĕр курсра вĕренетпĕр. *(Хĕр ачасем пĕр-пĕрне сывлăх сунаççĕ.)*

Çак икĕ вариантран тĕрĕсреххи е этикет правилине пăхăнаканни – иккĕмĕшĕ: унта чи малтан аслăраххине (Нинăна) кĕçĕнреххипе (Лидăпа) паллаштарнă. Этикет çул шучĕпе аслăрах çынсене ытларах хисеплеме ыйтать. Çакна иккĕмĕш вариантра курма пулать. Асăннă йĕркене арçын ачапа хĕр ачана паллаштарнă чухне те тытса пымалла: малтан хĕр ачана арçын ачапа, унтан тин арçын ачана хĕр ачапа паллаштармалла.

3) *-Çăм(-çĕм), -ăм(-ĕм)* аффикссемпе усă курса палăртнă сăмахсемпе (вĕсем ачашланине, юратнине, ырланине, хисепленине кăтартаççĕ) предложенисем çырăр. Вуланă чух предложени содержанийĕ интонаципе пĕр килнине сăнăр. Эсир палламан пĕчĕк ачапа, йăмăкăрпа, шăллăрпа калаçнă чух мĕнле чĕнӳ сăмахĕпе усă куратăр?

Тĕслĕх: Йăмăк, кил кунта. – Йăмăкăм, кил кунта.

1) *Атте,* эсĕ паян ăçта пулнă? 2) Ан кай-ха, *Марина,* çак задачăна шутлама пулăшсам мана, тархасшăн. 3) *Атте,* мĕн эс пуçна усса ларатăн? 4) Эй, *ырă хуçа,* эй, *Çтаппан хуçа!* 5) Тавтапуçах сире, *тăвансем,* мана ура çине тăма пулăшрăр. 6) Чăтăмлă пул ĕнтĕ пăртак, *мучи.*

## IV. Урока пĕтĕмлетни.

1. Урока ачасемпе пĕтĕмлетни.

– Пĕр-пĕринпе хутшăннă чухне пирĕн мĕне-мĕне шута илмелле? Хамăрăн мĕнле пулмалла?

– Пуплев этикечĕпе çыхăнтарса хăвăр валли паян мĕн палăртса хутăр?

– Çынсем хушшинчи хутшăну уйрăмлăхĕсенчен сире хăшĕ килĕшрĕ? Мĕншĕн?

2. Ачасен ĕçне хак пани.

## V. Киле ĕç пани.

37§; «Манăн пуплев этикечĕн хăш енĕсемпе татах та ĕçлемелле?» темăпа пĕчĕк калав çырса килмелле.

## *69-мĕш урок.* **Сăмахсен тӳрĕ тата кусăмлă пĕлтерĕшĕсем (38§)**

**Урок тĕллевĕсем:** 1. Ачасене сăмахсен тӳрĕ тата куçăмлă пĕлтерĕшĕсем çинчен вĕрентесси. 2. Сăмахсен тӳрĕ тата куçăмлă пĕлтерĕшĕсемпе пуплевре (калаçура, çырура) тĕрĕс усă курма хăнăхтарасси. 3. Вĕренекенсене тăван кил, тăван çĕр-шыв пĕлтерĕшне, унăн ăшшине туйса илме пулăшасси.

**Урок тĕсĕ: содержани тăрăх** – лексика урокĕ; **тĕллевне кура** – çĕнĕ темăна вĕрентмелли урок; **формине кура** – яланхи йĕркепе ирттерекен урок.

**Вĕрентӳ меслечĕсемпе ĕç хатĕрĕсем:** индукци-дедукци меслечĕ, учитель ăнлантарăвĕ, калаçу, карточкăсем, «Сăмахăн лексика пĕлтерĕшĕ» таблица.

**Словарь ĕçĕ:** *тăкăс пан улми, тăкăс пир, тăкăс пурнăç; тăвăр пӳлĕм, тăвăр калуш, тăвăр пиншак; ылтăн вăчăра, ылтăн кĕркунне; яка хăма, яка пыр.*

**Çыхăнуллă пуплеве аталантарассипе çыхăннă ĕç:** «Каçхи Атăл» текст тăрăх сăмах вĕççĕн калав йĕркелесси.

### Урок юхăмĕ

**I. Килти ĕçе тĕрĕслени.**

1. Карточкăсемпе ĕçлени. Виçĕ-тăватă ача карточкăпа ĕçлет. 1-мĕш карточкăра панă сăмахсен пĕлтерĕшĕсене ытти сăмахсемпе усă курса ăнлантарăр. Вĕсем пĕр е нумай пĕлтерĕшлĕ сăмахсем пулнине кăтартса тухăр.

Çӳхе (пăр), çӳхе (кĕсье); тĕплĕ (кимĕ), тĕплĕ (ăнлантару), тĕплĕ (пĕлӳ); кĕске (вăхăт), кĕске (вĕрен); пиçĕ (хурама), пиçĕ (хулă), пиçĕ (çын); пушă (витре), пушă (таврăн), пушă (кун), маттур (çын), маттур (яш).

2. Сăмах диктанчĕ çырни, ыйтусене хуравлани.

– Сăмахсен орфографине, пĕлтерĕш уйрăмлăхĕсене ăнлантарăр. Сăмахăн тĕрлĕ пĕлтерĕшне уйăрса илме сире мĕн пулăшрĕ?

Тăкăс пан улми, тăкăс пир, тăкăс пурнăç; тăвăр пӳлĕм, тăвăр калуш, тăвăр пиншак; ылтăн вăчăра, ылтăн кĕркунне; яка хăма, яка пыр.

3. Килте çырнă калавсене тĕрĕслеме пуçтарса илни.

**II. Çĕнĕ темăна вĕрентни.**

1. 356-мĕш хăнăхтарăва туни. Ачасем малтан текста вулаççĕ, унтан юмахри ĕç-пуç мĕншĕн кулăшла пулса тухни, çав кулăша йĕркелеме автора мĕн пулăшни çинчен калаççĕ.

2. Теори материалне ăнлантарни. Çĕнĕ материала индукци-дедукци меслечĕпе усă курса ăнлантарма лайăх. Малтан ачасене хăйсене шухăшлама сĕнмелле. Шухăшĕсене палăртнă хыççăн хăйсенех пĕтĕмлетӳ тума хăнăхтармалла. Юлашкинчен учителĕн материала курăмлăн уçса пама тăрăшмалла.

Ку урокра компьютерпа, ӳкерчĕксемпе, таблицăпа усă курма пулать. Малтан вĕрентекенĕн ачасемпе метафора çинчен мĕн пĕлнине (метафора – пĕр-пĕр япалана тепĕр çавнашкал япала ячĕпе калани) аса илтермелле. Тупмалли юмахсенче метафорăсем час-часах тĕл пулаççĕ: *Чипер хĕр пысăк уйра çӳрет. (Хĕвел.)* Эпир хамăр та калаçура куçăмлă пĕлтерĕшлĕ сăмахсемпе анлă усă куратпăр.

**III. Вĕреннине çирĕплетни.**

1. Хăнăхтарусемпе ĕçлени.

355-мĕш хăнăхтару. Кашни ача пĕрер предложени вулать.

359-мĕш хăнăхтару. Суйлавлă диктант çыраççĕ.

2. Асăрхаттару диктанчĕ çырни. 359-мĕш хăнăхтарури иккĕмĕш хушма ĕçе тăваççĕ.

3. Воспитани тĕллевне пурнăçлани. 357-мĕш хăнăхтару.

4. Аса илӳ диктанчĕ çырни. 357-мĕш хăнăхтару.

**IV. Урока пĕтĕмлетни.**

1. Урока таблица тăрăх пĕтĕмлетни. Тĕслĕхрен, сăмахсене тишкернĕ хыççăн ачасемпе çакăн пек таблица тума пулать.

**Сăмахсен лексика пĕлтерĕшĕ**

| пĕр пĕлтерĕшлĕ | нумай пĕлтерĕшлĕ | тӳрĕ пĕлтерĕшлĕ | куçăмлă пĕлтерĕшлĕ |
|---|---|---|---|
| чӳрече | куç | куç харши | чӳрече харши |

– Сăмахсем лексика пĕлтерĕшĕ енчен пăхсан мĕнле пулма пултараççĕ?

– Нумай пĕлтерĕшлĕ сăмахсем пĕр пĕлтерĕшлисенчен мĕнпе уйрăлса тăраççĕ?

– Куçăмлă пĕлтерĕшлĕ сăмахсен мĕнле уйрăмлăх пур?

– Куçăмлă пĕлтерĕшлĕ сăмахсене хăвăр тупса парăр.

2. Ачасен ĕçне хак пани.

**V. Киле ĕç пани.**

38§; 358-мĕш хăнăхтару.

## *70-мĕш урок.* Сăмахсен тӳрĕ тата куçăмлă пĕлтерĕшĕсем

**Урок тĕллевĕсем:** 1. Сăмахсен тӳрĕ тата куçăмлă пĕлтерĕшĕсем çинчен вĕреннине çирĕплетесси. 2. Сăмахсен тӳрĕ тата куçăмлă пĕлтерĕшĕсемпе пуплевре (калаçура, çырура) тĕрĕс усă курма хăнăхтарасси. 3. Ачасен чунĕнче çут çанталăкпа килĕшӳллĕ пурăнас туйăма вăратасси.

**Урок тĕсĕ: содержани тăрăх** – лексика урокĕ; **тĕллевне кура** – çирĕплетӳ урокĕ; **формине кура** – яланхи йĕркепе ирттерекен урок.

**Вĕрентӳ меслечĕсемпе ĕç хатĕрĕсем:** учитель ăнлантарăвĕ, калаçу; вăрманти пурнăçа туйтаракан шăв-шавпа çыхăннă музыка.

**Словарь ĕçĕ:** *авăн, ампар, ал арманĕ, çил арманĕ, кавăс, сурпан, кĕлет, лаç, кавшă.*

**Çыхăнуллă пуплеве аталантарассипе çыхăннă ĕç:** 361-мĕш хăнăхтарури текст тăрăх сочинени çырасси, куçăмлă пĕлтерĕшлĕ сăмахсемпе усă курса кулăшла пуплевсем йĕркелесси.

### Урок юхăмĕ

**I. Килти ĕçе тĕрĕслени.**

1. Теори материалне уйрăм ачаран ыйтни.
2. Хăнăхтарăва икĕ-виçĕ ачаран ыйтса тĕрĕслени.

**II. Ачасен вĕренӳ хăнăхăвне йĕркелени.**

1. Хăнăхтарусемпе ĕçлени.

362-мĕш хăнăхтару. Кашни тĕслĕхпе уйрăм ача ĕçлет. Ачасене хăйсене малтанхи евĕрлĕ тĕслĕхсем йĕркелеме сĕнмелле.

363-мĕш хăнăхтару. Ачасене чăвашла-вырăсла пысăк словарьти ӳкерчĕксене техника хатĕрĕпе усă курса кăтартмалла.

361-мӗш хӑнӑхтару. Кун евӗрлӗ ӗҫ вӗренекенсене текста тишкерме вӗрентет, вӗсен ҫыхӑнуллӑ пуплевне, шухӑшлавне, пултарулӑхне аталантарма пулӑшать. Малтан текста ачасемпе пӗрле тишкерсе тухмалла: материала ӑнланма, унти илемлӗх мелӗсене курма, уйрӑмах куҫӑмлӑ пӗлтерӗшлӗ сӑмахсене, сӑмах майлашӑвӗсене палӑртма, вӑрманӑн тӗрлӗ сасӑллӑ шавне итлеме пулӑшмалла, унтан писатель чӗлхине тишкерсе пӗтӗмлетӳ тумалла.

Сочинени ҫырнӑ хыҫҫӑн унти куҫӑмлӑ пӗлтерӗшлӗ сӑмахсене аялтан туртса палӑртмалла.

2. Воспитани тӗллевне пурнӑҫлани. 361-мӗш хӑнӑхтару.

**III. Урока пӗтӗмлетни.**

1. Урока ачасемпе пӗтӗмлетни.

– Куҫӑмлӑ пӗлтерӗшлӗ сӑмахсем пуплевре (калаҫура, ҫырура) мӗнле вырӑн йышӑнаҫҫӗ? Вӗсемпе усӑ курни мӗн парать? Тӗслӗхсемпе ӑнлантарӑр.

2. Ачасен ӗҫне хак пани.

**IV. Киле ӗҫ пани.**

38§; 360-мӗш хӑнӑхтару.

## *71-мӗш урок.* Омонимсем (39§)

**Урок тӗллевӗсем**: 1. Ачасене омонимсем ҫинчен вӗрентесси. 2. Омонимсемпе пуплевре (калаҫура, ҫырура) тӗрӗс усӑ курма хӑнӑхтарасси. 3. «Тӑван кил пур ҫынсем – телейлӗ» текен шухӑша аталантарасси.

**Урок тӗсӗ: содержани тӑрӑх** – лексика урокӗ; **тӗллевне кура** – ҫӗнӗ темӑна вӗрентмелли урок; **формине кура** – яланхи йӗркепе ирттерекен урок.

**Вӗрентӳ меслечӗсемпе ӗҫ хатӗрӗсем**: учитель ӑнлантарӑвӗ, ыйту-хурав, индукци-дедукци меслечӗ, ИКТ, ӳкерчӗксем.

**Словарь ӗҫӗ**: *омоним, контекст, кӗр-ҫур, каялла, хӗр ача, пит ҫӑмарти, ҫурҫӗр, пальто, хушшӑн-хушшӑн, ӳккелеҫҫӗ, тепӗр авӑкран.*

**Ҫыхӑнуллӑ пуплеве аталантарассипе ҫыхӑннӑ ӗҫ**: «Пурнӑҫ улшӑнӑвӗ» темӑпа калав йӗркелесси.

### Урок юхӑмӗ

**I. Килти ӗҫе тӗрӗслени.**

1. Теори материалне класран пӗтӗмӗшле ыйтса тӗрӗслени.

– Мĕнле сăмахсене куçăмлă пĕлтерĕшлĕ сăмахсем теççĕ? Тĕслĕхсемпе çирĕплетĕр.

– Пĕр пĕлтерĕшлĕ сăмахсем пĕлтерĕш енчен куçăмлă-и, тӳрĕ-и?

– Сăмахăн куçăмлă пĕлтерĕшĕсем мĕнле аталанаççĕ? Тĕслĕхсемпе ăнлантарăр.

– Сăмахăн куçăмлă пĕлтерĕшĕ ăçта палăрать?

– Сăмахăн тĕрлĕ пĕлтерĕшне уйăрса илме мĕн пулăшать? Тĕслĕхсемпе ăнлантарăр.

– Чĕрĕ мар япаласене, çут çанталăкри пулăмсене куçăмлă пĕлтерĕшлĕ сăмахсем мĕнле сăнласа кăтартаççĕ?

– Куçăмлă пĕлтерĕшлĕ сăмахсем пуплеве мĕнлерех тума пулăшаççĕ?

2. Хăнăхтарăва уйрăм ачаран ыйтса тĕрĕслени.

**II. Çĕнĕ темăна вĕрентни.**

1. Кĕнекери чĕлхе материалне тишкерни.

Ачасем тупсăмне калаççĕ, пĕр пек илтĕнекен, анчах тĕрлĕ пĕлтерĕшлĕ сăмахсене палăртаççĕ, вĕсемпе пуплевре тĕрĕс усă курма кирли çинчен калаççĕ.

2. Омонимсен чĕлхери пĕлтерĕшне уçса пани.

Омонимсем чĕлхере нумай пулнине, писательсемпе поэтсем ку йышши сăмахсемпе анлă усă курнине палăртса хăвармалла. Чăваш чĕлхинче омонимсем калаçура та, çырура та, литературăра та тĕл пулаççĕ. Каларăшсемпе тупмалли юмахсенче омоним сăмахсемпе анлăн усă кураççĕ: *Пĕлсен те **калăп**, пĕлмесен те **калăп**. **Хур** шăмми тытакан **хур** курман.*

Халăх хăйĕн сăмахлăхĕнче омонимсемпе усă курса калас шухăша çивĕчлетет, сăнарлă, ытарлă тăвать. Меллĕ усă курнă омонимсем çынсен тавра курăмне анлăлатма, шухăшлавне çивĕчлетме пулăшаççĕ.

Илемлĕ произведенисенче омонимсем, метафорăпа метоними, гиперболăпа танлаштару пекех, чĕлхене сăнарлăх кӳреççĕ.

Поэтсем омоним сăмахсемпе усă курса сăмах вăййисем тăваççĕ, унта чылай чух пайăр ят пайăр мар ятпа рифмăланать:

1) Тыткăнларĕ Тукасри
*Укçине,*
Хамах куртăм хутаçри
*Укçине.* *(Т. Иванов-Таçук.)*

2) Пирĕн пĕчĕк *Урине*
Тăрăст! тапрĕ *урине.*

Çынсем ахаль калаçурах омоним сăмахсемпе усă кураççĕ: ***Урам*** *пылчăк пирки* ***урам*** *вараланчĕ.* ***Пăр*** *çинче кĕпе* ***пăр.*** *Кăмакара* ***пăрçа*** *пиçет, урайĕнче* ***пăрçа*** *сикет.* ***Сарă*** *хĕр* ***сарă*** *çакнă.* ***Çирĕм*** *улма* ***çирĕм.*** ***Çу*** *каçиччен* ***çу*** *хатĕрле. Эсĕ* ***туй*** *килнине* ***туй.*** Сайра хутра янăравлăха ÿстерме тата калас шухăша кулăшларах тума пайăр ятсене сăмах майлашăвĕсемпе хирĕçлетеççĕ:

– Ну-ка, – терĕ, – ăнлантар, *Антун,*
Мĕншĕн панăччĕ сана çакна?
Мĕншĕн тетĕп-çке. Кала, *ан тун. (Н. Евстафьев.)*

**III. Вĕреннине çирĕплетни.**

1. Хăнăхтарусемпе ĕçлени.

364–365, 367–368-мĕш хăнăхтарусем.

368-мĕш хăнăхтару. Воспитани тĕллевне пурнăçлани.

368-мĕш хăнăхтару. Ирĕклĕ диктант çырни.

2. Сăмах диктанчĕ: *кĕр-çур, каялла, хĕр ача, пит çăмарти, çурçĕр, пальто, хушшăн-хушшăн, ÿккелеççĕ, тепĕр авăкран.*

– Сăмахсене мĕнле тата мĕншĕн çавăн пек çырмаллине, хăшĕсем омоним пулма пултарнине ăнлантарăр.

**IV. Урока пĕтĕмлетни.**

1. Урока ачасемпе пĕтĕмлетни.

– Мĕнле сăмахсене омонимсем теççĕ?

– Мĕнле сăмаха нумай пĕлтерĕшлĕ сăмах теççĕ?

– Омонимсемпе нумай пĕлтерĕшлĕ сăмахсем пĕр-пĕринчен мĕнпе уйрăлса тăраççĕ?

2. Ачасен ĕçне хак пани.

**V. Киле ĕç пани.**

39§; 369-мĕш хăнăхтару.

## *72-мĕш урок.* Омонимсем

**Урок тĕллевĕсем:** 1. Омонимсем çинчен вĕреннине çирĕплетесси. 2. Омонимсемпе пуплевре (калаçура, çырура) тĕрĕс усă курма хăнăхтарасси. 3. Ĕлĕкхи çынсен пурнăçĕпе, вĕсен ĕçĕ-хĕлĕпе, культурипе паллаштарасси.

**Урок тĕсĕ: содержани тăрăх** – лексика урокĕ; **тĕллевне кура** – çирĕплетÿ урокĕ; **формине кура** – яланхи йĕркепе ирттерекен урок.

**Вĕрентӳ меслечĕсемпе ĕç хатĕрĕсем:** «Мĕнле сăмах?» вăййă, çыру ĕçĕсемпе хăнăхтарусем, калаçу.

**Словарь ĕçĕ:** *хутмалла, типĕтмелле, тылламалла, шăртламалла, арламалла, хутăрмалла, кăнтармалла, тĕртмелле, çумалла, сармалла.*

**Çыхăнуллă пуплеве аталантарассипе çыхăннă ĕç:** «Хĕр ача» текст тăрăх изложени çырасси, омонимсемпе усă курса сăвă çаврăмĕсем хайласси.

## Урок юхăмĕ

**I. Килти ĕçе тĕрĕслени.**

1. Теори материалне уйрăм ачаран ыйтса тĕрĕслени.

2. Хăнăхтарăва ачасене пĕрер предложени вулаттарса тĕрĕслени.

**II. Ачасен вĕренӳ хăнăхăвĕсене аталантарни.**

1. Хăнăхтарусемпе ĕçлени.

372–373-мĕш хăнăхтарусем.

370-мĕш хăнăхтару. Тăваттăмĕш предложенипе усă курса воспитани тĕллевне пурнăçлани.

2. Сăмах диктанчĕ çырни. Кĕнекере панă сăмахсемпе *(повар, горчица, хутмалла, типĕтмелле, тылламалла)* усă курмалла.

3. «Мĕнле сăмах?» вăййă ирттерни. Панă сăмахсенчен омонимсем пулакан сăмах майлашăвĕсем тумалла, пĕлтерĕшне ăнлантармалла. Ĕçе ушкăнсемпе ăмăрту евĕр тăваççĕ. Çак ĕçе хăш ушкăн чи малтан тĕрĕс туса пĕтерет, вăл вăйăра çĕнтерет.

1) Хут, йăва, шан, ирт, вĕр, вăрă, карас, хур, чĕлхе, шут, пăрçа, кил, ăвăс, салат, пусма.

2) Шăрчăк, шăпăр, сулă, çăра, çур, каç, çул, çĕр, туй, ут, урам, пăр, çу, çирĕм, тир.

Тĕслĕхрен: *икĕ хут – шурă хут; кайăк йăви – тутлă йăва; малалла ирт – лайăх ирт (тасат)* т.ыт.те.

4. Изложени çырни. 366-мĕш хăнăхтарура панă текст – сăнлавăн ансат тĕслĕхĕ. Ăна тишкерсе ачасем хитре сăнлăх-ӳкерчĕксем тума хăнăхаççĕ.

**III. Урока пĕтĕмлетни.**

1. Урока ачасем пĕтĕмлетни.

– Писательсемпе поэтсем омонимсемпе хăçан, мĕн тĕллевпе усă кураççĕ?

– Каларăшсемпе тупмалли юмахсенче омонимсем анлă тĕл пулни мĕнпе çыхăннă? Тĕслĕхсемпе çирĕплетĕр.

2. Ачасен ĕçне хак пани.

**IV. Киле ĕç пани.**

39§; омонимсемпе усă курса сăвă çаврăмĕсем йĕркелеме тăрăшăр.

Тĕслĕх: Хĕвел хĕртет. Пахчаçă *Уçăп*
Пахча та вăрлăх тĕрĕслет.
«Тепре, тен, выставка та *уçăп*», –
Тесе кăçал ĕмĕтленет. *(П. Хусанкай.)*

## *73-мĕш урок.* Синонимсем (40§)

**Урок тĕллевĕсем:** 1. Ачасене синонимсем çинчен вĕрентесси. 2. Синонимсемпе пуплевре (калаçура, çырура) тĕрĕс усă курма хăнăхтарасси. 3. Таçта аякра вăрçă хирĕнче аманнă салтакшăн тăван чĕлхепе çырнă кĕнеке мĕн тери паха пулнине туйса илме май парасси.

**Урок тĕсĕ: содержани тăрăх** – лексика урокĕ; **тĕллевне кура** – çĕнĕ темăна вĕрентмелли урок; **формине кура** – яланхи йĕркепе irttерекен урок.

**Вĕрентÿ меслечĕсемпе ĕç хатĕрĕсем:** ыйту-хурав, индукци-дедукци меслечĕ, калаçу, çыру ĕçĕсемпе хăнăхтарусем.

**Словарь ĕçĕ:** *синоним, почтальон, кăранташ, область, облаçăн, самолет.*

### Урок юхăмĕ

**I. Килти ĕçе тĕрĕслени.**

1. Çырма парса янă ĕçе уйрăм ачасенчен ыйтса тĕрĕслени. Ăнăçлă ĕçсене шкул, район хаçатĕнче пичетлеме тăрăшмалла.

2. «Омоним» темăна ыйтусем парса аса илни.

– Мĕнле хисеп ячĕ глаголпа пĕр килет? *(Çĕр.)*

– Мĕнле патшалăх ячĕ тăхăнмалли япала ячĕпе пĕр? *(Панама.)*

– Мĕнле сăмах тыр-пула тата куç чирне пĕлтерет? *(Урпа.)*

**II. Çĕнĕ темăна вĕрентни.**

1. Чĕлхе материалне тишкерни.

– Панӑ предложенисенчи пӗр япаланах кӑтартакан сӑмахсене тупӑр.

1) Ырӑ кӳршӗ ҫур пурнӑҫ теҫҫӗ. 2) Пускил усал пулсан пурнӑҫ саланасси те инҫе мар. *(А. Артемьев.)*

*Кӳршӗ* тесе анатри чӑвашсем, *пускил* тесе тури чӑвашсем калаҫҫӗ. *Кӳршӗ, пускил* – синоним сӑмахсем.

2. Теори материалне ӑнлантарни. Вӗрентекен теори материалне ӑнлантарать, тӗслӗхсемпе усӑ курса синонимсен стиль сӗмӗсене туйса илме май парать, синоним словарӗсемпе паллаштарать, синонимсен пуплеври пӗлтерӗшне палӑртать.

Кирек мӗнле чӗлхе те сионимсемпе пуян. Ҫак пуянлӑхпа кирлӗ пек усӑ курма синонимсен виҫӗ тӗллевӗ пуррине пӗлмелле:

а) пӗр сӑмахах темиҫе хут каласран асӑрханни: ***Пысӑк** ҫуртсем хушшипе **капмар** крансен хусканӑвӗ курӑнать;*

ӑ) шухӑша тӗрӗс уҫса пама пулӑшни:

1) Килчӗ *ырӑ* ҫуркунне,
Килчӗ ячӗ ӑшӑтса. *(К. Иванов.)*

2) *Чипер* ача Сетнерӗн
Пӗр урхамах лаши пур. *(К. Иванов.)*

Ку йӗркесенче *ырӑ, чипер* сӑмахсем – синонимсем, анчах вӗсем пур чухне те пӗр-пӗрин вырӑнне ҫӳреме пултараймаҫҫӗ. Тӗслӗхрен, *Килчӗ **чипер** ҫуркунне* тени вырӑнлах мар.

б) стиль уйрӑмлӑхӗсене палӑртни:

Чипер каччӑ Тӑхтаман
Силпи хӗрне ҫаклатнӑ. *(К. Иванов.)*

Юлашки тӗслӗхре *чипер* сӑмах *лайӑх – ырӑ – аван – хитре* сӑмахсемпе пӗр синоним ретне кӗрет пек, анчах та текстра унпа тӑрӑхлама усӑ курнӑ. Ку вӑл шӳтлӗ стилӗн палли пулса тӑрать.

3. Синонимсен пуплеври пӗлтерӗшне палӑртни. Кашни писатель, поэт синонимсемпе хӑй евӗрлӗ усӑ курать. Чылай чухне синонимсене пӗр сӑвӑ йӗркинех темиҫе кӗртнине, ҫапла майпа калас шухӑша ӗнентерӳллӗрех тунине асӑрхама пулать.

1) Ӗҫ пултӑр *тирпейлӗ, таса* та *хитре. (П. Хусанкай.)* 2) Тӑшман тӳсеймест, вӑл *чакать,* вӑл *тарать. (П. Хусанкай.)* 3) *Тӑрӑхлаҫҫӗ, кулаҫҫӗ* кӑна. *(П. Хусанкай.)*

Пĕрремĕш тĕслĕхре *тирпейлĕ, таса, илемлĕ* синонимсем пĕр тан пĕлтерĕшлĕ мар пулин те, юнашар тăрса шухăша витĕмлĕрех тăваççĕ.

Иккĕмĕш тĕслĕхре *чакать, тарать* сăмахсем, пулса иртекен ĕçĕн хăвăртлăхне палăртса, вулакан умне уçăмлă сăнлăх кăларса тăрататççĕ. *Тўсеймест* сăмахпа поэт тăшман çапăçма пултарайманнине палăртать. Тăшман *чакать* кăна мар, çаврăнса пăхмасăр *тарать.*

Виççĕмĕш тĕслĕхри *тăрăхлаççĕ, кулаççĕ* синонимсем пĕр ретре тăрса пĕр-пĕрин пĕлтерĕшне вăйлатаççĕ, каланине ĕнентерўллĕрех тăваççĕ.

**III. Вĕреннине çирĕплетни.**

1. Хăнăхтарусемпе ĕçлени.

374, 376–377, 379-мĕш хăнăхтарусем.

2. Воспитани тĕллевне пурнăçлани. 375-мĕш хăнăхтару.

3. Сăмах диктанчĕ: *почтальон, кăранташ, область, облаçăн, самол,т.*

**IV. Урока пĕтĕмлетни.**

1. Урока ачасемпе пĕтĕмлетни.

– Стиль уйрăмлăхĕсене туйма май паракан синонимсен тĕслĕхĕсене тупса парăр.

- Синонимсем тесе мĕнле сăмахсене калаççĕ? Тĕслĕхсемпе çирĕплетĕр.

– *Кала – ĕнентер; лаша – урхамах – çил çунат; ĕç – сып – лакка* синонимсем хушшинчи уйрăмлăхсене палăртăр, вĕсем пĕр-пĕринчен мĕнпе уйрăлса тăраççĕ? (Урăх стильре усă курнипе тата пĕлтерĕш сĕмĕсем урăхларах, кăшт хирĕçлерех пулнипе уйрăлса тăраççĕ. Синоним ретне сăмах майлашăвĕ те кĕме пултарать.)

2. Ачасен ĕçне хак пани.

**V. Киле ĕç пани.**

40§; 383-мĕш хăнăхтару.

## *74-мĕш урок.* Синонимсем

**Урок тĕллевĕсем:** 1. Синонимсем çинчен вĕреннине çирĕплетесси. 2. Синонимсемпе пуплевре (калаçура, çырура) тĕрĕс усă курма хăнăхтарасси. 3. Çут çанталăк илемне курма, çав илеме туйса илме пулăшасси.

**Урок тĕсĕ: содержани тăрăх** – лексика урокĕ; **тĕллевне кура** – çирĕплетӳ урокĕ; **формине кура** – яланхи йĕркепе ирттерекен урок.

**Вĕрентӳ меслечĕсемпе ĕç хатĕрĕсем:** ыйту-хурав мелĕ, калаçу, чĕлхе тишкерĕвĕ, çыру ĕçĕсемпе хăнăхтарусем, пĕр-пĕр уçланка сăнласа кăтартакан ӳкерчĕк.

**Çыхăнуллă пуплеве аталантарассипе çыхăннă ĕç:** 384-мĕш хăнăхтарури текст тăрăх сăмах вĕççĕн калав йĕркелесси.

## Урок юхăмĕ

### I. Килти ĕçе тĕрĕслени.

1. Теори материалне класран пĕтĕмĕшле ыйтса тĕрĕслени.

– Синонимсем тесе мĕнле сăмахсене калаççĕ? Тĕслĕхсемпе çирĕплетĕр.

– Стиль уйрăмлăхĕсем тесе мĕне калаççĕ? Тĕслĕхсемпе çирĕплетĕр.

– Пуплевре синонимсем мĕнле тĕллеве пурнăçлама пулăшаççĕ? (Пĕр сăмаха тепĕр хут калассинчен хăтараççĕ; калаçăва илемлĕ те сăнарлă тăваççĕ; шухăша тĕрĕс уçса пама пулăшаççĕ; стиль уйрăмлăхĕсене палăртма май параççĕ.)

2. 383-мĕш хăнăхтарăва тĕрĕслени.

### II. Вĕреннине çирĕплетни.

1. Хăнăхтарусемпе ĕçлени.

378-мĕш хăнăхтару. Кашни ача пĕрер предложени вуласа парать.

380-мĕш хăнăхтару. Сăмах вĕççĕн тăваççĕ.

382-мĕш хăнăхтару. Текстăн чĕлхине тишкерни ачасене сăнарлă ӳкерчĕксем тума хăнăхтарать.

2. Воспитани тĕллевне пурнăçлани. 384-мĕш хăнăхтару.

Предложенисенчи шухăша уçса панă чухнехи сăмахсен пĕлтерĕшне кăтартса хăварма тăрăшмалла. Текст ачасене сăнлав формипе ĕçлеме хăнăхтарать.

### III. Урока пĕтĕмлетни.

1. Урока ачасемпе пĕтĕмлетни.

– Çак сăмах майлашăвĕсенчи паллă ячĕсене синонимсемпе ылмаштарăр: *хăюллă ача, ăшă кун, илемлĕ чечек, савăнăçлă кунсем, симĕс çаран, тăрă шыв, самăр сысна, вăйлă çын, кăвак тӳпе, капмар çуртсем, ырă этем, тирпейлĕ çын.*

2. Ачасен ёçне хак пани.

**IV. Киле ĕç пани.**

40§; 385-мĕш хăнăхтару.

## *75-мĕш урок.* Антонимсем (41§)

**Урок тĕллевĕсем:** 1. Ачасене антонимсем çинчен вĕрентесси. 2. Антонимсемпе пуплевре (калаçура, çыру-ра) тĕрĕс усă курма хăнăхтарасси. 3. Çын пурлăхне хапсăннин, çынна улталама тăрăшнин киревсĕрлĕхне ăнланма пулăшасси.

**Урок тĕсĕ: содержани тăрăх** – лексика урокĕ; **тĕллевне кура** – çĕнĕ темăна вĕрентмелли урок; **формине кура** – яланхи йĕркепеирттерекен урок.

**Вĕренту меслечĕсемпе ĕç хатĕрĕсем:** индукци-дедукци меслечĕ, калаçу, ИКТ, «Мĕнле?» вăйă.

**Словарь ĕçĕ:** *антоним.*

### Урок юхăмĕ

**I. Килти ĕçе тĕрĕслени.**

1. Теори материалне уйрăм ачаран ыйтса тĕрĕслени.
2. Килте çырнă калава тĕрĕслеме пуçтарса илни.
3. Суйлав диктанчĕ çырни. Предложенисене вуласа тишкернĕ май унта тĕл пулакан синоним сăмахсене çырса илĕр, вĕсен пĕлтерĕш сĕмĕсене ăнлантарăр, мĕнле пуплев пайĕ пулнине калăр.

1) Мана хам *тăн* та çитет. 2) Кĕр *мăнтăр,* çур ырхан. 3) *Самăр* йытă хÿрипе вылянтарать. 4) Пăсма пăс кирлĕ, тума *ăс* кирлĕ. 5) Кĕçех алăкра кавăн. пек çаврака питлĕ *шыçмак* хĕрарăм курăнчĕ. 6) Ачасем шкулалла *чупрĕç.* 7) Чăтлăхран утаман сиксе тухрĕ те тÿрех ман çине *ыткăнчĕ.* 8) Борис сĕтел хушшинчен тухса *вăркăнчĕ.*

**II. Çĕнĕ темăна вĕрентни.**

Теори материалне ăнлантарни.

Кĕнекери ÿкерчĕклĕ ĕçе (156 с.) тишкернĕ май темăна уçса пама, ачасене пĕтĕмлетÿ патне илсе пыма тăрăшмалла. Антонимсен пуплеври пĕлтерĕшĕ çинчен учитель каласа парать.

**III. Вĕреннине çирĕплетни.**

1. «Мĕнле?» вăйă irттерни. Учитель япалана пĕлтерекен сăмах калать, ачасем çав япаласен ячĕпе çыхăнакан хирĕçле пĕлтерĕшлĕ паллă ячĕсене тупаççĕ.

Тĕслĕх: *Шыв* – мĕнле? *(тăрă – пăтранчăк; ăшă – сивĕ).*

Сумка, линейка, çĕр улми, хут, çырла, çырма, витре, хĕл, хыпар, çĕклем, яшка, çăмарта.

2. Хăнăхтарусемпе ĕçлени.

386–387, 390–391-мĕш хăнăхтарусем.

390-мĕш хăнăхтару. Воспитани тĕллевне пурнăçлани.

**IV. Урока пĕтĕмлетни.**

1. Урока ачасемпе пĕтĕмлетни.

– Антонимсем тесе мĕнле сăмахсене калаççĕ?

– Тупмалли юмахсенчи антонимсене кăтартăр, юмахсен тупсăмне тупăр:

1) Тутли – шалта, йÿççи – тулта. *(Çарăк.)* 2) Хĕлле ăшă, çулла сивĕ. *(Нÿхреп.)* 3) Чунли тарать, чунсăрри хăвалать. *(Мĕлке.)* 4) Шалашĕ тимĕр, тулашĕ нимĕр. *(Çĕмĕрт.)* 5) Хĕрри хĕрлĕ, варри шурă. *(Хăмла çырли.)* 6) Энтри шалта, пуçĕ тулта. *(Пÿрт пĕрени.)* 7) Ани шурă, вăрлăхĕ хура. *(Кĕнеке.)*

2. Ачасен ĕçне хак пани.

**V. Киле ĕç пани.**

41§; 392-мĕш хăнăхтару.

## *76-мĕш урок.* Антонимсем

**Урок тĕллевĕсем:** 1. Антонимсем çинчен вĕреннине çирĕплетесси. 2. Антонимсемпе пуплевре (калаçура, çырура) тĕрĕс усă курма хăнăхтарасси. 3. Ачасене ваттисем вĕрентсе каланине ăнланма, хисеплесе йышăнма кирлине туйса илме пулăшасси.

**Урок тĕсĕ: содержани тăрăх** – лексика урокĕ; **тĕллевне кура** – çирĕплетÿ урокĕ; **формине кура** – яланхи йĕркепе irттерекен урок.

**Вĕрентÿ меслечĕсемпе ĕç хатĕрĕсем:** калаçу, чĕлхе тишкерĕвĕ, ИКТ, карточкăсем, çыру ĕçĕсемпе хăнăхтарусем.

**Çыхăнуллă пуплеве аталантарассипе çыхăннă ĕç:** 388–389-мĕш хăнăхтарусен тексчĕсем çине таянса «Икĕ юлташ» е «Икĕ пĕр тăван» темăпа пĕчĕк калав çырма хатĕрленесси.

## Урок юхăмĕ

### I. Килти ĕçе тĕрĕслени.

1. Теори материалне уйрăм ачаран ыйтса тĕрĕслени.

– Антонимсем çинчен пĕтĕмĕшле каласа парăр, тĕслĕхсемпе çирĕплетĕр.

2. Хăнăхтарăва икĕ-виçĕ ачана вулаттарса тĕрĕслени. Ачасен пултарулăх ĕçĕсене пухса «Чи лайăх хайлав» курав кĕтесĕ йĕркелеме пулать.

### II. Вĕреннине çирĕплетни.

1. Карточкăсемпе ĕçлени.

1-мĕш карточка

**Нумай пĕлтерĕшлĕ сăмахсен антонимĕсене тупăр.**

Тĕслĕх: *Чĕрĕ* (сывлăш, куç) – *типĕ* сывлăш, *сӳрĕк* куç.

*Йывăр* (çĕклем, хыпар); (урай, вырăн) *сар;* (çиппе, ĕмĕте) *тат; пушă* (машина, кун, вырăн); *тăрă* (шыв, çăмарта, яшка).

2-мĕш карточка

**Синоним тата антоним сăмахсене пĕр-пĕринпе килĕшӳллĕн çырса илĕр.**

1) Пăсăк, çĕмрĕк, ванчăк, юсавлă. 2) Çирĕп, тĕреклĕ, чăтăмлă, хавшак. 3) Тăрă, таса, çутă, пăтранчăк. 4) Хитре, чипер, илемлĕ, капăр, хӳхĕм, сăнсăр. 5) Кас, тат, сып. 6) Ут, кай, çӳре, лĕпĕстет, танкăлтат, тăр.

3-мĕш карточка

**Çак сăмахсен антонимĕсене тупăр, вĕсем хăш пуплев пайĕнчен пулнине кăтартăр.**

Çухат, вĕри, чирлĕ, кул, йӳçĕ, анăç, аслă, ăшăн, тус, тĕрĕс, вăрçă, кĕскел.

2. Хăнăхтарусемпе ĕçлени.

392–393, 395-мĕш, 388–389-мĕш хăнăхтарусем. 388-мĕш хăнăхтарăва тунă чух техника хатĕрĕпе усă курса «Чăвашла-вырăсла словарьти» ӳкерчĕке тишкермелле.

3. Асăрхаттару диктанчĕ çырни. Ваттисен сăмахĕсене çырмалла, вĕсен тытăмне сăнамалла. Антонимсене палăртмалла, вĕсен пуплеври пĕлтерĕшне ăнлантармалла.

1) Пур – пĕрле, çук – çурмалла. 2) Нумайне чăтнине сахалне чăт. 3) Ĕни хура та, сĕчĕ шурă. 4) Çӳрен каска якалнă, выртан каска мăкланнă. 5) Инçе хурсан илме çывăх. 6) Пуçтарма – çулталăк, салатма – çур талăк. 7) Ерипен каян мала тухнă, хытă каян кая юлнă. 8) Ӳркевлĕх ӳкерет, пите пĕçертет; хастарлăх хăтарать, чапа кăларать. 9) Кахалшăн çĕр кĕске, ĕçченшĕн кун кĕске. 10) Ĕç çĕклет, ӳркев ӳкерет. 11) Ăшă сăмах – çу кунĕ, сивĕ сăмах – хĕл кунĕ.

4. Воспитани тĕллевне пурнăçлани. Учитель маларах çырнă ваттисен сăмахĕсемпе усă курать.

**III. Урока пĕтĕмлетни.**

1. Урока ачасемпе пĕтĕмлетни.

– Антонимсем мĕнле пуплев пайĕнчен пулаççĕ? Тĕслĕхсемпе çирĕплетĕр.

2. Ачасен ĕçне хак пани.

**IV. Киле ĕç пани.**

41§; 388–389-мĕш хăнăхтарусен тексчĕсем тăрăх антонимсемпе усă курса «Икĕ юлташ» е «Икĕ пĕр тăван» темăпа пĕчĕк калав çырмалла.

## *77-мĕш урок.* Словарьсемпе усă курасси (42§)

**Урок тĕллевĕсем:** 1. Ачасене тĕрлĕ йышши словарьсемпе ĕçлеме вĕрентесси. 2. Сăмахсемпе пуплевре (калаçура, çырура) тĕрĕс усă курма хăнăхтарасси. 3. Тăван халăхăн иртнĕ пурнăçне тарăнрах пĕлес туйăма çуратасси.

**Урок тĕсĕ: содержани тăрăх** – лексика урокĕ; **тĕллевне кура** – çĕнĕ темăна вĕрентмелли урок; **формине кура** – яланхи йĕркепе ирттерекен урок.

**Вĕрентӳ меслечĕсемпе ĕç хатĕрĕсем:** индукци-дедукци меслечĕсем, калаçу, учитель ăнлантарăвĕ, ИКТ, словарьсен стенчĕ, М.И.Скворцов редакциленĕ «Чăвашла-вырăсла словарь».

**Çыхăнуллă пуплеве аталантарассипе çыхăннă ĕç:** пĕр-пĕр чĕр чун çинчен сăмах вĕççĕн каласа парасси, «Вĕсем пурнăçра кирлĕ пулнă...» темăпа калав çырасси.

### Урок юхăмĕ

**I. Килти ĕçе тĕрĕслени.**

Килте çырнă калавсене уйрăм ачасене вулаттарса тĕрĕслени. Ачасем çынсен сăнарне, ĕçне-хĕлне çырса кăтартма усă курнă антонимсене палăртаççĕ, учитель ĕçри çитменлĕхсене тата лайăх енсене кăтартса хăварать.

**II. Çĕнĕ темăна вĕрентни.**

1. Кĕнекери чĕлхе материалне тишкерни. Ӳкерчĕклĕ ĕçе компьютер пулăшнипе йĕркелеме питĕ меллĕ.

2. Теори материалне ăнлантарни. Çак урокра вĕрентекен ачасене словарь тытăмĕпе паллаштарать. «Чăваш-

ла-вырӑсла словарьте» уйрӑм сӑмаха ӑнлантарнине класпа тишкерсе тухаҫҫӗ.

**III. Вӗреннине ҫирӗплетни.**

1. Алфавит йӗркине аса илни, каласа тухни.
2. Хӑнӑхтарусемпе ӗҫлени.

398–397, 403-мӗш хӑнӑхтарусем.

403-мӗш хӑнӑхтару. Воспитани тӗллевне пурнӑҫлани.

**IV. Урока пӗтӗмлетни.**

1. Урока ачасемпе пӗтӗмлетни.

– Орфографи словарӗ пире мӗн тума пулӑшать?

– Сӑмахсене словарьте мӗнле йӗркепе вырнаҫтараҫҫӗ?

– Синонимсен, антонимсен, омонимсен словарӗсем пире мӗн тума пулӑшаҫҫӗ?

– Ют чӗлхе урокӗсенче мӗнле словарьсемпе усӑ кураҫҫӗ?

2. Ачасен ӗҫне хак пани.

**V. Киле ӗҫ пани.**

42§; 401-мӗш хӑнӑхтару.

## *78-мӗш урок.* Словарьсемпе усӑ курасси

**Урок тӗллевӗсем:** 1. Тӗрлӗ йышши словарьсемпе усӑ курма вӗреннине ҫирӗплетесси. 2. Сӑмахсемпе пуплевре (калаҫура, ҫырура) тӗрӗс усӑ курма хӑнӑхтарасси. 3. Тӑван халӑхӑн иртнӗ пурнӑҫне тарӑнрах пӗлес туртӑма аталантарасси.

**Урок тӗсӗ: содержани тӑрӑх** – лексика урокӗ; **тӗллевне кура** – ҫирӗплетӳ урокӗ; **формине кура** – яланхи йӗркепе ирттерекен урок.

**Вӗрентӳ меслечӗсем:** калаҫу, учитель ӑнлантарӑвӗ, ИКТ.

**Ҫыхӑнуллӑ пуплеве аталантарассипе ҫыхӑннӑ ӗҫ:** «Чӑваш чӗлхинчи словарьсем» темӑпа сочинени ҫырасси.

### Урок юхӑмӗ

**I. Килти ӗҫе тӗрӗслени.**

1. Теори материалне класран пӗтӗмӗшле ыйтса тӗрӗслени.

– Орфографи словарӗ ҫинчен каласа парӑр.

– Чӑвашла-вырӑсла пысӑк словарь ҫинчен эсир мӗн пӗлетӗр?

– Синонимсемпе антонимсен словарӗсем ҫинчен пӗтӗмӗшле каласа парӑр.

– Фразеологи, диалектологи словарӗсем, тӳнтер словарь ҫинчен мӗн пӗлетӗр? Вӗсемпе кӗскен паллаштарӑр. (Ку ыйтусемпе тухса каласма уйрӑм ачасене ятарласа хатӗрлесен лайӑх.)

– Сӑмахсене словарьте мӗнле йӗркепе вырнаҫтараҫҫӗ?

– Словарьте сӑмахсен пӗлтерӗшӗсене мӗнле ҫырса ӑнлантараҫҫӗ?

– Словарь статйи мӗн вӑл?

– Словарьте омоним сӑмахсене мӗнле палӑртаҫҫӗ?

– Словарьте паракан тӗп сӑмахсене мӗнле пичетлеҫҫӗ?

– Французсен паллӑ писателӗ А. Франс словаре мӗнле кӗнеке тесе палӑртать?

2. 401-мӗш хӑнӑхтарӑва икӗ-виҫӗ ачаран ыйтса тӗрӗслени.

**II. Вӗреннине ҫирӗплетни.**

Хӑнӑхтарусемпе ӗҫлени.

396-мӗш хӑнӑхтару. Пӗр ача доска ҫинче, ыттисем хӑйсен тетрачӗсенче пурнӑҫлаҫҫӗ.

399-мӗш хӑнӑхтару. Ачасем харпӑр хӑй тӗллӗн ӗҫлеҫҫӗ. Куҫару ӗҫӗсене хаклани.

402-мӗш хӑнӑхтару. Малтан текста ачасемпе пӗрле вуласа тишкермелле, панӑ ыйтусене хуравламалла, сочинени темипе ҫыхӑннӑ шухӑшсене палӑртса тухмалла. Унтан «Чӑваш чӗлхин словарӗ» сочинени ҫырмалла. Сочинени ҫырнӑ чух уйрӑм словарьсемпе усӑ курма ирӗк памалла: ачасем словарь статйипе усӑ курма, сӑмахсене тӗрӗслеме пултарччӑр.

**III. Киле ӗҫ пани.**

Класра пуҫланӑ сочинение ҫырса пӗтермелле.

## *79-мӗш урок.* Ятарлӑ сӑмахсем (профессионализмсем) (43§)

**Урок тӗллевӗсем:** 1. Ачасене профессионализмсем ҫинчен вӗрентесси. 2. Ятарлӑ сӑмахсемпе пуплевре (калаҫура, ҫырура) тӗрӗс усӑ курма хӑнӑхтарасси. 3. Кирек мӗнле профессипе ҫыхӑннӑ ӗҫ те пурнӑҫра кирлӗ пулнине ӑнланма пулӑшасси.

**Урок тĕсĕ:** **содержани тăрăх** – лексика урокĕ; **тĕллевне кура** – çĕнĕ темăна вĕрентмелли урок; **формине кура** – яланхи йĕркепе ирттерекен урок.

**Вĕрентӳ меслечĕсемпе ĕç хатĕрĕсем:** дедукци меслечĕ, калаçу, учитель ăнлантарăвĕ, ИКТ, профессионализмсене ăнлантармалли словарьсемпе справочниксем.

**Словарь ĕçĕ:** *тĕрĕ пăчки, тĕтĕркĕч, рашпиль, фреза, фуганок, ыра, çункав, ийе, дрель, зубило, сакруй.*

## Урок юхăмĕ

### I. Килти ĕçе тĕрĕслени.

«Чăваш чĕлхин словарĕ» сочинение икĕ-виçĕ ача вулать, вĕрентекен ĕçсене тĕрĕслеме пуçтарса илет.

### II. Çĕнĕ темăна вĕрентни.

1. Çĕнĕ материала ăнлантарни.

Пĕр-пĕр профессире çеç усă куракан сăмахсем çинчен учитель пĕтĕмĕшле каласа парать.

2. Тĕрлĕ профессипе çыхăннă словарьсемпе паллаштарни.

Учитель словарьсемпе усă курма вĕрентет (вĕсен стендне йĕркелени), ятарлă сăмахсене тĕрлĕ словарьсенче мĕнле палăртнине каласа хăварать.

### III. Вĕреннине çирĕплетни.

1. Хăнăхтарусемпе ĕçлени.

405–408-мĕш хăнăхтарусем.

407-мĕш хăнăхтару. Воспитани тĕллевне пурнăçлани.

2. Сăмах диктанчĕ çырни: *тĕрĕ пăчки (лобзик), пыл хурчĕ, тĕтĕркĕч, касса аппарачĕ, рашпиль, фреза, фуганок, ыра, çункав, ийе, дрель, зубило, сакруй, уровень, угольник.*

Пĕр ача доска умĕнче ĕçлет, ыттисем хăйсен тетрачĕсенче çыраççĕ. Кайран класĕпе доска умĕнчи ачан ĕçне тĕрĕслеççĕ.

– Сăмахсене мĕнле профессипе çыхăннине тата мĕнле çырмаллине ăнлантарăр.

### IV. Урока пĕтĕмлетни.

1. Урока ачасемпе пĕтĕмлетни.

– Профессионализм тесе мĕнле сăмаха калаççĕ?

– Электрик профессийĕпе çыхăннă сăмахсене тупса калăр.

– Словарьсенче профессионализмсене мĕнле палăртаççĕ?

2. Ачасен ĕçне хак пани.

**V. Киле ĕç пани.**
43§; 404-мĕш хăнăхтару.

## *80-мĕш урок.* Йышăннă сăмахсем (44§)

**Урок тĕллевĕсем:** 1. Ачасене йышăннă сăмахсем çинчен вĕрентесси. 2. Йышăннă сăмахсемпе пуплевре (калаçура, çырура) тĕрĕс усă курма хăнăхтарасси. 3. Йĕркелĕхпе тирпейлĕх çын пурнăçĕнче пысăк вырăн йышăннине ăнланса илме май парасси.

**Урок тĕсĕ: содержани тăрăх** – лексика урокĕ; **тĕллевне кура** – çĕнĕ темăна вĕрентмелли урок; **формине кура** – яланхи йĕркепе ирттерекен урок.

**Вĕрентӳ меслечĕсемпе ĕç хатĕрĕсем:** дедукци меслечĕ, калаçу, учитель ăнлантарăвĕ, ИКТ, карточкăсем, «Чăваш чĕлхин лексики» схема, карттă.

**Словарь ĕçĕ:** *çуткăç, акшар, вар витти, чавка пуç, йĕнĕ, мулкач хăлхи, тĕнче уçлăхĕ.*

**Çыхăнуллă пуплеве аталантарассипе çыхăннă ĕç:** «Кашни япала хăй вырăнĕнче пулмалла» текст çине таянса сăмах вĕççĕн калав йĕркелесси.

### Урок юхăмĕ

**I. Килти ĕçе тĕрĕслени.**

1. Иртнĕ урокра вĕреннĕ материала карточкăсемпе усă курса тĕрĕслени.
2. Икĕ ача доска умĕнче, ыттисем вырăнта ĕçлеççĕ.

1-мĕш карточка

«Аптекăра» темăпа 6–7 предложениллĕ пĕчĕк калав çырăр. Профессионализмсемпе усă курăр.

2-мĕш карточка

Палăртнă профессисемпе çыхăннă сăмахсене çырса парăр: *платник, çыравçă, артист.*

3-мĕш карточка

Хăвăр тăвансен е пĕлĕшсен профессийĕсемпе çыхăннă сăмахсемпе усă курса 6–7 предложениллĕ пĕчĕк калав çырăр.

4-мĕш карточка

Агроном профессийĕпе çыхăннă сăмахсемпе усă курса 6–7 предложениллĕ пĕчĕк калав çырăр.

2. Теори материалне уйрăм ачаран ыйтса тĕрĕслени.
3. 404-мĕш хăнăхтарăва уйрăм ачаран ыйтса тĕрĕслени.

**II. Çĕнĕ темăна вĕрентни.**

1. Чăваш чĕлхи лексикине пĕтĕмĕшле ăнлантарни.

Вĕрентекен ачасене техника хатĕрĕпе усă курса «Чăваш чĕлхи лексики» схемăпа паллаштарать, тăван чĕлхери сăмахсен йышĕ çĕнĕ сăмахсем тунипе, урăх чĕлхесенчен йышăннипе ӳссе пынине ăнлантарать.




2. Тĕрĕк чĕлхисенчен йышăннă сăмахсемпе паллаштарни.

Карттăпа усă курса учитель чăваш халăхĕн иртнĕ кун-çулне, чăвашсем тĕрĕк халăхĕсемпе тăванлине аса илтерет.

Хамăр çĕр-шывра та, чикĕ леш енче те тĕрĕк чĕлхиллĕ халăхсем нумай. Калаçасса тĕрĕклех калаçаççĕ пулин те, вĕсем пĕр-пĕрне пурте ăнланаймаççĕ. Калăпăр, чăвашсемпе якутсем азербайджанла, узбекла, пушкăртла, туркменла каланине ăнланаймаççĕ пулсан тутарсем ăнланма кăна мар, çăмăллăнах хутшăнаççĕ. Çакăнта якут тата чăваш чĕлхисем ытти тĕрĕк чĕлхисенчен чылай уйрăлса кайса хăйсем тĕллĕн аталаннине курма пулать.

Авалхи тĕрĕк чĕлхинчен йăхран йăха куçса хамăр чĕлхере сыхланса юлнă сăмахсем тĕп чăваш сăмахĕсем шутланаççĕ, вĕсем хальхи литература чĕлхин никĕсĕ пулса тăраççĕ.

Хальхи тĕрĕк сăмахĕсене, çав шутрах чăваш тата якут сăмахĕсене, авалхи çыру палăкĕсенчи сăмахсемпе танлаштарса пăхсан пĕр пеклĕхсемпе уйрăмлăхсем нумай тупма пулать. Пĕр пеклĕхсем тĕрĕк чĕлхисен тăванлăхне кăтартса параççĕ. Чăвашла тата тĕрĕкле сăмахсене танлаштарăр: *куç – коз; атте – ата; анне – ана; тăван – туган; тӳшек – тӳшек; çил – жил; тинĕс – тингиз; юман – имен; çăка – жоке, юке; чăрăш – чырыш; тирек – терек; ылтăн – алтын; хăйăр – хайыр; сĕт – сӳт; сăра – сыра; кун – кӳн; пĕлтĕр – былтыр; кĕрĕк – кӳрк, кӳрӳк; сăхман – сукман; çăпата – чабата; çул – йол, жол; сĕреке – сорэкэ; вăлта – алта.*

Хăйĕн историйĕн вăрăм кун-çулĕнче чăваш халăхĕ нумай халăхпа тĕл пулнă, çыхăну тытнă, юнашар пурăннă. Çавна май пирĕн чĕлхере

араб, перс, монгол, тутар, мари, вырăс чĕлхисенчен кĕнĕ сăмахсем йышлă. Араб е перс сăмахĕсем чылай авалхи вăхăтра (IX–XV ĕмĕрсенче е унтан та маларах) кĕнĕ пулсан грек, итальян, нимĕç, француз сăмахĕсем вырăс чĕлхи урлă юлашки ĕмĕрсенче кăна кĕнĕ. Акă пĕрер тĕслĕх: *авал* – араб, *ансат* – перс, *нар* – монгол, *пўрт* – мари, *явлăк* – тутар, *ешчĕк* – вырăс.

3. Вырăс чĕлхинчен йышăннă сăмахсемпе паллаштарни.

Пирĕн чĕлхере вырăс чĕлхи урлă йышăннă сăмахсен хисепĕ уйрăмах пысăк. Вырăс чĕлхинчен калаçу урлă улшăнса кĕнисем: *пĕрене, суха, купăста;* çыру урлă улшăнмасăр кĕнисем: *тетрадь, доска, кофта, фуфайка, пенал* т.ыт.те.

Чăваш чĕлхинче халĕ усă куракан *б, г, д, ж, з, о, ф, ц, щ* сасăллă сăмахсем пурте – урăх чĕлхесенчен йышăннăскерсем. Вĕсенчен чылайăшĕ – вырăс чĕлхинчен хăйĕнчен е вырăс чĕлхи урлă урăх чĕлхесенчен çырупа кĕнĕ сăмахсем: *телевизор, кино, музыка* т.ыт.те.

Урăх чĕлхерен йышăннă сăмахсене тĕп чăваш сăмахĕсенчен уйăрса илме пур чухне те çăмăл мар. Ун пек чух этимологи словарĕ пулăшма пултарать. Этимологи – чĕлхе пĕлĕвĕн сăмахсем мĕнле пулса кайнине тĕпчекен пайĕ. Тĕслĕхрен: *ялан, юлташ* – тутар чĕлхинчен кĕнĕ сăмахсем. Сăмах пуçламăшĕнче *й* сасă, ун хыççăн *а, у* сасăсем тăни сăмах тутар чĕлхинчен кĕнине пĕлтерет.

**III. Вĕреннине çирĕплетни.**

1. Хăнăхтарусемпе ĕçлени.

409-мĕш хăнăхтару. Кашни ача пĕрер предложени вулать.

410-мĕш хăнăхтару. Пĕр ача доска умĕнче, ыттисем хăйсем тĕллĕн тăваççĕ.

411-мĕш хăнăхтару. Кашни ача пĕрер предложени вулать.

2. Сăмах диктанчĕ çырни. 412-мĕш хăнăхтару.

3. Воспитани тĕллевне пурнăçлани. 411-мĕш хăнăхтару.

**IV. Урока пĕтĕмлетни.**

1. Урока ачасемпе пĕтĕмлетни.

– Вырăс чĕлхинчен кĕнĕ сăмахсене мĕнле икĕ ушкăна уйăраççĕ? Тĕслĕхсем илсе парăр.

– Мĕнле уйрăмлăха пăхса ку сăмах тутар е вырăс чĕлхинчен кĕнĕ теме пулать?

– Чăваш чĕлхи мĕнле чĕлхесен шутне кĕрет?

2. Ачасен ĕçне хак пани.

**V. Киле ĕç пани.**

44§; илемлĕ литературăран тутар чĕлхинчен кĕнĕ сăмахсемпе 6 предложени çырса илĕр.

## *81-мĕш урок.* Йышăннă сăмахсем

**Урок тĕллевĕсем:** 1. Йышăннă сăмахсем çинчен вĕреннине çирĕплетесси. 2. Йышăннă сăмахсемпе пуплевре (калаçура, çырура) тĕрĕс усă курма хăнăхтарасси. 3. Тăван чĕлхе илемлĕхне, çепĕçлĕхне, янăравлăхне туйма пулăшасси.

**Урок тĕсĕ: содержани тăрăх** – лексика урокĕ; **тĕллевне кура** – çирĕплетӳ урокĕ; **формине кура** – яланхи йĕркепе ирттерекен урок.

**Вĕрентӳ меслечĕсемпе ĕç хатĕрĕсем:** калаçу, учитель ăнлантарăвĕ, ИКТ, карточкăсем, «Чăваш чĕлхин лексики» схема, карттă.

**Словарь ĕçĕ:** *хальхи, хальлĕхе, ху хальлĕн, хăть, хальтен-халь, тетрадĕнче, тетрачĕ, тетрадьне, тетраде.*

### Урок юхăмĕ

**I. Килти ĕçе тĕрĕслени.**

1. Теори материалне класран пĕтĕмĕшле ыйтса тĕрĕслени.

– Сăмахсене ют чĕлхерен йышăнасси мĕнле сăлтавсенчен килет?

– Чĕлхери сăмахсен йышĕ мĕнле майпа ӳссе пырать?

– Чăваш чĕлхи мĕнле чĕлхесен шутне кĕрет?

– Чăваш чĕлхипе хурăнташлă мĕнле чĕлхесене пĕлетĕр?

– Вăл чĕлхесене мĕншĕн хурăнташлă чĕлхесем теççĕ? Тĕслĕхсемпе ĕнентерме тăрăшăр.

– Тĕпчевçĕсем пирĕн чĕлхере мĕнле халăхсен сăмахĕсем пур тесе палăртаççĕ? Тĕслĕхсем илсе кăтартăр.

– Вырăс чĕлхинчен кĕнĕ сăмахсене мĕнле икĕ ушкăна уйăраççĕ? Вĕсем пĕр-пĕринчен мĕнпе уйрăлса тăраççĕ? Тĕслĕхсем илсе парăр.

– Мĕнле сăмахсене тутар чĕлхинчен кĕнĕ тесе калама пулать? Тĕслĕхсем илсе кăтартăр.

– Сăмахсем мĕнле пулса кайнине пĕлес тесен мĕнле словаре пăхмалла?

– Мĕнле ăслăлăха этимологи теççĕ?

2. Киле çырма парса янă ĕçе уйрăм ачасене вулаттарса тĕрĕслени.

**II. Вĕреннине çирĕплетни.**

1. Хăнăхтарусемпе ĕçлени.

415-мĕш хăнăхтару. Уйрăм ачасем сăмах вĕççĕн тăваççĕ.

414-мĕш хăнăхтару. Кашни ача пĕрер ваттисен сăмахĕ вулать, пĕлтерĕшне ăнлантарать. Унтан ачасем ваттисен сăмахĕсене çырса илеççĕ, сăмахсем мĕнле чĕлхерен кĕнине калаççĕ.

416-мĕш хăнăхтару. Малтан текста уйрăм ача вулать, ун хыççăн текст чĕлхине класпа пĕрле тишкереççĕ. Унтан текста кашни ача хăй тĕллĕн литература нормисемпе килĕшӳллĕ юсаса çырать. Кайран ĕçе уйрăм ачасене вулаттарса тĕрĕслемелле.

416-мĕш хăнăхтару. Воспитани тĕллевне пурнăçлани.

2. Сăмах диктанчĕ çырни: *хальхи, хальлĕхе, ху хальлĕн, хăть, хальтен-халь, тетрадĕнче, тетрачĕ, тетрадьне, тетраде, тетрадьлĕх.*

– Сăмахсене мĕнле çырмаллине ăнлантарăр та вĕсемпе пĕрер предложени тупса çырăр.

3. Вырăс чĕлхинчен йышăннă сăмахсене мĕнле çырассине аса илни.

– *Ль, нь, рь* сасăсемлĕ чăваш чĕлхине улшăнмасăр кĕнĕ сăмахсене мĕнле çыраççĕ? Тĕслĕхсем илсе кăтартăр.

– *Б, г, д, ж, з* сас паллисене хăçан, мĕнле сăмахсенче çыраççĕ?

– *Ф, ц, щ, ъ* сас паллисене хăçан çыраççĕ?

– Вырăс чĕлхинчен улăштармасăр йышăнакан сăмахсем çумне аффиксăн мĕнле варианчĕ хушăнать? Тĕслĕхсемпе çирĕплетĕр.

**III. Урока пĕтĕмлетни.**

1. Урока ачасемпе пĕтĕмлетни.

– Çак сăмахсем тĕп чăваш сăмахĕсем пулнине е мĕнле чĕлхерен кĕнине, вĕсене мĕнле çырмаллине ăнлантарса парăр: *музей, юмах, старик, пуç, чашăк, бригадир, куç, яхăнне те ямасть, юман, февраль, спортсмен, юрату.*

– Çак сăмахсем çумне тĕрлĕ аффикссем хушса пăхăр та мĕншĕн аффиксăн çак варианчĕ хушăннине ăнлантарăр: *старик, мотор, музей, дневник, февраль, тетрадь, июнь, июль, шинель.*

2. Ачасен ĕçне хак пани.

**IV. Киле ĕç пани.**

44§; 413-мĕш хăнăхтару.

## *82-мĕш урок.* Кивелнĕ сăмахсем (45§)

**Урок тĕллевĕсем:** 1. Кивелнĕ сăмахсем çинчен вĕрентесси. 2. Кивелнĕ сăмахсемпе пуплевре (калаçура, çырура) тĕрĕс усă курма хăнăхтарасси. 3. Иртнĕ вăхăтри пулăма, халăх пурнăçĕнчи историллĕ тапхăра ăнланса илме пулăшасси.

**Урок тĕсĕ: содержани тăрăх** – лексика урокĕ; **тĕллевне кура** – çĕнĕ темăна вĕрентмелли урок; **формине кура** – яланхи йĕркепе irttерекен урок.

**Вĕрентÿ меслечĕсемпе ĕç хатĕрĕсем:** индукци-дедукци меслечĕ, ИКТ, «Историзмсемпе архаизмсем хушшинчи уйрăмлăхсемпе пĕр пеклĕхсем» таблица.

**Словарь ĕçĕ:** *кăрал* – хĕç-пăшал *«оружие», катĕр* – ырлăх, тивлет, ăнăçлăх, хисеп, чыс *«благоденствие, благополучие; почет», пара* – сурăх *«овца длиннохвостая (порода)», явкай* – кахал апачĕ е суя апат *«послеобеденное время, время между полуднем и закатом», турхан* – çĕр улпучĕ *«мелкий феодал», ĕмпÿ* – князь, патша, *ăмăр* – выльăх кăкăрĕ (422-мĕш хăнăхтарура тĕл пулакан сăмахсем).

### Урок юхăмĕ

**I. Килти ĕçе тĕрĕслени.**

44§; 413-мĕш хăнăхтарăва уйрăм ачаран ыйтса тĕрĕслени.

**II. Çĕнĕ темăна вĕрентни.**

1. Кĕнекери чĕлхе материалне (175 с.) тишкерни. Ачасем ÿкерчĕксене сăнаççĕ, ыйтусене хуравлаççĕ.

2. Теори материалне ăнлантарни. Вĕрентекен историзмсемпе архаизмсен, неологизмсен тĕп уйрăмлăхĕсене палăртать. Кунта вĕсен илемлĕ литературăри пĕлтерĕшне палăртса хăвармалла, словарьсенче вĕсене мĕнле кăтартнине ăнлантармалла.

**III. Вĕреннине çирĕплетни.**

1. Хăнăхтарусемпе ĕçлени.

419, 422–423-мĕш хăнăхтарусем.

2. Воспитани тĕллевне пурнăçлани. 417-мĕш хăнăхтару.

3. «Историзмсемпе архаизмсем хушшинчи уйрăмлăхсемпе пĕр пеклĕхсем» таблица туни.

| Историзмсем | Архаизмсем |
|---|---|
| Уйрăмлăхĕ | |
| 1. Япалипе пĕрлех манăçа тухнă сăмах. | 1. Япали кивелмен, манăçман, ятне çеç çĕнĕ сăмахпа улăштарнă. |
| 2. Япала ячĕсенчен çеç пулаççĕ. | 2. Тĕрлĕ пуплев пайне кĕрекен сăмахсем пулма пултараççĕ. |
| 3. Синонимĕ çук. | 3. Яланах синонимлă пулать. |
| Пĕр пеклĕхĕ | |
| 1. Кивелнĕ, манăçа тухнă сăмахсем.<br>2. Илемлĕ литературăра иртнĕ пурнăçа, аваллăха сăнласа панă чух анлă усă кураççĕ.<br>3. Словарьсенче кив.(кивелнĕ сăмах) тесе палăртаççĕ. | |

**IV. Урока пĕтĕмлетни.**

1. Урока ачасемпе пĕтĕмлетни.

– Писательсемпе поэтсем кивелнĕ сăмахсемпе хăçан тата мĕнле тĕллевпе усă кураççĕ?

– Мăшăр сăмахсенче тĕл пулакан кивелнĕ сăмахсен пĕлтерĕшне эпир мĕнле майпа ăнланатпăр? Тĕслĕхсем илсе кăтартăр.

2. Ачасен ĕçне хак пани.

**V. Киле ĕç пани.**

45§; 420-мĕш хăнăхтару.

## *83-мĕш урок.* Кивелнĕ сăмахсем

**Урок тĕллевĕсем:** 1. Кивелнĕ сăмахсем çинчен вĕреннине çирĕплетесси. 2. Кивелнĕ сăмахсемпе пуплевре (калаçура, çырура) тĕрĕс усă курма хăнăхтарасси. 3. Виçе сăмахĕсем урлă чăваш халăхĕн авалхи историне курма пулăшасси.

**Урок тĕсĕ: содержани тăрăх** – лексика урокĕ; **тĕллевне кура** – çĕнĕ темăна вĕрентмелли урок; **формине кура** – яланхи йĕркепе ирттерекен урок.

**Вĕрентӳ меслечĕсемпе ĕç хатĕрĕсем:** калаçу, ИКТ, «Историзмсемпе архаизмсем хушшинчи уйрăмлăхсемпе пĕр пеклĕхсем» таблица.

**Словарь ĕçĕ:** *ят* – пĕр ят çĕр, пĕр çын пуçне панă çĕр; *тӳтрешке* – чĕрĕк теçеттин; *теçеттин* – хальхи виçепе – 1,09 гектар; *çур пилĕк* – гектарăн пĕрре виççĕмĕш пайне яхăн лаптăк; *хăлаç* – чалăш, хальхи виçепе 2,134 метр; *ана* – хирти çĕр лаптăкĕ; çĕр лаптăкне кăтартакан виçе, тĕрлĕ вырăнта тĕрлĕрен пулнă; *пăт* – йывăрăш виçи, 16 кг (418-мĕш хăнăхтарура) тĕл пулакан сăмахсем).

## Урок юхăмĕ

**I. Килти ĕçе тĕрĕслени.**

1. Теори материалне класран пĕтĕмĕшле ыйтса тĕрĕслени.

– Мĕнле сăмахсене историзмсем теççĕ? Тĕслĕхсем илсе парăр.

– Сăмахсем манăçа тухни мĕнпе çыхăннă?

– Историзмсен шутне мĕнле пуплев пайне кĕрекен сăмахсем кĕреççĕ? Тĕслĕхсемпе çирĕплетĕр.

– Историзмсен синонимĕсем пулаççĕ-и? Тĕслĕхсемпе ăнлантарăр.

– Мĕнле сăмахсене архаизмсем теççĕ? Тĕслĕхсем илсе кăтартăр.

– Архаизмсен синонимĕсем пулаççĕ-и?

– Архаизмсем мĕнле пуплев пайне кĕреççĕ?

– Кивĕ сăмахсем ытларах ăçта тĕл пулаççĕ? Тĕслĕхсемпе çирĕплетĕр.

– Архаизмсемпе историзмсен илемлĕ литературăри вырăнĕпе пĕлтерĕшне ăнлантарса парăр.

– Архаизмсемпе историзмсем хушшинче мĕнле уйрăмлăхсемпе пĕр пеклĕхсем пур?

– Мĕнле сăмахсене неологизмсем теççĕ? Тĕслĕхсем илсе кăтартăр.

– Çĕнĕ сăмахсем хăçан неологизм пулма пăрахаççĕ? Тĕслĕхсемпе çирĕплетĕр.

2. 420-мĕш хăнăхтарăва уйрăм ачаран ыйтса тĕрĕслени.

**II. Вĕреннине çирĕплетни.**

1. Хăнăхтарусемпе ĕçлени.

425-мĕш хăнăхтару. Ачасем хăйсем тĕллĕн ĕçлеççĕ, учитель уйрăм ачаран ыйтса тĕрĕслет.

421-мĕш хăнăхтару. Кашни ача пĕрер предложени вуласа пурнăçлать. Тупмалли юмахсен тупсăмĕсем: *калча; урпа; сĕлĕ; кантăр пуçне çерçи сăхни; пыракка*

*(пыран) ҫăткăн, пыркка – индюк; тĕменте тĕрли пур – тĕнчере темĕн те пур, тем тĕрли те тĕл пулать; тĕмен – мир, вселенная, свет.*

424-мĕш хăнăхтару. Ачасем хăйсем тĕллĕн ĕҫлеҫҫĕ, учитель уйрăм ачаран ыйтса тĕрĕслет.

418-мĕш хăнăхтару. Пĕр ача доска умĕнче ăнлантарса парать.

2. Воспитани тĕллевне (418-мĕш хăнăхтару) пурнăҫлани.

3. Сăмах диктанчĕ ҫырни: *хăна-вĕрле, ҫурт-йĕр, япала-качка, яш-кĕрĕм, тăван-пĕтен, йĕпе-сапа, анра-сухра, ҫӳпҫе-ҫарма, ҫырма-ҫатра, пурнăҫ-тăрмăш, хурт-хăмăр, ĕҫ-хĕл, сас-хура, тути-маси, ту-чакăл.*

– Сăмахсене мĕнле ҫырмаллине ăнлантарăр. Мăшăр сăмахсен майлашăвĕсен хăш пайĕ кивелнĕ сăмах пулнине ăнлантарăр.

**III. Урока пĕтĕмлетни.**

1. Урока ачасемпе пĕтĕмлетни.

– Неологизмсен тĕслĕхĕсене илсе парăр.

– Историзмсем тата архаизмсем тесе мĕнле сăмахсене калаҫҫĕ?

– Историзмсемпе архаизмсем хушшинчи уйрăмлăхсемпе пĕр пеклĕхсене калăр, тĕслĕхсемпе ҫирĕплетĕр.

2. Ачасен ĕҫне хак пани.

**IV. Киле ĕҫ пани.**

45§; илемлĕ литературăран архаизмсемпе, историзмсемпе, неологизмсемпе икшер предложени ҫырса килмелле.

## *84-мĕш урок.* Диалект сăмахĕсем (46§)

**Урок тĕллевĕсем:** 1. Диалект сăмахĕсене вĕрентесси. 2. Диалект сăмахĕсемпе пуплевре (калаҫура, ҫырура) тĕрĕс усă курма хăнăхтарасси. 3. Халăх пурнăҫĕнче литература чĕлхи тата диалект мĕнле вырăн йышăннине, унăн пĕлтерĕшне ăнланса илме пулăшасси.

**Урок тĕсĕ: содержани тăрăх** – лексика урокĕ; **тĕллевне кура** – ҫĕнĕ темăна вĕрентмелли урок; **формине кура** – яланхи йĕркепе ирттерекен урок.

**Вĕрентӳ меслечĕсемпе ĕҫ хатĕрĕсем:** учитель ăнлантарăвĕ, дедукци меслечĕ, ИКТ, карточкăсем, чăваш

диалекчёсен картти, «Чăваш чӗлхин лексики» схема, «Чăвашсен калаçу уйрăмлăхӗсем» таблица, «Пирӗн тăрăхри чӗлхе уйрăмлăхӗсем» таблица.

**Словарь ӗçӗ:** *диалект, вирьял, явап, алманчă, сенкер, хӗсмет, тӗкӗрçӗ, ăрăс, ӗшне, маçак, мамак, сала кайăк.*

## Урок юхăмӗ

### I. Килти ӗçе тӗрӗслени.

1. Иртнӗ урокра вӗреннӗ материала карточкăсем урлă тӗрӗслени.

1-мӗш карточка

**Предложенисене çырса илӗр те текстра тӗл пулакан архаизмсемпе историзмсене палăртăр, вӗсен пӗлтерӗшӗсене уçса парăр.**

1) Эсӗ ухмахланнишӗн эпӗ ял халăхӗ умӗнче явап тытмастăп. 2) – Вăхăт çук! – татса каларӗ алманчă. 3) Урасмет Тукай çурт-йӗрӗ умӗнчи çӗр купаласа тунă тем çӳллӗш синкер урлă çăмăллăн сиксе каçрӗ. 4) Ăна каллех хӗсмете илсе каяççӗ. 5) Унăн йӗнерленӗ утне ялти ытти тӗкӗрçсем кăкарса килчӗç. 6) Манăн ăрăсăм çапла.

2-мӗш карточка

**Историзмсене, архаизмсене, неологизмсене ушкăнласа çырса илӗр.**

Пăт, ипотека, ача-пăча, тăлăп, диск, çăпата, пӗркенчӗк, хултăрчă, флешка, хутăр уççи, ăса, принтер, савăт-сапа, сканер, нишлӗ, путек, тарай, ксерокопи, пăран.

2. Теори материалне уйрăм ачаран ыйтса тӗрӗслени.

### II. Çӗнӗ темăна вӗрентни.

Çӗнӗ материала ăнлантарни. Учитель ачасене терминсемпе паллаштарать.

«Диалект» – грек сăмахӗ: «диалектос» – калаçу.

«Вирьял»: «вир» – çӳлти, тури + «ял» сăмахсенчен пулнă; тури чăваш тенине пӗлтерет.

Учитель «Чăвашсен калаçу уйрăмлăхӗсем» таблица çине таянса çӗнӗ темăна ăнлантарать.

**Чăвашсен калаçу уйрăмлăхӗсем**

| Анатри – лит.норми | Тури – лит.норми | Хутăш – лит.норми |
|---|---|---|
| паранкă – çӗр улми<br>явлăк – тутăр<br>вулать у – вăл вулать<br>усем – вӗсем<br>сутка – талăк | сахат – сехет<br>орам – урам<br>моркка – кишӗр<br>хора – хура<br>маçак – асатте | тупа – çатма<br>эрӗм – армути<br>кулюкка – кăвакарчăн<br>крисса – йӗке хӳре<br>кăмпо – кăмпа |

**III. Вĕреннине çирĕплетни.**

1. Хăнăхтарусемпе ĕçлени.

426, 429-мĕш хăнăхтарусем.

2. Воспитани тĕллевне пурнăçлани. 428-мĕш хăнăхтару. Вĕрентекен кунта чăваш халăхĕн аваллăхне тĕпченĕ чух тури чăвашсен чĕлхинчи уйрăмлăхсем ытти тĕрĕк чĕлхисемпе ытларах пĕр килнине палăртса хăварать. И.Я. Яковлев йĕркелесе янă литература чĕлхи пулман пулсан тури чăвашсемпе анатри чăвашсен пĕр-пĕрне ăнланма йывăр пулнă пулĕччĕ.

3. Ăнлантару диктанчĕ çырни. Точкăсем вырăнне палăртнă сăмахсемпе килĕшӳллĕ диалект сăмахĕсене лартса çырмалла. Вĕсем хăш вырăнти диалектсем пулнине, литература чĕлхинче мĕнле сăмахсемпе усă курнине палăртмалла.

Тури диалектра *ĕшне* сăмах çук, вăл пĕлтерĕше ... *(уçланкă)* сăмах кăтартать. Тури диалектри *маçак, мамак, сала кайăк* сăмахсем вырăнне анатри диалектра ..., ..., ... *(асатте, асанне, çерçи)* теççĕ.

4. Танлаштару таблици туни.

**Пирĕн тăрăхри чĕлхе уйрăмлăхĕсем**

| Литература чĕлхинчи тĕслĕхсем | Пирĕн тăрăхри калаçу тĕслĕхĕсем |
|---|---|
| ... | ... |

Учитель доскан сулахай енне литература чĕлхинчи сăмахсене çырса парать, вĕренекенсем вĕсемпе юнашар çав сăмахсен вырăнти калаçура усă куракан тĕслĕхсене çырса тухаççĕ.

**IV. Урока пĕтĕмлетни.**

1. Урока ачасемпе пĕтĕмлетни.

– Чăваш чĕлхинче миçе диалект? Çав диалектсен чиккисене карттă çинче кăтартăр.

– Тури диалектăн тĕп уйрăмлăхĕсене палăртăр.

– Чăваш литература чĕлхинчи ударени йĕрки хăш диалект çинче никĕсленнĕ? Ăнлантарса парăр.

– Вырăнти сăмахсемпе усă курни хăçан вырăнлă?

2. Ачасен ĕçне хак пани.

**V. Киле ĕç пани.**

46§; «Пирĕн таврари ятсем» анкетăна çырса парăр.

1. Ялсем, урамсем ...
2. Шыв-шур ...
3. Вăрмансем ...
4. Çырма-çатра ...
5. Улăх-çаран ...
6. Уй-хир ...

## *85-мĕш урок.* Литература нормине пăхăнман сăмахсем (47§)

**Урок тĕллевĕсем:** 1. Литература нормине пăхăнман сăмахсем ҫинчен вĕрентесси. 2. Литература нормине пăхăнман сăмахсемпе пуплевре (калаҫура, ҫырура) тĕрĕс усă курма хăнăхтарасси. 3. Пĕр-пĕринпе килĕштерсе пурăнасси кашни ҫынран килнине ăнланса илме май парасси.

**Урок тĕсĕ: содержани тăрăх** – лексика урокĕ; **тĕллевне кура** – ҫĕнĕ темăна вĕрентмелли урок; **формине кура** – яланхи йĕркепе ирттерекен урок.

**Вĕрентӳ меслечĕсем:** учитель ăнлантарăвĕ, дедукци меслечĕ, калаҫу.

### Урок юхăмĕ

**I. Килти ĕҫе тĕрĕслени.**

1. Теори материалне уйрăм ачаран ыйтса тĕрĕслени.
2. Килти ĕҫе уйрăм ачаран ыйтса тĕрĕслени.
3. Тури, анатри, хутăш диалектпа калаҫакан районсене карттă ҫинче кăтартни.

**II. Ҫĕнĕ темăна вĕрентни.**

Теори материалне ăнлантарни. Вĕрентекен кулленхи калаҫу сăмахĕсем лайăх сĕмлисем тата ырă мар сĕмлисем пулнине палăртать, вĕсемпе писательсемпе поэтсем хăҫан, мĕнле тĕллевпе усă курма пултарнине кăтартса хăварать.

**III. Вĕреннине ҫирĕплетни.**

1. Хăнăхтарусемпе ĕҫлени.

430-мĕш хăнăхтару. Диктант ҫыраҫҫĕ.

432-мĕш хăнăхтару. Ачасем пĕрер предложенин вулаҫҫĕ, калаҫакан кăмăл-туйăмне уҫса параҫҫĕ.

431-мĕш хăнăхтару. Текст чĕлхине тишкереҫҫĕ.

2. Воспитани тĕллевне пурнăҫлани. 431-мĕш хăнăхтару.

**IV. Урока пĕтĕмлетни.**

1. Урока ачасемпе пĕтĕмлетни.

– Литература чĕлхин нормисене пăхăнман сăмахсене мĕнле сăмахсем теҫҫĕ?

– Ахаль калаҫăвăн мĕнле сĕмĕсем пур?

– Тӳрккес сăмахсемпе писательсемпе поэтсем ăҫта, хăҫан, мĕнле тĕллевпе усă кураҫҫĕ?

2. Ачасен ĕҫне хак пани.

**V. Киле ĕç пани.**

47§.; пĕр-пĕр хайлавран тӳрккес сăмахсемлĕ предложенисене çырса илмелле, вĕсемпе автор мĕн тĕллевпе усă курнине ăнлантарма пĕлмелле.

## *86-мĕш урок.* Литература нормине пăхăнман сăмахсем

**Урок тĕллевĕсем:** 1. Литература нормине пăхăнман сăмахсене çирĕплетесси. 2. Литература нормисене пăхăнман сăмахсемпе пуплевре (калаçура, çырура) тĕрĕс усă курма хăнăхтарасси. 3. Ачасене транспортра, больницăра тата ытти çĕрте хăйсене мĕнле тытмаллине ăнланса илме пулăшасси.

**Урок тĕсĕ: содержани тăрăх** – лексика урокĕ; **тĕллевне кура** – çирĕплетӳ урокĕ; **формине кура** – яланхи йĕркепе ирттерекен урок.

**Вĕрентӳ меслечĕсемпе ĕç хатĕрĕсем:** учитель ăнлантарăвĕ, калаçу, М.И. Скворцов редакциленĕ «Чăвашла-вырăсла словарь».

**Словарь ĕçĕ:** *ахальлĕн, халех, ахальшĕн, хуть, ахальтен, ахаль, больницăра, пульница, мунчала, типаж, тиражшăн, типажсăр, тираж, утьăкка.*

**Çыхăнуллă пуплеве аталантарассипе çыхăннă ĕç:** 434-мĕш хăнăхтарури текстсемпе килĕшӳллĕ калаçу вариантне йĕркелесси.

### Урок юхăмĕ

**I. Килти ĕçе тĕрĕслени.**

1. Теори материалне уйрăм ачаран ыйтса тĕрĕслени.

2. Çырма парса янă ĕçе 3–4 ачаран ыйтса тĕрĕслени.

**II. Вĕреннине çирĕплетни.**

1. Хăнăхтарусемпе ĕçлени.

436, 433–434-мĕш хăнăхтарусем.

2. Воспитани тĕллевне пурнăçлани. 434-мĕш хăнăхтару.

3. Сăмах диктанчĕ çырни: *ахальлĕн, халех, ахальшĕн, хуть, ахальтен, ахаль, Михаил Порфирьевич, больницăра, мунчала, пульница, тиражшăн, тираж, утьăкка.* Ачасем сăмахсене мĕнле тата мĕншĕн çавăн пек çырнине ăнлантараççĕ.

**III. Урока пӗтӗмлетни.**

1. Урока ачасемпе пӗтӗмлетни.

– Мӗнле сăмахсене тӳрккес сăмахсем теҫҫӗ?

– Мӗншӗн тӳрккес сăмахсемпе усă курмалла мар?

– Ҫав сăмахсене словарьте мӗнле палăртаҫҫӗ?

2. Ачасен ӗҫне хак пани.

**IV. Киле ӗҫ пани.** 47§; «Сăпайлăх этеме илем кӳрет» темăпа калаҫма хатӗрленмелле.

## *87-мӗш урок.* Сăпайлăх этеме илем кӳрет

**Урок тӗллевӗсем:** 1. Ачасен тавра курăмне ӳстересси, пуплевне, шухăшлавне аталантарасси. 2. Пуплев этикечӗпе килӗшӳллӗн калаҫăва тӗрӗс йӗркелеме, лару-тăрăва кура сăмахсемпе выранлă усă курма хăнăхтарасси. 3. Ачасене ҫынсем хушшинчи хутшăну йӗркипе паллаштарнă май ăна тытса пыма вӗрентесси.

**Урок тӗсӗ: содержани тăрăх** – лексика урокӗ; **тӗллевне кура** – пуплеве аталантармалли урок; **формине кура** – йăлана кӗмен урок.

**Вӗрентӳ меслечӗсемпе ӗҫ хатӗрӗсем:** калаҫу, учитель ăнлантарăвӗ, ИКТ, слайдсем, «Пӗр-пӗринпе хутшăнни» схема.

**Ҫыхăнуллă пуплеве аталантарассипе ҫыхăннă ӗҫ:** пуплев этикечӗпе йӗркеленӗ калаҫу, диспут ыйтăвӗсемпе ҫыхăннă калаҫу, «Унăн пӳлӗмне кӗрсен...» темăпа калав йӗркелесси.

**Урок эпиграфӗсем:** Эсир нихҫан та эпӗ ӗнтӗ пурне те пӗлетӗп тесе ан шухăшлăр. Сире ҫынсем тем пек ырласан та эпӗ пурне те пӗлейместӗп-ха теме хал ҫитерӗр. *(И. Павлов.)*

Сăнама пултарнă хăвăрах:
Ăслă сăмаха ҫын юрататъ.
Шутласа каланă ăш сăмах
Чӗрере ыр туйăм ҫурататъ. *(Н. Ытарай.)*

### Урок юхăмӗ

**I. Пуплеве аталантармалли материалпа ӗҫлени.**

1. Ачасене урок тӗллевӗпе, эпиграфӗсемпе паллаштарни.

2. Учитель сăмахӗ.

Сăпайлăх – çыннăн чи паха енĕсенчен пĕри. Енчен те çын сăпайлăхне çухатать пулсан вăл хăйĕн чун-чĕри илемне çухатать. Çын чунĕ пушанса, чухăнланса юлать.

Сăпайлăх этеме илем кӳрет тенине халăхра час-часах илтме пулать. Мĕнле çын-ши вăл – сăпайлă çын? Мĕн-ши вăл сăпайлăх, пур-ши вăл кашни çынра? Паллах, ку ыйтусене хурав пама çăмăлах мар.

Сăпайлăх вăл – çын хăйне халăх хушшинче йĕркеллĕ тытма пĕлни, çынсемпе яланах ырă кăмăллă пулни.

Хальхи вăхăтра çынсем чун-чĕре ăшшине çухатса пынине палăртаççĕ. Ĕлĕкрен пыракан чăваш йăли-йĕркине – çынна тарават кĕтсе илсе хисеплĕн ăсатса ярассине, йывăр вăхăтра пулăшассине – манăçа хăвараççĕ. Ырă кăмăл, намăс-симĕс чакса пынине курма пулать. Эсир çакăн çинчен мĕн шухăшлатăр?

Паян эпир шăпах çынсем тĕрлĕ лару-тăрура хăйсене мĕнле тыткалани тата мĕнле тытмалли çинчен каласăпăр.

Эсир çак ыйтусене сӳтсе явнă çĕре пĕтĕм кăмăлтан хутшăнса хăвăр шухăш-кăмăлăра пĕр пытармасăр палăртасса шанатăп. Паянхи тавлашăва активлă хутшăнакансем лайăх паллăсем илĕç.

3. Диспут ыйтăвĕсемпе ĕçлени.

1) «Пуринчен те йӳнни, çав вăхăтрах чи пахи вăл – *сăпайлăх»,* – тенĕ ваттисем. Çак сăмахсемпе мĕнле шухăша палăртасшăн пулнă?

2) Çынсене сăпайлă пулма вĕрентме пулать-и? Пулать пулсан мĕнле майсем пур?

3) «Хальхи çамрăксем тӳрккес, никама та хисеплемеççĕ», – тенине час-час илтме пулать. Эсир çакăнпа килĕшетĕр-и? Мĕншĕн?

4. Сирĕн шутпа, сăпайлă çын чи малтан мĕне мала хурать: хăйĕн шухăшне-и е коллектив шухăшне-и?

*«Эпĕ хамшăн тăрăшмастăп пулсан – маншăн кам тăрăшĕ, эпĕ хамшăн çеç тăрăшатăп пулсан – эпĕ вара кам?»* – тенине мĕнле ăнланатăр?

5. Çын тумланни тата хăйне тыткалани тăрăх унăн сăпайлăхĕ çинчен пĕлме пулать-и?

6. Сăпайлă çын хăйне вĕренӳре мĕнле кăтартать?

7. Хăнăхнă тăрăх, *чăваш – йăваш, сăпайлă çын теççĕ,* анчах нумай чухне çынсем сăпайлă пулас тесе мĕскĕннĕн курăнмаççĕ-и?

8. Пĕр-пĕр черетре хăй умĕнчи çынсене, ватта-вĕтте пăхмасăр, чавсапа тĕке-тĕке талпăнакан çынна мĕнле хаклатăр?

9. *«Килях!» – теме йăла пур, «каях» – теме йăла çук.*

Çак йĕркесем пире пурнăçра мĕнле пулма вĕрентеççĕ? Пур чухне те çакна эсир пурнăçлатăр-и?

10. Пуплев этикечĕ пире мĕнле пулма хистет? Сăпайлăхпа пуплев этикечĕ тенинче мĕнле пĕр пеклĕх куратăр?

Хăш-пĕр ыйтусемпе калаçма аслăрах класра вĕренекен ачасене хутшăнтарни те лайăх: вĕрентекен вĕсене маларах палăртса хурать, ĕçе мĕнле тумаллине ăнлантарать.

Малтан 5-мĕш класс ачисене, кайран хăнасене калаçтармалла.

**II. Вĕреннине çирĕплетни.**

1. 435-мĕш хăнăхтарупа ĕçлени. Ачасем пуплев этикечĕпе вуласа паллашаççĕ.

2. Пуплев этикечĕпе ĕçлени.

1-мĕш ĕç.

– Схемăна тишкерĕр. *Калани – итлени, çыру – вулав* сăмахсем мĕншĕн икĕ стрелкăпа çыхăннине ăнлантарса парăр.




2-мĕш ĕç.

– Панă сăмахсем çумне *-сам(-сем), -самăр(-семĕр)* аффикссем хушса çырăр, хăш-пĕр сăмахсемпе предложенисем йĕркелĕр. Аффикс хушса çырнă сăмахсене *тархасшăн* сăмах пĕлтерĕшĕпе танлаштарса пăхăр.

Каçар, кала, лар, *пулăш,* кил, кур, *ĕç, çи,* кĕр, *ан пăшăрхан, ан кӳрен,* малалла ирт, *иртсе лар.*

3-мĕш ĕç.

– Чирлĕ юлташăр патĕнче больницăра пулни çинчен каласа парăр. Калава «Унăн пӳлĕмне кĕрсен...» сăмахсемпе пуçлăр, диалог формипе усă курăр.

4-мĕш ĕç.

– Пурнăçра çыннăн йăнăшасси те, ытти çынсене ăнсăртран кӳрентересси те пулать. Ун пек чухне яланах каçару ыйтмалла, унсăрăн çынсем хушшинче тĕрлĕ пăтăрмах сиксе тухма пултарать. Чăваш чĕлхи каçару

ыйтмалли сăмахсемпе пуян. Эсир вĕсене малалла çырса кайăр, мĕншĕн каçару ыйтмаллине те палăртăр.

Каçар(ăр); айăп ан тăвăр, тархасшăн; каçарăр, эпĕ йăнăшрăм (кая юлса килтĕм...); кая юлнăшăн (чăрмантарнăшăн...) каçарăр; эпĕ сан (сирĕн) умра айăплă; каçар(ăр), эпĕ сана (сире) кӳрентерес (тарăхтарас...) теменччĕ; каçар(ăр), хам сăмаха тытаймарăм.

5-мĕш ĕç.

– Салам сăмахĕсене пĕр-пĕринпе танлаштарăр. Вĕсенчен хăшĕсем çывăх е палламан çынпа, официаллă е хамăртан çул шучĕпе аслăрах çынсемпе калаçнă чух усă курма юрăнлă? Пĕр-пĕрне саламланă чух усă куракан тата ытти сăмахсене çырса кайăр.

Хальлĕхе! – Сывă юлăр.

Салам! – Сывлăх сунатăп.

Тепре куриччен! – Сыв пуллашма ирĕк парсамăр. – Ырă кун пултăр.

Ыранччен! – Чипер çӳрĕр!

## III. Урока пĕтĕмлетни.

1. Урока ачасемпе пĕтĕмлетни.

– Çак тĕслĕхсене хăш пуплев этикечĕпе тӳр килнине кура çырса илĕр, мĕншĕнне ăнлантарăр.

1) Вăхăчĕпе чĕмлĕ пул, вăхăчĕпе чĕмсĕр пул. 2) Хĕм сапсан та хăвна ху хĕвелсен шутне ан хур. 3) Шăпăрпа выляннă чух шăп ларни те питĕ чух. 4) Маттур ача сăпайлă, маттур сахал сăмахлă. 5) Патак тытсан пит ан вĕç – патакăн пур икĕ вĕç. 6) Тавлашсан та тăват çул така-сурăх пулас çук.

– Урок эпиграфĕсен тĕп шухăшĕсене уçса парăр.

2. Учитель сăмахĕ.

Çынна сăпайлă пулма пысăклансан мар, ача садне çӳреме тытăниччен вĕрентме тытăнмалла. Ачасен сăпайлăхĕ шкула çӳреме пуçласан лайăх курăнать: пĕрисем аслисене сывлăх сунаççĕ, ваттисене пулăшаççĕ, тусĕсене хисеплеççĕ, хаклама пĕлеççĕ. Теприсем вара пĕтĕмпех кутăнла – вĕрентекенсене те сывлăх сунма манаççĕ, ваттисенчен кулаççĕ.

Сăпайлă çын яланах ырă кăмăллă. Кун пек çын патне ытти çынсем те туртăнаççĕ, унпа канашлаççĕ, туслашаççĕ. Сăпайсăр çын вара ыттисем çине сиввĕн, мăн кăмăллăн пăхать.

Хăш-пĕрисем сăпайлăх илемлĕ сăн-питре тата чаплă тумра палăрать пуль теççĕ. Çакă-ши сăпайлăх? Енчен те этем сăн-питпе илемлĕ, хитре тумланать, анчах ĕçе юратмасть, курнăçланма пăхать, çынсемпе сиввĕн калаçать пулсан ăна сăпайлă теме пулать-ши? Лайăх çын пулас тесен ĕçе юратса тума, ыттисен хуйхине ăнланма, пулăшма,

кирлӗ чух каçару ыйтма хатӗр пулмалла. Çынна ырӑ туни яланах ырӑ тӑвакан патне таврӑнать теççӗ. Пирӗн мӑн асаттесемпе асаннесем мӗн ӗлӗкрен ырӑ кӑмӑллӑ та тарават, сӑпайлӑ пулнӑ. Хӑйсене нихçан та мӑнна хуман, ырӑ йӑла-йӗркене тытса пурӑннӑ. Аслисенчен тӗслӗх илмелли нумай. Яланах лайӑхпа начара уйӑрма пӗлмелле, хӑçан мӗн тума юранине, мӗнле пулмаллине асра тытмалла.

3. Ачасен ӗçне хак пани. Ачасем трафаретлӑ хурав панине мар, калаçӑва мӗнле хутшӑннине хакламалла. Кунта харпӑр хӑй шухӑшне ӗнентерме тӑрӑшни, калаçӑва йӗркеллӗ тытса пыма пултарни паха.

**IV. Киле ӗç пани.**

Çӳлерех панӑ тӗслӗхсене (ӑславсене) пӑхмасӑр калама вӗренсе килмелле.

## *88-мӗш урок.* Лексика тишкерӗвӗ

**Урок тӗллевӗсем:** 1. Ачасене лексика тишкерӗвӗ тума вӗрентесси. 2. Сӑмахсемпе пуплевре (калаçура, çырура) тӗрӗс усӑ курма хӑнӑхтарасси. 3. Тӑван чӗлхе пӗлтерӗшне туйса илме пулӑшасси.

**Урок тӗсӗ: содержани тӑрӑх** – лексика урокӗ; **тӗллевне кура** – çӗнӗ темӑна вӗрентмелли урок; **формине кура** – яланхи йӗркепе ирттерекен урок.

**Вӗрентӳ меслечӗсем:** учитель ӑнлантарӑвӗ, калаçу.

**Словарь ӗçӗ:** *пӑяхам, хуньӑм, пӑятам, хунчӑкам, йысна, хуняçа.*

**Çыхӑнуллӑ пуплеве аталантарассипе çыхӑннӑ ӗç:** паянхи пасара сӑнласа парасси.

### Урок юхӑмӗ

**I. Килти ӗçе тӗрӗслени.**

Килти ӗçе уйрӑм ачасенчен ыйтса тӗрӗслени.

**II. Çӗнӗ темӑна ӑнлантарни.**

1. Малтан вӗреннине аса илни.

– Сӑмахсем миçе пӗлтерӗшлӗ пулаççӗ? Тӗслӗхсем илсе кӑтартӑр.

– Турӗ тата куçӑмлӑ пӗлтерӗш çинчен ӑнлантарӑр.

– Мӗнле сӑмахсене синонимсем, антонимсем, омонимсем теççӗ?

– Словарьсенче сӑмахсене хӑçан, мӗнле ятарлӑ паллӑсемпе палӑртаççӗ?

2. Лексика тишкерĕвĕн йĕркипе паллаштарни.
3. Сăмахсене лексика тишкерĕвĕ туни.

**III. Вĕреннине çирĕплетни.**

1. Хăнăхтарусемпе ĕçлени.

437-мĕш хăнăхтару. Пĕр ача доска умĕнче, ыттисем вырăнта ĕçлеççĕ.

438-мĕш хăнăхтару. Текстри *вăрçать, вырăсла, чăпта* сăмахсене лексика тишкерĕвĕ тăваççĕ.

2. Воспитани тĕллевне пурнăçлани. 438-мĕш хăнăхтару.

439-мĕш хăнăхтару. Ирĕклĕ диктант мелĕпе çыраççĕ.

**IV. Урока пĕтĕмлетни.**

1. Учитель пĕтĕмлетĕвĕ.
2. Ачасен ĕçне хак пани.

**V. Киле ĕç пани.**

36–47§§; 438-мĕш хăнăхтарăвăн тексчĕпе усă курса пянхи пасара сăнласа парăр.

## *89-мĕш урок.* Лексикăна вĕреннине аса илсе пĕтĕмлетни

**Урок тĕллевĕсем:** 1. «Лексика» темăпа мĕн вĕреннине аса илсе пĕтĕмлетесси. 2. Сăмахсемпе пуплевре (калаçура, çырура) тĕрĕс усă курма хăнăхтарасси. 3. Ачасен чунĕнче ватăсене хисеплес туйăма вăратасси.

**Урок тĕсĕ: содержани тăрăх** – лексика урокĕ; **тĕллевне кура** – аса илӳпе пĕтĕмлетӳ урокĕ; **формине кура** – яланхи йĕркепе ирттерекен урок.

**Вĕрентӳ меслечĕсемпе ĕç хатĕрĕсем:** «Сăмахсене ушкăнлани» таблица, учитель ăнлантарăвĕ, калаçу.

**Çыхăнуллă пуплеве аталантарассипе çыхăннă ĕç:** хĕвел тухнă вăхăта, çĕнĕ кун пуçламăшне сăнласа (сăмах вĕççĕн, хăвăр юлташăра каласа панă пек) калав йĕркелесси.

### Урок юхăмĕ

**I. Вĕреннĕ материала аса илсе пĕтĕмлетни.**

1. Лексика çинчен мĕн пĕлнине класран пĕтĕмĕшле ыйтса тĕрĕслени.
2. Хăнăхтарусемпе ĕçлени.

441–444-мĕш хăнăхтарусем.

3. Воспитани тĕллевне пурнăçлани. 444-мĕш хăнăхтару.

**II. Урока пĕтĕмлетни.**

1. Учитель пĕтĕмлетни.

«Сăмахсене ушкăнлани» таблицăпа (129 с.) усă курса учитель сăмахсемпе пĕлсе, вырăнлă усă курни калас шухăша тĕрĕс йĕркелеме, вăйлатма пулăшнине палăртать, çавăнпа чĕлхери сăмах йышне куллен пуянлатса, ӳстерсе пыма кирли çинчен калать.

2. Урока ачасемпе пĕтĕмлетни.

– Пĕлтерĕшне кура сăмахсен мĕнле ушкăнĕсене уйăраççĕ?

– Пулса кайнине кура сăмахсене мĕнле ушкăнлама пулать? Тĕслĕхсем илсе парăр.

– Сăмахсене шухăш тăрăх пĕр-пĕринпе мĕнле çыхăннине кура мĕнле ушкăнсене уйăраççĕ? Тĕслĕхсемпе ăнлантарăр.

– Камсем, ăçта, хăçан усă курни тăрăх сăмахсене мĕнле ушкăнсене уйăрма пулать?

**III. Киле ĕç пани.**

440-мĕш хăнăхтару.

## СĂМАХ ТЫТĂМĔПЕ СĂМАХ ПУЛĂВĔ. ОРФОГРАФИ

### *90-мĕш урок.* Сăмах тымарĕ тата аффикссем (48§)

**Урок тĕллевĕсем:** 1. Сăмах тымарĕ тата аффикссем çинчен вĕрентесси. 2. Ачасене сăмах тымарĕпе аффикссене уйăрма, пуплевре сăмах формисемпе, çĕнĕ сăмахсемпе усă курма хăнăхтарасси.

**Урок тĕсĕ: содержани тăрăх** – морфологи (морфемика) урокĕ; **тĕллевне кура** – çĕнĕ темăна вĕрентмелли урок; **формине кура** – яланхи йĕркепе ирттерекен урок.

### Урок юхăмĕ

**I. Килти ĕçе тĕрĕслени.**

440-мĕш хăнăхтарăва ачасенчен пĕтĕмĕшле ыйтса тĕрĕслени.

**II. Çĕнĕ темăна вĕрентни.**

1. Вĕреннине аса илни.

Пуçламăш класс ачисем ансат тĕслĕхсем шайĕнче сăмах тăвакан тата сăмаха улăштаракан аффикссемпе паллашнă, сăмахпа ун форми хушшинчи уйрăмлăха кур-

ма хӑнӑхнӑ. Сӑмахсем пӗлтерӗшлӗ пайсенчен тӑнине асӑрхама, сӑмах тымарӗпе аффикссене уйӑрма вӗренсе пынӑ. «Сӑмах тымарӗ», «пӗр тымарлӑ сӑмахсем» ӑнлавсемпе, сӑмах тӑвакан хӑш-пӗр тухӑҫлӑ аффикссемпе паллашнӑ. Вӗсем шутӗнче: япала ячӗ тӑвакан *-ҫӑ(-ҫӗ), -лӑх(-лӗх), -у(-ӳ),* паллӑ ячӗ тӑвакан *-ак(-ек), -ӑк(-ӗк), -кӑн(-кӗн), -чӑн(-чӗн), -лӑ(-лӗ)* аффикссем. Ҫавӑн пекех пӗр тымартан пулнӑ сӑмахсене асӑрхаса ушкӑнлама *(ҫыр, ҫыру, ҫырулӑх),* тӗрӗс ҫырма хӑнӑхса пынӑ.

2. Ҫӗнӗ материала тишкерни.

Ачасем кӗнекере панӑ сӑмахсене вуласа танлаштараҫҫӗ, ыйтусене хуравлаҫҫӗ, унтан пӗтӗмлетӳ тӑваҫҫӗ: панӑ сӑмахсем пӗлтерӗшлӗ пайсенчен тӑраҫҫӗ, вӗсенчен пӗрисене (сӑмах тымарӗсене) уйӑрмашарӑн калама пулать, теприсене (аффикссене) вара – уйӑммӑн калама ҫук.

3. 445–447-мӗш хӑнӑхтарусене туни.

**III. Вӗреннине ҫирӗплетни.**

Хӑнӑхтарусемпе ӗҫлени.

448-мӗш хӑнӑхтару. Ачасем япала ячӗсем тата глаголсем ҫумне хушӑнакан тухӑҫлӑ аффикссене – *-ҫӑ(-ҫӗ), -лӑх(-лӗх), -у(-ӳ), -кӑч(-кӗч), -ла(-ле), -лӑ(-лӗ), -в* – аса илеҫҫӗ.

449-мӗш хӑнӑхтару. Панӑ сӑмахсене икӗ ушкӑна уйӑрма пулать: 1) *-у(-ӳ), -лӑх(-лӗх), -ҫӑ(-ҫӗ)* аффикссем хушӑннипе пулнӑ сӑмахсем; 2) нимӗнле аффикс та хушӑнман сӑмахсем.

**IV. Киле ӗҫ пани.**

48§; 451–452-мӗш хӑнӑхтарусем.

## *91-мӗш урок.* Калав ҫырасси

**Урок тӗллевӗсем:** 1. Ачасене калав ҫырма вӗрентесси. 2. Шухӑша текст темипе, тӗп шухӑшӗпе килӗшӳллӗн ҫырса пама хӑнӑхтарасси.

**Урок тӗсӗ: тӗллевне кура** – пуплеве аталантармалли урок; **формине кура** – яланхи йӗркепе ирттерекен урок.

### Урок юхӑмӗ

**I. Килти ӗҫе тӗрӗслени.**

1. 48§; 451–452-мӗш хӑнӑхтарусем.

2. Суйлавлӑ диктант. Панӑ сӑмахсенчен ачасем аф-

фикс хушăнса пулнисене суйласа çыраççĕ: *юман, çăкалăх, шĕшкĕ, çирĕклĕх; лар, çыру, кур, пĕлӳ, суту; сунарçă, йĕкел, пулăçă, кĕслеçĕ, çăлтăр.*

3. Вĕреннĕ материала аса илни.

453-мĕш хăнăхтарури сăмахсене вуламалла, танлаштармалла, уйрăмлăхне палăртмалла: хăш-пĕр сăмах вĕçĕнчи *т* сасă *ч* сасăпа ылмашать *(турат – турачĕ)*, теприсенче çавăн пекех юлать *(сĕтел – сĕтелĕ)*. Тĕслĕхсене тишкернĕ хыççăн кĕнекере ăнлантарнине вуламалла, пĕтĕмлетмелле.

454-мĕш хăнăхтару.

**II. Пуплеве аталантармалли материалпа ĕçлени.**

1. 450-мĕш хăнăхтарăва туни.

2. Ӳкерчĕкпе ĕçлени. Ачасем ӳкерчĕкре мĕн-мĕн пуррине палăртаççĕ.

3. Калав планне туни. План тăрăх каласа пăхаççĕ.

4. Калава çырни.

**III. Киле ĕç пани.**

48§; калава çырса пĕтермелле.

## *92-мĕш урок.* Сăмаха улăштаракан тата сăмах тăвакан аффикссем (49§)

**Урок тĕллевĕсем:** 1. Сăмаха улăштаракан тата сăмах тăвакан аффикссене пĕр-пĕринчен уйăрма вĕрентесси. 2. Ачасене пуплевре тĕл пулакан сăмах формисене, çĕнĕ сăмахсене тупма, вĕсемпе пĕлсе усă курма хăнăхтарасси.

**Урок тĕсĕ: содержани тăрăх** – морфологи (морфемика) урокĕ; **тĕллевне кура** – çĕнĕ темăна вĕрентмелли урок; **формине кура** – яланхи йĕркепе ирттерекен урок.

### Урок юхăмĕ

**I. Килти ĕçе тĕрĕслени.**

Ачасене пĕтĕмĕшле ыйтса тĕрĕслени.

– Сăмах мĕнле пĕлтерĕшлĕ пайсенчен тăрать?

– Мĕне сăмахăн тымарĕ теççĕ?

– Сăмах тымарĕ çумне хушăнакан пĕлтерĕшлĕ пайсене мĕн теççĕ?

– Аффикссăр сăмахсем пулаççĕ-и? Пĕр сăмахра темиçе аффикс пулма пултарать-и?

– Аффикссем миçе вариантлă пулаççĕ? Мĕншĕн?

**II. Çĕнĕ темăна вĕрентни.**

1. Кĕнекери чĕлхе материалне тишкерни. Ачасем сăмах тымарне тата аффиксĕсене тупса палăртаççĕ, танлаштарса пăхаççĕ. Панă сăмахсен тымарĕ пурин те пĕрешкел, анчах аффиксĕсем тĕрлĕрен. Ачасем аффикс хушăннипе хăш-пĕр сăмахăн пĕлтерĕшĕ улшăннине, хăшĕсен пĕлтерĕшĕ мар, форми çеç улшăннине асăрхаççĕ. Ачасем каланине учитель пĕтĕмлетет. Аффикссем икĕ тĕрлĕ пулаççĕ: пĕрисем сăмах тăваканнисем, вĕсем сăмахăн пĕлтерĕшне улăштарса çĕнĕ сăмах тăваççĕ; теприсем сăмахăн формине çеç улăштараççĕ, çавăнпа сăмаха улăштараканнисем шутне кĕреççĕ. Пĕтĕмлетӳ тунă хыççăн кĕнекери теори материалне вуламалла, маларах каланисене тепĕр хут çирĕплетсе хăвармалла. Правилăсене вуласа ачасем япала ячĕсемпе местоименисем вĕçленнине, глаголсем сăпатланнине пĕлеççĕ.

2. Сăмаха улăштаракан аффикссен уйрăмлăхĕсемпе паллаштарни. Çĕнĕ материалпа малтан учитель хăй паллаштарать, тĕслĕхсемпе çирĕплетет. Сăмахран, *Шупашкар хули* сăмах майлашăвĕ *Шупашкар* тата *хула* сăмахсем пĕрлешнипе пулнă. Енчен те *-и* аффикс пулман пулсан çак икĕ сăмахăн çыхăнăвĕ ăнланмалла пулмĕччĕ: *Шупашкар хула.*

3. Сăмах тăвакан аффикссен уйрăмлăхĕсемпе паллаштарни. Чăваш чĕлхинче аффикс хушăннипе япала ячĕсем, паллă ячĕсем, глаголсем пулаççĕ. Пуçламăш классенче ачасем сăмах тăвакан *-лăх(-лĕх), -çă(-çĕ), -ăç(-ĕç), -в, -у(-ӳ), -кка(-кке), -ла(-ле), -лан(-лен), -лат(-лет), -тат(-тет)* аффикссемпе паллашнă. Вĕсемпе 5-мĕш класра малалла ĕçлемелле тата сăмах тăвакан çак аффикссене кĕртсе пымалла: *-лаш(-леш) (туслаш, мирлеш), -кăч(-кĕч) (ларкăч, пĕркĕч), -ă(-ĕ) (касă, типĕ), -ăм(-ĕм) (пусăм, тӳсĕм), -ăк(-ĕк) (хуçăк, çĕрĕк), -ар(-ер) (кăвакар), -кăн(-кĕн) (вĕçкĕн, чупкăн), -амас(-емес) (тачкамас, çӳçлемес).*

**III. Вĕреннине çирĕплетни.**

Хăнăхтарусемпе ĕçлени.

455–457, 459-мĕш хăнăхтарусем.

458-мĕш хăнăхтару – çыхăнуллă текст. Ку текстăн воспитани пĕлтерĕшĕ пысăк, çавăнпа та ачасемпе калаçу йĕркелесен аван.

460-мӗш хӑнӑхтару. Ачасем сӑмах формисемпе ҫӗнӗ сӑмахсене уйӑрма вӗренеҫҫӗ.

**IV. Киле ӗҫ пани.**

49§; 461–462-мӗш хӑнӑхтарусем.

## *93-мӗш урок.* Сӑмаха улӑштаракан тата сӑмах тӑвакан аффикссем (49§). Пӗрремӗшле тата иккӗмӗшле сӑмахсене уйӑрма вӗрентесси

**Урок тӗллевӗсем:** 1. Сӑмаха улӑштаракан тата сӑмах тӑвакан аффикссене, пӗрремӗшле тата иккӗмӗшле сӑмахсене пӗр-пӗринчен уйӑрма вӗрентесси. 2. Пӗрремӗшле тата иккӗмӗшле сӑмахсемпе пуплевре пӗлсе усӑ курма хӑнӑхтарасси.

**Урок тӗсӗ: содержани тӑрӑх** – морфологи (морфемика) урокӗ; **тӗллевне кура** – ҫӗнӗ темӑна вӗрентмелли урок; **формине кура** – яланхи йӗркепе ирттерекен урок.

### Урок юхӑмӗ

**I. Килти ӗҫе тӗрӗслени.**

1. 49§; 461–462-мӗш хӑнӑхтарусем.

2. Сӑмах диктанчӗ: *тӑванлӑх, ачалӑх, хӗрӳлен, кӗмӗллен, ҫӑмӑллан, ҫӑмӑллӑх, сиенле, пилле, шелле, тирпейлӗх, ачалла, пӗчӗкле.* Аффикс хушӑнса пулнӑ сӑмахсене тӗрӗс ҫырасси.

**II. Ҫӗнӗ темӑна вӗрентни.**

1. Чӗлхе материалне тишкерни. Ачасем 463-мӗш хӑнӑхтарури сӑмахсене вуласа танлаштараҫҫӗ. Кунта *юман* сӑмахӑн формисем те, унран аффикс хушӑнса пулнӑ ҫӗнӗ сӑмахсем те пур. Тӗслӗхсене пӑхнӑ хыҫҫӑн пӗтӗмлетӳ тумалла: сӑмах тымарӗ сӑмахӑн пӗлтерӗшлӗ чи пӗчӗк пайӗ, унсӑр сӑмах пулма пултараймасть. Сӑмах тымарӗ ҫумне сӑмах тӑвакан тата сӑмаха улӑштаракан аффикссем хушӑнма пултараҫҫӗ. Сӑмаха улӑштаракан аффикссене кӑларса пӑрахсан сӑмах тӗпӗ юлать. Сӑмах тӗпӗ сӑмах тымарӗпе пӗрешкел (сӑмах тымартан ҫеҫ тӑрать пулсан) пулма е тымарпа сӑмах тӑвакан аффиксран та тӑма пултарать, урӑхла каласан, сӑмах тӗпӗ пӗрремӗшле е иккӗмӗшле пулать.

2. Теори материалĕпе паллаштарни. Пĕтĕмлетӳ тунă хыççăн кĕнекери материала вуласа маларах каланине çирĕплетмелле.

**III. Вĕреннине çирĕплетни.**

Хăнăхтарусемпе ĕçлени. Ачасен пĕлӳ шайне кура хăнăхтарусене суйлавлă тумалла. Хăшне-пĕрне сăмах вĕççĕн те тума пулать.

464–466, 469-мĕш хăнăхтарусем. Ку ĕçсенче иккĕмĕшле сăмахсене мĕнле çырмаллине асăрхаса пымалла *(кахаллан, сахаллан, тĕрĕслĕх).*

467–468-мĕш хăнăхтарусем.

470–473-мĕш хăнăхтарусем. Ачасем пĕрремĕшле е иккĕмĕшле сăмахсене уйăрма хăнăхаççĕ.

474–476-мĕш хăнăхтарусем – пуç ватмăшсем. 477-мĕш хăнăхтаруri тĕслĕхсене тишкерсе ачасем пĕр тымартан тĕрлĕ аффикс хушса темиçе сăмах тума май пуррине пĕлеççĕ. Ку сăмах йышне ӳстерме пулăшать.

**IV. Киле ĕç пани.**

49§; 471, 479-мĕш хăнăхтарусем.

## *94-мĕш урок.* «Çуркуние çитрĕ» сочинени

**Урок тĕллевĕсем:** 1. Ачасене сочинени çырма вĕрентесси. 2. Шухăша вĕçе-вĕçĕн, çыхăнуллă сăнлав-калав формипе çырса е каласа кăтартма хăнăхтарасси.

**Урок тĕсĕ: тĕллевне кура** – пуплеве аталантармалли урок; **формине кура** – яланхи йĕркепе ирттерекен урок.

**Вĕрентӳ меслечĕсем:** учитель ăнлантарăвĕ, калаçу.

### Урок юхăмĕ

**I. Килти ĕçе тĕрĕслени.**

49§; 471, 479-мĕш хăнăхтарусем.

**II. Пуплеве аталантармалли материалпа ĕçлени.**

1. Урок темипе, тĕллевĕпе паллаштарни.

2. «Çуркунне çитрĕ» (204 с.) ӳкерчĕкпе ĕçлени.

– Ӳкерчĕкре çулталăкăн хăш вăхăтне сăнласа панă?

– Ачасем ăçта кайма тухнă?

– Ачасен сăн-пичĕ, кăмăл-туйăмĕ мĕнле?

3. Сочинени планне туни.

4. Çуркунне çинчен çыхăнуллă каласа пани.

5. Сочинени çырни.

**III. Урока пĕтĕмлетни.**

1. Ыйтусене хуравлани.

– Сочинени çырнă чух сирĕншĕн чи йывăрри мĕн пулчĕ?

– Çуркуннехи çут çанталăка, кăнтăртан вĕçсе килекен кайăк-кĕшĕке сăнланă чух эпитетсемпе тата ытти сăнарлă сăмахсемпе усă куртăр-и?

– Сăмах тăвакан тата сăмаха улăштаракан аффикссемлĕ сăмахсемпе усă куртăр-и?

– Орфографи тĕлĕшĕнчен йывăр сăмахсем пулчĕç-и? Мĕнле çыртăр вĕсене?

2. Урока вĕçлени.

**IV. Киле ĕç пани.**

Сочинение тетраде çырса килмелле.

## *95-мĕш урок.* Аффикссем хушăнса пулнă сăмахсене тĕрĕс çырасси (50§)

**Урок тĕллевĕсем:** 1. Аффикссем çинчен мĕн пĕлнине аса илсе çирĕплетесси. 2. Аффикс хушăнса пулнă сăмахсене тĕрĕс çырма хăнăхтарасси.

**Урок тĕсĕ: содержани тăрăх** – морфологи (морфемика) урокĕ; **тĕллевне кура** – çирĕплетӳ урокĕ; **формине кура** – яланхи йĕркепе ирттерекен урок.

### Урок юхăмĕ

**I. Килти ĕçе тĕрĕслени.**

1. Сочиненисене вуласа тишкерни.

2. Вĕреннине класран пĕтĕмĕшле ыйтса тĕрĕслени.

– Аффикссем мĕнлисем пулаççĕ?

– Сăмаха улăштаракан аффикссем мĕн тума кирлĕ?

– Сăмах тăвакан аффикссем мĕнле сăмахсем тăваççĕ?

– Чăваш чĕлхинче аффикссем ытларах мĕнле пуплев пайĕсем çумне хушăнаççĕ?

3. Сăмах диктанчĕ (аффикс хушăнса пулнă сăмахсене тĕрĕс çырасси).

**II. Вĕреннине çирĕплетни.**

1. Правилăсене вулани, тĕслĕхсене тишкерни.

Ачасем сӑмах ҫумне *-лӑ(-лӗ), -ла(-ле), -лӑх(-лӗх), -ӑн(-ӗн), -тар(-тер)* аффикссем хушӑнса пулнӑ тӗслӗхсене тишкереҫҫӗ, пӗтӗмлетӳ тӑваҫҫӗ.

2. Хӑнӑхтарусемпе ӗҫлени.

481-мӗш хӑнӑхтару.

482–484-мӗш хӑнӑхтарусем.

**III. Киле ӗҫ пани.**

50§; 485-мӗш хӑнӑхтару.

## *96-мӗш урок.* Ӑнлантару диктанчӗ

**Урок тӗллевӗсем:** 1. Аффикссем ҫинчен мӗн пӗлнине ҫирӗплетесси. 2. Аффикс хушӑнса пулнӑ сӑмахсене тӗрӗс ҫырма хӑнӑхтарасси.

**Урок тӗсӗ: содержани тӑрӑх** – морфологи (морфемика) урокӗ; **тӗллевне кура** – ҫирӗплетӳ урокӗ; **формине кура** – яланхи йӗркепе ирттерекен урок.

**Вӗрентӳ меслечӗсем:** учитель ӑнлантарӑвӗ, калаҫу.

### Урок юхӑмӗ

**I. Ӑнлантару диктанчӗ ҫырни.**

ҪАРАНЛӐХ

Ӑвӑслӑх тӳпемӗ – илемлӗ вырӑн. Пӗр енче ҫырма-ҫатраллӑ чӑтлӑх вӑрман вырнаҫнӑ. Унта хӑвӑл юманран тунӑ каска вӗллеллӗ утарсем. Кашни пӗчӗк уҫланкӑрах пур вӗсем.

Вӑрман ҫумӗнчи ял еннелле ҫаранлӑх. Ҫак ҫарана кашни ҫул ятарласа хурал тытса сыхласа ӳстереҫҫӗ. Ял ҫыннисем ҫӗртме тума тухсан вара ачасем кунта лашасене выртмана илсе тухаҫҫӗ, тул ҫутӑличченех ҫитерсе ҫӳреҫҫӗ.

Ӑвӑслӑх ҫаранӗнче пурте ирӗклӗ, ҫил ҫунатлӑ вара. Ҫуллахи ӑшӑ та кӗске каҫсенче кунта вӑйӑ-кулӑпа юрӑ сасси чарӑнма та пӗлмест. *(С.Аслан ҫырни тӑрӑх.)*

**II. Грамматика ӗҫне туни.** Ачасем текстри предложенисенче аффикс хушӑнса пулнӑ сӑмахсене тупаҫҫӗ, вӗсене мӗнле ҫырмаллине уҫӑмлатакан правилӑсене аса илеҫҫӗ: *ӑвӑс+лӑх, илем+лӗ, вӗлле+ллӗ, ҫаран+лӑх, ирӗк+лӗ, ҫунат+лӑ, ҫулла+хи.* Вӗреннӗ ытти орфограммӑсемпе *(еннелле, ҫыннисем, сасси, ҫутӑличченех; ҫӳреҫҫӗ, ӳстереҫҫӗ, тухаҫҫӗ, пӗлмест; вӑйӑ-кулӑпа, ҫырма-ҫатраллӑ)* пунктограммӑсене тишкерме юрать.

**III. Урока пĕтĕмлетни.**

**IV. Киле ĕç пани.** 50§; 485-мĕш хăнăхтару.

## *97-мĕш урок.* Хутлă сăмахсем, вĕсен тĕсĕсем (51§)

**Урок тĕллевĕсем:** 1. Хутлă сăмахсене вĕрентесси. 2. Ачасене пуплевре хутлă сăмахсене асăрхама, вĕсемпе пĕлсе усă курма, тĕрĕс çырма хăнăхтарасси.

**Урок тĕсĕ: содержани тăрăх** – морфологи (сăмах пулăвĕ) урокĕ; **тĕллевне кура** – çĕнĕ темăна вĕрентмелли урок; **формине кура** – яланхи йĕркепе irtтерекен урок.

### Урок юхăмĕ

**I. Килти ĕçе тĕрĕслени.**

1. 50§; 485-мĕш хăнăхтару.

2. Сăмах диктанчĕ (аффикс хушăнса пулнă сăмахсене тĕрĕс çырасси).

**II. Çĕнĕ темăна вĕрентни.**

1. Чĕлхе материалне тишкерни. Ачасем икĕ юпара çырнă сăмахсемпе паллашаççĕ, вĕсем хушшинчи уйрăмлăха палăртаççĕ: сулахайри юпара пĕрер сăмаха, сылтăмринче сăмах майлашăвĕсене çырса пană. Апла пулин те икĕ юпари сăмахсен пĕлтерĕшĕ пĕрешкел: пĕринче сăмахсене пĕрлештерсе, тепринче уйăрса çырнă. Пĕрле çырнисене хутлă сăмахсем теççĕ. Юпасенчи сăмахсене танлаштарни хутлă сăмахсем сăмах майлашăвĕсенчен пулса кайнине кăтартса парать.

2. Теори материалне ăнлантарни. Ачасем кĕнекери теори материалне вулаççĕ, хутлă сăмахсен тĕсĕсем çинчен, вĕсен пулăвĕ çинчен пĕлеççĕ. Хутлă сăмахсем шутне кĕскелсе пулнă тата ятарласа кĕскетсе тунă тĕслĕхсем те кĕреççĕ. Кунта аббревиатурăсемпе паллаштармалла, вĕсене мĕнле çырмалли çинчен те каламалла.

Чăваш чĕлхинчи икĕ сăмахран тăракан ял ячĕсене пĕрле çырмалли çинчен те каламалла, тĕслĕхсемпе çирĕплетмелле. Кунтах уйрăм сăмах пĕлтерĕшĕпе çӳрекен сăмах майлашăвĕсене (*упа сарри, куç харши, ырă ту*) асăнса хăвармалла, уйрăм çырмаллине асăрхаттармалла.

**III. Вĕреннине çирĕплетни.**

Хăнăхтарусемпе ĕçлени.

488–489, 490–491-мĕш хăнăхтарусем.

493, 496-мĕш хăнăхтарусем. Ачасем вĕсене сăмах вĕççĕн тăваççĕ.

497-мĕш хăнăхтару – çыхăнуллă текст. Ку текста кăмăл-туйăма палăртса вулаççĕ, ăна ят параççĕ, унăн тĕсне, илемлĕхне палăртаççĕ. Ачасем пĕр сăмах пĕлтерĕшлĕ сăмах майлашăвĕсене тупаççĕ: *пир тĕрки, мамăк купи, упа сарри, сурăх кĕтĕвĕ, упа ушкăнĕ.*

**IV. Киле ĕç пани.**

51§; 492, 494-мĕш хăнăхтарусем.

## *98-мĕш урок.* Хутлă сăмахсене тĕрĕс çырасси. Диктант

**Урок тĕллевĕсем:** 1. Хутлă сăмахсем çинчен вĕреннине çирĕплетесси. 2. Хутлă сăмахсене тĕрĕс çырма, вĕсемпе пуплевре пĕлсе усă курма хăнăхтарасси.

**Урок тĕсĕ: содержани тăрăх** – морфологи (сăмах пулăвĕ) урокĕ; **тĕллевне кура** – çирĕплетӳ урокĕ; **формине кура** – яланхи йĕркепе ирттерекен урок.

**Вĕрентӳ меслечĕсемпе ĕç хатĕрĕсем:** учитель ăнлантарăвĕ, калаçу; Петрова Л.Г. Диктантсен пуххи, 2006.

### Урок юхăмĕ

**I. Килти ĕçе тĕрĕслени.**

51§; 492, 494-мĕш хăнăхтарусем.

**II. Диктант çырни.**

ТĂВАН ЧĔЛХЕ

Тăван чĕлхе – вăл тăван халăхăн нихçан иксĕлми ăс-тăн çăл куçĕ. Çак çăл куçĕнчен эпир мĕн ачаранпах вăй илсе ӳсетпĕр. Тăван сасăран, тăван чĕлхерен пирĕн ăс-тăн аталанма пуçланă.

Тăван чĕлхе вăл – халăхăн авалăхĕ, сумлă та телейлĕ малашлăхĕ.

Чăваш халăхĕ мĕн авалтанах çамрăксене хăйсен тăван чĕлхине юратма, хисеплеме ахальтен вĕрентмен. Аслашшĕсен чĕлхине пĕлмене чăваш мĕскĕне хунă, маннине шелленĕ, телейсĕр тесе шутланă.

Тăван чĕлхемĕрçĕм... Эсĕ асаттесен пилĕ, асаннесен тупи, атте ӳкĕчĕ, аппа такмакĕ, пичче вĕрентĕвĕ, шăллăм тавĕ, йăмăкăн ачашлăхĕ, хурăнташсен, кӳршĕсен ырă кăмăлĕ...

Тăван чĕлхемĕрçĕм... Çĕленĕн те чĕлхи пур. Çăхан та хăй юррине манмасть. Икĕ чĕлхе – икĕ ăс, виçĕ чĕлхе – виçĕ ăс. Ăслă пулар эппин! *(Г. Волков çырнинчен.)*

**III. Грамматика ĕçне туни.**

1. Предложенисенче тĕл пулакан хутлă сăмахсем мĕнле сăмахсенчен пулнине ăнлантарни: *аслашшĕ – аслă ашшĕ, асатте – аслă атте, асанне – аслă анне.*

2. *Аваллăх, малашлăх, ачашлăх* сăмахсен пулăвне ăнлантарни: *авал-лăх, малаш-лăх, ачаш-лăх.*

**IV. Урока пĕтĕмлетни.**

**V. Киле ĕç пани.**

51-мĕш параграфри теори материалне вуламалла.

## *99-мĕш урок.* Мăшăр сăмахсем (52§)

**Урок тĕллевĕсем:** 1. Мăшăр сăмахсем çинчен вĕрентесси. 2. Ачасене пуплевре мăшăр сăмахсене тупма, вĕсемпе пĕлсе усă курма, вĕсене тĕрĕс çырма хăнăхтарасси.

**Урок тĕсĕ: содержани тăрăх** – морфологи (сăмах пулăвĕ) урокĕ; **тĕллевне кура** – çĕнĕ темăна вĕрентмелли урок; **формине кура** – яланхи йĕркепе ирттерекен урок.

### Урок юхăмĕ

**I. Диктантри йăнăшсемпе ĕçлени.**

**II. Çĕнĕ темăна вĕрентни.**

1. 498-мĕш хăнăхтарури сăмахсене тишкерни.

Вĕрентекен ертсе пынипе ачасем юпари сăмахсен пĕлтерĕшĕ пĕр пек маррине асăрхаççĕ: *сĕтел-пукан* тенĕ чух сăмахăн пĕлтерĕшĕ пĕтĕмлетӳллĕ пулать, урăхла каласан, кунта сăмах сĕтелпе пукан çинчен çеç пымасть. Сĕтел-пукан шутне тенкел те, сак та, диван та, парта та кĕме пултарать. Кун пек сăмахсене мăшăр сăмахсем теççĕ. Мăшăр сăмахсене яланах дефиспа çырмалла.

2. Теори материалне вулани.

Мăшăр сăмахсем çинчен ăнлантарнинче ачасене астуса юлмалли – тĕсе пĕлтерекен паллă ячĕсенчен пулнă сăмах пĕрлешĕвĕсене уйрăм çыраси: *шупка кăвак, çутă симĕс, тĕксĕм хĕрлĕ.*

3. 501-мĕш хăнăхтарури тĕслĕхсене тишкерни.

Ачасем учитель ертсе пынипе мăшăр сăмахсем кирек мĕнле сăмаха пĕрлештерсе каланипе пулманнине, вĕсем синонимлă, антонимлă сăмахсенчен çеç пулнине палăртаççĕ, тĕслĕхсемпе çирĕплетеççĕ.

**III. Вĕреннине çирĕплетни.**

Хăнăхтарусемпе ĕçлени.

449-мĕш хăнăхтару. Ачасем хăйсем тĕллĕн ĕçлеççĕ.

500-мĕш хăнăхтару. Çыхăнуллă текстăн пĕтĕмĕшле темине палăртса ят пама, текстăн вакрах пайĕсене тупма, шухăш çыхăнăвне йĕрлеме пултараççĕ.

502–506-мĕш хăнăхтарусем. Ачасем мăшăр сăмахсен пулăвĕ çинчен мĕн вĕреннине çирĕплетеççĕ.

**IV. Киле ĕç пани.** 52§; 507–508-мĕш хăнăхтарусем.

## *100-мĕш урок.* Мăшăр сăмахсем

**Урок тĕллевĕсем:** 1. Ачасене сочинени çырма вĕрентесси. 2. Шухăша темăпа килĕшӳллĕ, çыхăнуллă çырса палăртма хăнăхтарасси.

**Урок тĕсĕ: содержани тăрăх** – морфологи (сăмах пулăвĕ) урокĕ; **тĕллевне кура** – çĕнĕ темăна вĕрентмелли урок; **формине кура** – яланхи йĕркепе ирттерекен урок.

### Урок юхăмĕ

**I. Килти ĕçе тĕрĕслени.**

1. 52§; 507–508-мĕш хăнăхтарусем.
2. Мăшăр сăмахсем çинчен мĕн пĕлнине ыйтусем парса тĕрĕслени.

– Мĕнле сăмахсене мăшăр сăмахсем теççĕ?

– Мăшăр сăмахсем мĕнле пĕлтерĕшлĕ?

– Мăшăр сăмахсене мĕнле çырмалла?

– Мăшăр сăмахсем мĕнле пĕлтерĕшлĕ сăмахсенчен пулаççĕ?

**II. Çĕнĕ темăна вĕрентни.**

Çĕнĕ правилăсемпе (214 с.) паллаштарни. Ачасем мăшăр сăмахсем çумне сăмаха улăштаракан аффикссем хушăнма пултарни çинчен пĕлеççĕ. Çĕнни – аффикссем мăшăр сăмахăн иккĕмĕш пайĕ тата икĕ пайĕ çумне те хушăнма пултарни.

**III. Вĕреннине çирĕплетни.**

1. 509–510-мĕш хăнăхтарусемпе ĕçлени.
2. «Лавккара» сочинени çырни. 512-мĕш хăнăхтару.

**IV. Киле ĕç пани.**

52-мĕш параграфри теори материалне вуламалла.

## *101-мӗш урок.* Икӗ хут калакан сӑмахсем, вӗсене тӗрӗс ҫырасси (53§). Диктант

**Урок тӗллевӗсем:** 1. Икӗ хут калакан сӑмахсем ҫинчен вӗреннине ҫирӗплетесси. 2. Ачасене икӗ хут калакан сӑмахсене тӗрӗс ҫырма хӑнӑхтарасси.

**Урок тӗсӗ: содержани тӑрӑх** – морфологи урокӗ; **тӗллевне кура** – ҫӗнӗ темӑна вӗрентмелли урок; **формине кура** – яланхи йӗркепе ирттерекен урок.

### Урок юхӑмӗ

**I. Сочиненири йӑнӑшсене тишкерни.**

**II. Ҫӗнӗ темӑна вӗрентни.**

1. Кӗнекери чӗлхе материалне тишкерни. Ачасем икӗ хут калакан сӑмахсене тупаҫҫӗ, вӗсен пӗлтерӗшне сӑнаҫҫӗ, вӗрентекен пулӑшнипе пӗтӗмлетӳ тӑваҫҫӗ: икӗ хут калакан сӑмахсем нумайлӑха *(уйӑхӗ-уйӑхӗпе)*, пӗр-пӗр паллӑ е пахалӑх вӑйлӑ палӑрнине *(ҫӳллӗ-ҫӳллӗ)*, ӗҫ тӑсӑлнине *(кайсан-кайсан)*, япаласен хисепӗ паллах маррине *(пин-пин ҫын)* пӗлтереҫҫӗ.

2. Теори материалне (53§) вуласа ӑнланни.

3. 514-мӗш хӑнӑхтарӑва туни. Аффикссем икӗ хут калакан сӑмахӑн кашни пайӗ ҫумне те, уйрӑмшарӑн та хушӑнма пултарнине асӑрхаҫҫӗ.

**III. Вӗреннине ҫирӗплетни.**

Хӑнӑхтарусемпе ӗҫлени.

513-мӗш хӑнӑхтару. Ачасем икӗ хут калакан сӑмахсене синонимсемпе ылмаштарма май пуррине пӗлеҫҫӗ *(пӑха-пӑха – пӑхса, пӑхкаласа; шавла-шавла – шавласа, шавлакаласа; ларчӗ-ларчӗ – ларсан-ларсан; пин-пин – нумай-нумай).*

515-мӗш хӑнӑхтару.

516–517-мӗш хӑнӑхтарусем. Ачасем икӗ хут калакан сӑмахсене мӗнле сӑмахсемпе ылмаштарма май пуррине калаҫҫӗ *(час-часах – пӗрмаях; ир-ирех – ирхине, питӗ ир; пин-пин – нумай; ҫырчӗ-ҫырчӗ – ҫырсан-ҫырсан).*

519-мӗш хӑнӑхтару – ҫыхӑнуллӑ текст. Калава вуласа ят памалла, чӗлхине сӑнамалла, илемлӗх мелӗсене палӑртмалла.

**IV. Киле ӗҫ пани.**

53§; 518-мӗш хӑнӑхтару.

## *102-мӗш урок.* Пӗтӗмлетӳ урокӗ. 48-53-мӗш параграфсенчи материала вӗреннине аса илсе пӗтӗмлетесси. Асӑрхаттару диктанчӗ

**Урок тӗллевӗсем:** 1. Вӗреннине ҫирӗплетесси. 2. Ачасен орфографипе пунктуаци хӑнӑхӑвӗсене ҫирӗплетесси.

**Урок тӗсӗ: тӗллевне кура** – ҫирӗплетӳ урокӗ; **формине кура** – яланхи йӗркепе ирттерекен урок.

### Урок юхӑмӗ

**I. Килти ӗҫе тӗрӗслени.**

1. 53§; 518-мӗш хӑнӑхтару.

2. Сӑмах диктанчӗ. Хутлӑ, мӑшӑр тата икӗ хут калакан сӑмахсене тӗрӗс ҫырма вӗрентесси: *алсиш, асатте, ҫӑраҫҫи, ӑс-тӑн, ӗҫ-хӗл, кун-ҫул, шыв-шур, шӑнапӑван, лару-тӑру, ҫил-тӑвӑллӑ, тӗлме-тӗл, лавӗ-лавӗпе, пин-пин, ҫултан-ҫул.*

**II. Вӗреннине ҫирӗплетни.**

1. Ыйтусене хуравлани, тӗслӗхсемпе ҫирӗплетни.

– Сӑмах мӗнле пӗлтерӗшлӗ пайсенчен тӑрать?

– Сӑмахӑн пӗлтерӗшлӗ чи кирлӗ пайӗ хӑшӗ?

– Сӑмах тымарӗ ҫумне хушӑнса пыракан пӗлтерӗшлӗ пайсене мӗнле калаҫҫӗ?

– Пӗр сӑмахра миҫе аффикс пулма пултарать?

– Аффикссӑр сӑмах пулать-и?

– Тымарсӑр сӑмах пулать-и?

– Аффикссем мӗнлисем пулаҫҫӗ?

– Сӑмаха улӑштаракан аффикссем мӗн тума кирлӗ?

– Чӑваш чӗлхинче мӗнле пуплев пайне кӗрекен сӑмахсем вӗҫленеҫҫӗ?

– Мӗнле пуплев пайне кӗрекен сӑмахсем сӑпатланаҫҫӗ?

– Сӑмах тӑвакан аффикссем тесе хӑшӗсене калаҫҫӗ? Вӗсенчен хӑшӗсем тухӑҫлӑ?

– Чӑваш чӗлхинче мӗнле пуплев пайне кӗрекен сӑмахсем аффикс хушӑннипе пулма пултараҫҫӗ?

– Мӗнле сӑмаха пӗрремӗшле, мӗнле сӑмахсене иккӗмӗшле теҫҫӗ?

– Иккӗмӗшле сӑмахсем мӗнле мелпе пулаҫҫӗ? Тӗслӗхсемпе ҫирӗплетӗр.

– Пĕр тымартан темиçе çĕнĕ сăмах тума пулать-и? Тĕслĕхпе ăнлантарăр.

– Аффикс хушăнса пулнă сăмахсене тĕрĕс çырмалли мĕнле правилăсене пĕлетĕр? Тĕслĕхсемпе ĕнентерĕр.

– Мĕнле сăмахсене хутлă теççĕ? Вĕсем мĕнлисем пулаççĕ?

– Хутлă сăмахсене мĕнле çырмалла?

– Аббревиатурăсем тесе мĕнле сăмахсене калаççĕ?

– Мăшăр сăмахсем тесе мĕнлисене калаççĕ? Вĕсем мĕнле пĕлтерĕшлĕ сăмахсенчен пулаççĕ?

– Мăшăр сăмахсене мĕнле çырмалла?

– Икĕ хут калакан сăмахсем мĕне пĕлтереççĕ?

– Икĕ хут калакан сăмахсене мĕнле çырмалла?

2. Асăрхаттару диктанчĕ çырни.

## *103-мĕш урок.* **Тĕрĕслев диктанчĕ**

## *104-мĕш урок.* **Йăнăшсемпе ĕçлени**

## *105-108-мĕш уроксем.* **5-мĕш класра вĕреннине аса илесси**

Учитель уроксене кĕнекери материалпа усă курса ачасен пĕлӳ шайне, вĕсем палăртнă темăсене епле ăнланнине кура хăйне кирлĕ пек йĕркелесе ирттерме пултарать.

# УСĂ КУРМА СĔННĔ ЛИТЕРАТУРА

1. *Андреев, И.А.* Чăваш чĕлхи программи: чăваш шкулĕн V–IX класĕсем валли / И.А.Андреев. – Шупашкар, 2007.

2. *Андреев, В.Ю.* Чăваш чĕлхи: чăваш шкулĕн V класĕ валли: электрон пособийĕ / В.Ю.Андреев. – Шупашкар, 2007.

3. *Андреев, В.Ю.* Пĕлӳ шыраса: чăваш шкулĕн V класĕ валли: электрон пособийĕ / В.Ю.Андреев. – Шупашкар, 2006.

4. *Андреев, В.Ю.* Кайăксем: электрон пособийĕ / В.Ю.Андреев. – Шупашкар, 2006.

5. *Андреева, Е.А.* Чăваш чĕлхи. Синтаксис: справочник / Е.А.Андреева. – Шупашкар, 2008.

6. *Андреева, Е.А.* Чăваш чĕлхи. Тест пуххи: V класс. / Е.А.Андреева, И.В.Николаева. – Шупашкар, 2008.

7. *Брусова, Г.Ф.* Изложени тексчĕсен пуххи: V–IX классенче вĕрентекенсем валли / Г.Ф.Брусова. – Шупашкар, 1997.

8. *Виноградов, Ю.М.* Орфографи словарĕ. Тĕрĕс çырмалли правилăсем / Ю.М.Виноградов, Г.М.Виноградова. – Шупашкар, 2002.

9. *Виноградов, Ю.М.* Чăваш орфографине шкулта вĕрентесси / Ю.М.Виноградов. – Шупашкар, 2007.

10. *Данилова, М.Г.* Сочинени евĕр изложенисем: чăваш шкулĕн V–XI класĕсем валли / М.Г.Данилова, М.З.Табакова. – Шупашкар, 2007.

11. *Ермакова, Н.В.* Чăваш чĕлхин морфологийĕпе синтаксисĕ: чăваш шкулĕн VI–IX класĕсем валли / Н.В.Ермакова, Л.Г.Петрова. – Шупашкар, 2009.

12. *Петрова, Л.Г.* Хăнăхтару пуххи: V класс валли / Л.Г.Петрова. – Шупашкар, 2009.

13. *Петрова, Л.Г.* Диктант пуххи: V–XI классем валли / Л.Г.Петрова, В.А.Егорова. – Шупашкар, 2006.

104 *Сергеев, Л.П.* Грамматика вăййисем: V–IX классем валли / Л.П.Сергеев. – Шупашкар, 2008.

15. *Сергеев, Л.П.* Сăмах диктанчĕсем: вăтам шкул валли / Л.П.Сергеев, И.Г.Яковлева. – Шупашкар, 2006.

16. *Сергеев, Л.П.* Чăваш чĕлхи: справочник: вăтам шкул валли / Л.П.Сергеев, Е.А.Андреева. – Шупашкар, 2004.

17. *Скворцов, М.И.* Русско-чувашский словарь: вĕренекенсем валли / М.И.Скворцов. – Чебоксары, 2002.

18. *Чернов, М.Ф.* Чăвашла-вырăсла фразеологи словарĕ: глаголпа ят сăмах фразеологизмĕсем / М.Ф.Чернов. – Шупашкар, 1982.

19. Чувашско-русский словарь / под ред. М.И.Скворцова. – М., 1982.

# ТУПМАЛЛИ


Умĕн калани .................................................... 3

Уроксем

**ПУÇЛАМĂШ КЛАССЕНЧЕ ВĔРЕННИНЕ АСА ИЛСЕ ÇИРĔПЛЕТЕССИ, ХУШСА ВĔРЕНТЕССИ**

*1-мĕш урок.* Тăван чĕлхе .................................................... 8

*2-мĕш урок.* Сасă тата сас палли. Алфавит (1§). *Б, г, д, ж, з, ф, ц, щ, ъ, ь* сас паллисене çырасси (2§) .................................................... 9

*3-мĕш урок.* Сăмах тымарĕ. Аффикссем (3§) .................................................... 11

*4-мĕш урок.* «Кĕрхи кунсем» сăнлав сочиненийĕ .................................................... 12

*5-мĕш урок.* Пуçламăш классенче вĕреннĕ пуплев пайĕсем (4§) .................................................... 13

*6-мĕш урок.* Пуçламăш классенче вĕреннĕ пуплев пайĕсем (4§) .................................................... 14

*7-мĕш урок.* Предложени, унăн членĕсем. Пĕр йышши членсем, вĕсене чарăну паллисемпе уйăрасси (5§) .................................................... 16

*8-мĕш урок.* Ыйтуллă тата ыйтусăр предложенисем. Кăшкăруллă предложени (6§) .................................................... 17

*9-мĕш урок.* Тĕрĕслев диктанчĕ .................................................... 18

*10-мĕш урок.* Текст. Унăн пайĕсем (7§) .................................................... 19

*11-мĕш урок.* Текст пайĕсене çыхăнтармалли мелсем (7§)... ... .20

*12-мĕш урок.* Изложени .................................................... 21

*13-мĕш урок.* Чĕнӳ сăмахĕсем, вĕсене чарăну паллисемпе уйăрасси (8§) .................................................... 22

*14-мĕш урок.* Текст теми, тĕп шухăшĕ (9§) .................................................... 22

*15-мĕш урок.* Сочинени .................................................... 23

*16-мĕш урок.* Хутлă предложени. Союзсăр сыпăнуллă хутлă предложенисем (10§) .................................................... 24

*17-мĕш урок.* Союзсăр тата сыпăнуллă хутлă предложенисем .................................................... 25

*18-мĕш урок.* Текст планĕ (11§) .................................................... 26

*19-мĕш урок.* Тӳрĕ пуплевлĕ предложенисем (12§) .................................................... 27

*20-мĕш урок.* Тӳрĕ пуплевлĕ предложенисем .................................................... 28

*21-мĕш урок.* Текст тĕсĕсем. Сăнлав. Калав. Ăслав (13§) .................................................... 29

*22-мĕш урок.* Сăнлав, калав, ăслав (13§) .................................................... 30

**ФОНЕТИКА. ОРФОЭПИ. ГРАФИКА.ОРФОГРАФИ**

*23-мĕш урок.* Алфавит. Вĕреннине аса илни (14§) .................................................... 31

*24-мĕш урок.* Уçă сасăсем, вĕсен мăшăрлăхĕ (15§) .................................................... 32

*25-мӗш урок.* Уҫӑ сасӑсем, вӗсен мӑшӑрлӑхӗ .......................... 33
*26-мӗш урок.* Уҫӑ сасӑсене палӑртакан сас паллисем (16§) ............ 34
*27-мӗш урок.* Сӑмахри уҫӑ сасӑсен килӗшӗвӗ (17§) ............ 35
*28-мӗш урок.* Сӑмахри уҫӑ сасӑсен килӗшӗвӗ ........................ 36
*29-мӗш урок.* Сӑмахри уҫӑ сасӑсен килӗшӗвӗ ........................ 37
*30-мӗш урок.* Сӑмахри уҫӑ сасӑсен килӗшӗвӗ ........................ 38
*31-мӗш урок.* Чӑваш сӑмахӗсенче икӗ уҫӑ сасӑ юнашар тӑма пултарайманни (18§) ................................................ 40
*32-мӗш урок.* Вырӑс чӗлхинчен йышӑннӑ сӑмахсем сингармонизма пӑхӑнманни (19§) ........................................ 41
*33-мӗш урок.* Суйлав диктанчӗ .................................................. 42
*34-мӗш урок.* Калаҫу чӗлхи. Илемлӗ чӗлхе. Официаллӑ чӗлхе (20§) .............................................................................. 43
*35-мӗш урок.* Текст стилӗсене уйӑрма вӗрентесси. Хайлав ҫырасси .......................................................................................... 45
*36-мӗш урок.* Хупӑ сасӑсем (21§) .............................................. 46
*37-мӗш урок.* Ялан янӑравлӑ хупӑ сасӑсем (22§) ...................... 47
*38-мӗш урок.* Ялан янӑравлӑ хупӑ сасӑсем .............................. 48
*39-мӗш урок.* Шавлӑ хупӑ сасӑсем (23§) .................................. 49
*40-мӗш урок.* Шавлӑ хупӑ сасӑсем ............................................ 50
*41-мӗш урок.* «Хӗллехи вӑрман» калав (сочинени) .................. 51
*42-мӗш урок.* Хупӑ сасӑсен хытӑлӑхӗпе ҫемҫелӗхӗ (24§) ........ 52
*43-мӗш урок.* Хупӑ сасӑсен хытӑлӑхӗпе ҫемҫелӗхӗ ................ 54
*44-мӗш урок.* Хупӑ сасӑсен ҫемҫелӗхне ҫырура палӑртасси (25§) ......... 55
*45-мӗш урок.* Хупӑ сасӑсен ҫемҫелӗхне ҫырура палӑртасси ...... 56
*46-мӗш урок.* Тӗрӗслев диктанчӗ ................................................ 57
*47-мӗш урок.* Тӗрӗслев диктанчӗн тишкерӗвӗ .......................... 58
*48-мӗш урок.* Хупӑ сасӑсем вӑрӑммӑн илтӗнни, ҫырура палӑртасси (26§) .................................................................... 60
*49-мӗш урок.* Хупӑ сасӑсем вӑрӑммӑн илтӗнни, ӑна ҫырура палӑртасси ............................................................................ 61
*50-мӗш урок.* Хупӑ сасӑсем вӑрӑммӑн илтӗнни, ӑна ҫырура палӑртасси ............................................................................ 62
*51-мӗш урок.* Вырӑс чӗлхинчен ҫырупа йышӑннӑ сӑмахсенчи хупӑ сасӑсен хытӑлӑхӗпе ҫемҫелӗхӗ (27§) .................... —
*52-мӗш урок.* Вырӑс чӗлхинчен ҫырупа йышӑннӑ сӑмахсенче *б, г, д, ж, з* сас паллисене ҫырасси (28§) .................... 64
*53-мӗш урок.* «Кӑсӑя» изложени .................................................. 65
*54-мӗш урок.* Вырӑс чӗлхинчен ҫырупа йышӑннӑ сӑмахсенче *ф, ц, щ, ъ* сас паллисене ҫырасси (29§) ................................ 66
*55-мӗш урок.* «Пирӗн стена хаҫачӗ» калав ................................ 67
*56-мӗш урок.* Ударени (30§) ........................................................ 68

*57-мěш урок.* Вырăс чěлхинчен çырупа йышăннă сăмахсенчи ударени (31§) ........................................... 68
*58-мěш урок.* Вěреннине аса илни. Суйлав диктанчě. .......... 70
*59-мěш урок.* Сăмахри усă сасăсемпе хупă сасăсем тухса ӳкме пултарни (32§) ........................................... —
*60-мěш урок.* Сăмахри усă сасăсемпе хупă сасăсем тухса ӳкме пултарни ........................................... 71
*61-мěш урок.* Сасăсен ылмашăвě (33§). Фонетика тишкерěвě ........................................... 72
*62-мěш урок.* Фонетика тишкерěвě ........................................... 74
*63-мěш урок.* «Фонетика, графика, орфографи, орфоэпи» темăсене вěреннине аса илни ........................................... 74
*64-мěш урок.* Тěрěслев ěçě (диктант) ........................................... 76

**ЛЕКСИКА**

*65-мěш урок.* Сăмахăн лексика пěлтерěшě (36§) ........................................... 77
*66-мěш урок.* Сăмах пěлтерěшě (36§) ........................................... 80
*67-мěш урок.* Пěр пěлтерěшлě тата нумай пěлтерěшлě сăмахсем (37§) ........................................... 83
*68-мěш урок.* Пуплев этикечě ........................................... 84
*69-мěш урок.* Сăмахсен тӳрě тата куçăмлă пěлтерěшěсем (38§) ........................................... 87
*70-мěш урок.* Сăмахсен тӳрě тата куçăмлă пěлтерěшěсем (38§) ........................................... 89
*71-мěш урок.* Омонимсем (39§) ........................................... 90
*72-мěш урок.* Омонимсем ........................................... 92
*73-мěш урок.* Синонимсем (40§) ........................................... 94
*74-мěш урок.* Синонимсем ........................................... 96
*75-мěш урок.* Антонимсем (41§) ........................................... 98
*76-мěш урок.* Антонимсем ........................................... 99
*77-мěш урок.* Словарьсемпе усă курасси (42§) ........................................... 101
*78-мěш урок.* Словарьсемпе усă курасси (42§) ........................................... 102
*79-мěш урок.* Ятарлă сăмахсем (профессионализмсем) (43§) 103
*80-мěш урок.* Йышăннă сăмахсем (44§) ........................................... 105
*81-мěш урок.* Йышăннă сăмахсем (44§) ........................................... 108
*82-мěш урок.* Кивелнě сăмахсем (45§) ........................................... 110
*83-мěш урок.* Кивелнě сăмахсем (45§) ........................................... 111
*84-мěш урок.* Диалект сăмахěсем (46§) ........................................... 113
*85-мěш урок.* Литература нормине пăхăнман сăмахсем (47§) ........................................... 116
*86-мěш урок.* Литература нормине пăхăнман сăмахсем (47§) ........................................... 117
*87-мěш урок.* Сăпайлăх этеме илем кӳрет ........................................... 118
*88-мěш урок.* Лексика тишкерěвě ........................................... 122
*89-мěш урок.* Лексикăна вěреннине аса илсе пěтěмлетни .. 123

**СĂМАХ ТЫТĂМĚПЕ СĂМАХ ПУЛĂВĚ. ОРФОГРАФИ**

*90-мěш урок.* Сăмах тымарě тата аффикссем (48 §) ........... 124
*91-мěш урок.* Калав çырасси ........................................ 125
*92-мěш урок.* Сăмаха улăштаракан тата сăмах тăвакан аффикссем (49§) ........................................................ 126
*93-мěш урок.* Сăмаха улăштаракан тата сăмах тăвакан аффикссем (49§). Пěрремěшле тата иккěмěшле сăмахсене уйăрма вěрентесси ........................................................ 128
*94-мěш урок.* «Çуркунне çитрě» сочинени ............................ 129
*95-мěш урок.* Аффикссем хушăнса пулнă сăмахсене тěрěс çырасси (50§) ........................................................ 130
*96-мěш урок.* Ăнлантару диктанчě ........................................ 131
*97-мěш урок.* Хутлă сăмахсем, вěсен тěсěсем (51§) ............ 132
*98-мěш урок.* Хутлă сăмахсене тěрěс çырасси. Диктант ...... 133
*99-мěш урок.* Мăшăр сăмахсем (52§) ................................. 134
*100-мěш урок.* Мăшăр сăмахсем (52§) ................................ 135
*101-мěш урок.* Икě хут калакан сăмахсем, вěсене тěрěс çырасси (53§). Диктант ................................................ 136
*102-мěш урок.* Пěтěмлетӳ урокě. 48—53 параграфсенче вěреннине аса илсе пěтěмлетесси. Асăрхаттару диктанчě ....... 137
*103-мěш урок.* Тěрěслев диктанчě ...................................... 138
*104-мěш урок.* Йăнăшсемпе ěçлени ...................................... —
*105-108-мěш уроксем.* 5-мěш класра вěреннине аса илесси ........................................................................ —

Усă курма сěннě литература ................................................ 139

*Учебное издание*

Леонид Павлович Сергеев
Евдокия Александровна Андреева
Галина Федоровна Брусова

**УРОКИ ЧУВАШСКОГО ЯЗЫКА**
**В 5 КЛАССЕ ЧУВАШСКОЙ ШКОЛЫ**

*Методические рекомендации*
*На чувашском языке*

Редактор Н.Ф. Артемьева
Корректор А.Г.Владимирова
Верстка Л.К.Михайловой

Издательский центр Чувашского республиканского института образования.
428001, Чувашская Республика, г.Чебоксары, пр. Максима Горького, 5.

Подписано в печать 01.04.2010. Формат 60x84 $^1/_{16}$.
Бумага офсетная. Печать офсетная. Гарнитура Times.
Физ. печ. л. 9. Тираж 1100 экз. Заказ № 117.

Отпечатано в типографии ИП Сорокина А.В. «Новое Время».
428034, г. Чебоксары, ул. Мичмана Павлова, 50/1.
Тел.: (8352) 41-27-98, 46-43-46. E-mail: newtime1@mail.ru.

60.00